**МИНИСТЕРСТВО ПРОСВЕЩЕНИЯ РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ**

**Министерство образования и науки Республики Татарстан**

**Исполнительный комитет Черемшанского муниципального района**

**МБОУ "Аккиреевская СОШ"**

| РАССМОТРЕНО | СОГЛАСОВАНО | УТВЕРЖДЕНО |
|---|---|---|
| Руководитель ШМО учителей начальных классов | Заместитель директора по УВР | Директор МБОУ "Аккиреевская средняя общеобразовательная школа" |
| Мензелина А.Г | Маланчева О.Н | Калмыкова Л.А |
| Протокол №1<br>от «26» августа 2023г | от «28»августа 2023 | Приказ №112<br>от «29» августа 2023 г. |

**РАБОЧАЯ ПРОГРАММА**

**учебного предмета «Родной язык и литературное чтение (чувашский)»**

для обучающихся 1-4 классов

Аккиреево 2023

## УМЕНЁНЛАНТАРНИ

Çамрăк ăрăва ăс-тăн парса ÿстерес ĕçре пуçламăш шкул пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк.

Вĕрентÿ ăс-тăн пару никĕсĕ, унăн тĕп инструменчĕ - тăван чĕлхе. Тин çеç кĕнеке тытнă ачана ăнăçлă вĕрентсе ăс-тăн парасси чи малтан вăл хăйĕн тăван чĕлхипе тухăçлă усă курма пултарнинчен килет. Тăван чĕлхе - ÿсекен этеме çут тĕнчене кĕмелли алăкăн ылтăн çăраççийĕпе пĕрех.

Çак асамлă çăраççипе ача вĕренÿре туллин усă курма пултартăр тесен унăн пуплевĕпе шухăшлавне пур енлĕн аталантармалла. Кĕске тапхăртах ăна çăмăллăн вулама, тăнласа ăнкарма, шухăша пуплевре уçăмлăн палăртма, çырма хăнăхтармалла: вĕренÿ кĕнекине вăл хăй тĕллĕн вулайтăр, вĕрентÿçĕ каласа панине лайăх ăнланма, асăмлама, асăнлама пултарайтăр, çавăн пекех унăн калаçу хăнăхăвĕпе çыру мехелĕ çителĕклĕ пулччăр. Çакна тума шăпах ĕнтĕ тăван чĕлхене I-IV классенче ятарлă программăпа туллин вĕрентни пулăшать.

Тăван чĕлхе вĕрентесси виçĕ пайран тăрать: 1) вулама- çырма вĕрентесси; 2) пуплев ĕç-хĕлĕсене (вулав, çыру, калу, итлев) вĕрентесси; 3) пуплеве пур енлĕн аталантарнă май чĕлхе пулăмĕсемпе ансат паллаштарасси, пуплеве тишкерме вĕрентесси. Çак виçĕ пая пуплеве аталантарас тĕллев пĕрлештерсе тăрать. Çап- ла вара, тăван сăмахлăха вĕрентни кирлĕрен те кирлĕ ăслайсемпе хăнăхусене аталантарса çирĕплетессипе тÿррĕнех çыхăнмалла. Çав ăслайсемпе хăнăхусем шутĕнче - ăнланса вуласси тата тăнласси, çыхăнуллă калаçасси, çырасси. Çавăнпа пĕрлех ачасене чĕлхе ăслăлăхĕпе литература пĕлĕвĕн ансат ăнлавĕсемпе, литературăпа сăмахлăх ÿнерĕ пек паллаштарнă май вĕсен харпăр хăйĕн тата юлташĕсен пуплевне сăнас, чĕлхе илемне туйса ăна тарăнрах пĕлес туртăмне амалантармалла. Пĕтĕм халăх усă куракан литература чĕлхин сасă тытăмĕпе, сăмах пуянлăхĕпе, морфологи тата синтаксис мелĕсемпе паллаштарнă хушăрах вĕсене вырăнти калаçу уйрăмлăхĕсене курма та вĕрентмелле.

Ача пуплевĕнчи тĕп ĕç-хĕлсене (тăнлассине, калаçассине, вулас- сине, çырассине) аталантарса пынипе пĕрлех тăван чĕлхе вĕрентнĕ чух пуçламăш шкулта çакăн пек пысăк та пархатарлă тĕллевсене пурнăçламалла:

- вĕренекенсен çынлăх туйăмĕсене вăйлатмалла, пурнăçа юратма, ырра шанса тăма тата хăйсене те ырă кăмăллă, сăпайлă пулма хăнăхтармалла;
- ачасем таврари пурнăç, этемпе çут çанталăк çинчен мĕн пĕлнине анлăлатмалла;
- ачасен çыхăнуллă тата сăнарлă шухăшлавĕпе асне, асăмлас хевтине аталантармалла;
- вĕренÿ ĕç-хĕлне лайăхрах хăнăхтарса, унăн ăслайĕсене «алла илме» май памалла; вĕренÿ вăхăчĕпе перекетлĕ усă курма, харпăр хăй тĕллĕн ĕçлессин ансатрах мелĕсене чухлама вĕрентмелле;
- тăрăшуллă та тимлĕ вĕренме, кĕнекепе кăсăкланма хăнăхтармалла.

Программăри вĕренÿ материалĕпе вĕрентÿ меслечĕсем ачасене çирĕп пĕлÿпе ăслайсем, кирлĕ хăнăхусем паччăр тесен дидактикăн тĕп принципĕсене асра тытса вĕренÿ ăнланулăхĕпе кăсăклăхне, çыхăнулăхĕпе тĕллевлĕхне ялан пурнăçласа пымалла.

## ВУЛАС-ÇЫРАС МЕХЕЛСЕНЕ НИКĔСЛЕССИНЕ ЛИТЕРАТУРА ЧĔЛХИНЕ ВĔРЕНТЕССИПЕ ТАТА ПУПЛЕВЕ АТАЛАНТАРАССИПЕ ÇЫХĂНТАРАССИ

Тăван чĕлхе вĕрентессин пĕрремĕш тапхăрĕ I класра авăн уйăхĕнчен пуçласа ака уйăхĕн çурри таран тăсăлать. Ку тапхăрăн тĕп тĕллевĕ - тăван çырулăхпа усă курас мехелсене никĕслесси. Çак тĕллеве пурнăçласси чи малтан литература чĕлхипе усă курма (çав шутра итлесе ăнланасси, калаçасси) хăнăхтарнинчен пуçланать, ун çине таянать. Тапхăр икĕ пая уйрăлать. Пĕрремĕшĕн тĕллевĕ - ачасене сас паллисем вĕренме хатĕрлесси. Çак тĕллевпе вĕсен çыхăнуллă пуплевре предложенисене, предложенири сăмахсене, сăмахри сыпăксене тата сасăсене илтес-уйăрас пултарулăхне аталантармалла. Иккĕмĕшĕн тĕллевĕ - вулас-çырас ансат хăнăхусем парасси.

Литература чĕлхипе усă курма вĕрентес шутпа ачасене экс- курсисене илсе çÿренĕ, çут çанталăк пулăмĕсене сăнаттарнă май вĕсем таврари пурнăç çинчен мĕн пĕлнине анлăлатмалла, вĕсен сăмах йышне пуянлатмалла, тăтăшрах тĕл пулакан грамматика формисене, синтаксис конструкцийĕсене пуплевре çирĕплетмелле. Вĕренÿ материалĕпе меслечĕсем ачасен пĕтĕмĕшле аталанăвне хăвăртлатма, вĕренÿри тăрăшулăхне, юлташлăхпа туслăх, ушкăнлăх туйăмĕсене вăйлатма пулăшмалла.

Вулама-çырма вĕрентес ĕçре анализпа синтез меслечĕн хальхи вариантне тĕпе хумалла. Вăл ăслăлăхăн паянхи шайĕпе килĕшсе тăрать, ачасен ăс-тăнне, пуплевне ăнăçлă аталантарма май парать, ăнланса, тĕрĕс те палăртуллă вулама вĕрентессине чылай çăмăллатать. Вĕренекенсем малтанхи кунсенченех пуплеври предложенисене, предложенири сăмахсене, сăмахри сыпăксене, сасăсене илтме-уйăрма пуçлаççĕ. Ерипенех сасăсене сас паллисемпе палăртма, ансат сăмахсем пухма,

предложенисемпе çыхăнуллă текстсене ăнланса, тĕрĕс (малтан - сыпăкăн, унтан - тулли сăмахăн) вулама хăнăхса пыраççĕ.

Вуланипе пĕрлех вĕсен çыру хăнăхăвĕсем те йĕркеленеççĕ: сасăсене сас паллисемпе палăртма, сас паллисемпе сыпăксенчен сăмахсем пухма, ал çырăвĕнчен тата пичетленĕ текстран сăмахсемпе предложенисем çырса илме, ансат тытăмлă сăмахсемпе вĕсенчен тăракан кĕске предложенисене илтнĕ тăрăх çырма, предложение, çынсен е чĕр чунсен пайăр ячĕсене пысăк сас паллипе пуçласа çырма вĕренеççĕ.

Хутла вĕрентнĕ тапхăр тăршшĕпех ачасен сасă сисĕмне (сăмахра, сыпăкра уйрăм сасса илтес-уйăрас, сасăсем мĕнле черетленнине асăрхас пултарулăхне) аталантарма тăрăшмалла, çавăнпа пĕрлех вĕсен сасса, сыпăка уçăмлă та тĕрĕс калас хăнăхăвĕсене лайăхлатса пымалла.

Вулама-çырма вĕрентмелли уроксенче ачасен тăнлас, çын пуплевне ăнланса та туллин асăмлас ăслайĕ те аталанать. Вĕсем класс умĕнче калаçма, ыйтусене хуравлама, ыйту пама, вуланине каласа пама, хăйсен сăнавĕсем çинчен, курнă фильмсем, ӳкерчĕксем çинчен çыхăнуллă каласа кăтартма вĕренеççĕ.

Уроксенче туяннă пĕлӳсемпе, ăслайсемпе ачасем класс тулашĕнчи вулав вăхăтĕнче, ушкăнпа кĕнеке пăхнă чух усă курма хăнăхаççĕ. Ултă çулхи ачасен ӳсĕмне шута илсе, вулама-çырма вĕрентнĕ пуçламăш тапхăрта вĕсен урокри ĕç-хĕлне нумай енлĕ йĕркелеме тăрăшмалла: ӳт-пĕве вылятмалли хăнăхтарусемпе вăйăсем ирттермелле, юрлаттармалла, сăвă калаттармалла, вăйă мелĕсемпе, букварьти евĕр вулав-çыру вăййисемпе ытларах усă курмалла. Ку шута «сапаланнă» сăмахсене сас паллисемпе сыпăксенчен пухасси, сăмах сăнчăрĕсем тăвасси, хăвăрт калăшсем каласси, пуç ватмăшсем, ребуссем шутласси т.ыт.те кĕрет. Вĕсемпе вырăнлă усă курни ачасене кантарма, ăс-тăнне уçăлтарма пулăшать, пĕр ĕçрен тепĕр ĕçе харăссăн куçассине те çăмăллатать.

Ку тапхăрта ачасем вĕрентӳçĕ ертсе пынипе çут çанталăк улшăнăвĕсене, çулталăк вăхăчĕсем ылмашнăçемĕн этем пурнăçĕпе ĕçĕ епле улшăннине сăнаççĕ, çакăн çинчен çыхăнуллăн каласа пама вĕреннĕ май литература чĕлхипе вырăнти калаçăва уйăрас хăнăхусем илеççĕ.

## ЛИТЕРАТУРА ВУЛАВĔ ТАТА КЛАСС ТУЛАШĔНЧИ ВУЛАВ ÇИНЕ ТАЯНСА ПУПЛЕВЕ АТАЛАНТАРАССИ

Литература вулавĕн урокĕсем I класра пуçланаççĕ те IV класс таранччен тăсăлаççĕ. Пĕрремĕш класра пĕрремĕш çур çулта, ачасен вулав хăнăхăвĕсем йĕркеленсе çитеймен пирки, урокра усă курмалли тĕп меслет - хайлавсене итлесе йышăнасси. Вĕрентĕвĕн тĕп тĕллевĕ - ачасене литература хайлавĕсемпе кăсăклантарса ярасси, илемлĕ хайлавсене итлесе ăнланма, ăса хывма вĕрентсе пырасси. Чăн литература вулавĕ иккĕмĕш çур çулта, ачасем кăшт- кашт вулама хăнăхсан, пуçланать.

Пуплевпе шухăшлавăн тĕп ĕç-хĕлĕсенчен пĕри пулнăран вулав пуçламăш классемшĕн пысăкран та пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вăл кĕçĕн çулхи шкул ачине ăнăçлă вĕренме, ырă кăмăл-туйăмлă ӳсме, ăс-тăнне пур енлĕн аталантарма пулăшмалла. Литература вулавĕн урокĕсен тĕп тĕллевĕсем çаксем: вĕренекенсен пирвайхи вулав ăслайне, унăн тĕрĕслĕхĕпе хăвăртлăхне, ăнланулăхĕпе палăртулăхне куллен лайăхлатасси; ачасене хайлава туллин ăнланма хăнăхтарасси, вĕсен ырăпа усала уяс туйăмне, илем сисĕмне амалантарасси, тĕнче курăмне анлăлатасси; текстпа ĕçлеме вĕрентесси, кĕнекене харкам тĕллĕн вулама хавхалантарасси.

Паянхи пурнăç литература вулавĕ умне çĕнĕ задачăсем кăларса тăратрĕ: ача çитĕнсе çитнĕ тĕле мĕнпур этемлĕхĕн çырулăх пуянлăхне ăнланма, хисеплеме, унпа киленме пултартăр; тĕнче литературин пӳлминче чăваш литературин тӳпи те палăрмаллах пысăк пулнине ăнкартăр; хайлава туллин ăнланма ăна хайланă чухнехи евĕрех йыврăррине асăрхатăр; кирек хăш хайлав та пысăк шыравра çуралнине, вăл çыравçă пуçĕнче шăранса калăпланнă, шухăшласа кăларнă япала иккенне тĕшмĕрттĕр, хăй те хайлав ĕçне явăçма сĕмлентĕр; ача-пăча ăс-тăн тĕлĕшĕнчен çеç мар, кăмăл-сипетпе туйăм-сунăм тĕлĕшĕнчен те тасалса пуянлантăр.

Литература вулавĕ пуçламăш шкулăн чи пысăк икĕ тĕллевне пĕрлĕхлĕн татса пама май парать: пĕрремĕшĕнчен, вулама тата кĕнекене юратма хăнăхтарать, иккĕмĕшĕнчен, литература хайлавне ăнланма тата унпа ĕçлеме вĕрентет. Асăннă тĕллевсемпе задачăсене программăра палăртнă вулав материалне тĕпе хурса пурнăçламалла.

Вуламалли материалта чăваш литература чĕлхин виçĕ стилĕ сăнланать: илемлĕ литература стилĕ, ăслăлăх стилĕ, публицистика стилĕ. Кунсăр пуçне унта тăван халăх сăмахлăхне те самаях кĕртнĕ. Кашни класăн вулав программинчех çакăн пек пайсем палăртнă: 1) вулав карти тата пăхмасăр калама вĕренмелли хайлавсем; 2) вулав ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсем, текстпа ĕçлесси, çыхăнуллă пуплев; 3) класс тулашĕнчи вулав.

Вулав карти. Класра хăçан мĕн вуламаллине палăртнă чух хайлавсен шухăш-туйăм пуянлăхне,

темине, илем пахалăхне тата май килнĕ таран çулталăк вăхăчĕпе хронологи паллисене шута илмелле. Çакăн пек туни вулава пурнăçпа çыхăнтарма, унăн паллăрах енĕсене çителĕклĕ таран çутатма май парать, вĕренекенсене илемлĕ литература, публицистика тата ăслăлăх хайлавĕсене хăйсем тĕллĕн вуласа ăнланма, çапла вара вăтам шкулта литературăпа историне, ытти ăслăлăх никĕсĕсене системăллă ăса хывма хатĕрлет.

Шкул ачине кĕнекепе туслашма, унпа кăсăкланма пулăшас, пуплевне пуянлатас, илем туйăмне аталантарас, ырăпа усала уяма вĕрентес тĕллĕшпе литература вулавĕ тата класс тулашĕнчи вулав валли палăртнă илемлĕ литература темисем («Халăх пултарулăхĕ», «Паллă чăваш писателĕсем», «Тăван çут çанталăк ӳкерчĕкĕсем» т.ыт.те) уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вулав материалне суйланă чух ачасен ӳсĕмне шута илни, вулав кĕнекине вĕсен шухăш-кăмăлне пĕлсе йĕркелени, хайлавсем пĕлӳлĕх тĕллĕшĕнчен пуян пулни çак ĕçре ăнăçу кӳмелле.

Ачасем хăйсем чăваш пулнăран ан вăтанччăр, ыттисем хуш- шинче хăйсене катăк ан туйччăр тесен вĕсене Çĕр чăмăрĕ çинче нумай тĕрлĕ халăх пурăнни, чăваш халăхĕ чылай йышлă халăхсен- чен пĕри пулни çинчен вуласа пĕлме май памалла. Тăван чĕлхене те вĕсем хисеплеччĕр, юратчăр, унпа уçăмлă та таса калаçма хăнăхчăр.

Халăхăмăр тĕпленсе пурăнакан вырăнсемпе, унăн ĕçĕ-хĕлĕпе анлăн паллаштарма вулав кĕнекисене илемлĕ литература хайлавĕсемсĕр пуçне ăста çырнă очерксемпе статьясен сыпăкĕсем кĕртни вырăнлă. Вĕренекенсем чăваш халăхĕ Чăваш Республики тулашĕнче те йышлăн пурăннине пĕлччĕр.

Вулав кĕнекисенче Чăваш Республикин символĕсем - унăн Ялавĕ, Гербĕ, Гимнĕ пулмалла. Чăваш Республикин тĕп хули Шупашкар пулнине, хула сăн-сăпатне кĕçĕн çулхи шкул ачи хăй кайса куриччен чылай маларах вуласа пĕлме пултартăр. Çавăнпа пĕрлех вăл Чăваш Республики Раççей Федерацине кĕнине, Раççейĕн патшалăх Ялавне, Гимнне, Гербне, унăн тĕп хулине Мускава сăнлакан текстсене те тупса вулайтăр.

Çырулăх, кĕнеке этемлĕхшĕн çав тери пысăк пĕлтерĕшлине, вăл чăннипех пĕлӳ çăл куçĕ пулнине шкул ачи туйса илтĕр тесен вулав кĕнекисене тĕрлĕ халăхăн çырулăхĕ пуçланса кайни çинчен калакан хайлавсем, çырулăха пуçарса янă çынсем çинчен юлнă аса илӳсемпе халапсем кĕртмелле. III-IV классенче ачасем авалхи кĕнекесенчен (çав шутра Библирен, Коранран) илнĕ сыпăксемпе паллашма пултарччăр. Вĕсем хамăр халăх çырулăхĕн йывăр шăпи, çĕнĕ çырулăха пуçарса яраканĕ И.Я. Яковлев, унăн пулăшаканĕсем çинчен те вуласа пĕлме тивĕçлĕ.

Тӳрĕ чунлă, ырă кăмăллă, вашават чĕлхеллĕ, чăлаха, чирлĕ çынна хĕрхенекен, ватта-вĕтте хисеплекен, ултава, чурăслăхпа хаярлăха, чунсăрлăха сивлекен çын пулса ӳсме вулав кĕнекисене кĕртнĕ юмахсемпе халапсем, шӳтсем, тĕрлĕ халăх çыравçисен хайлавĕсем пулăшĕç. Вĕренекенсен ăсĕ-тăнĕнче ĕç пурнăç тыткăчи пулни, наянлăхран намăсланасси яланлăха çирĕпленсе юлтăр.

Тĕнче уçлăхĕ вĕçĕ-хĕррисĕр, анчах этемлĕхĕн сăпки те, килĕ те - Çĕр чăмăрĕ кăна. Çут çанталăка юратма, ӳсен-тăрана, чĕр чунсене хĕрхенме-шеллеме, шăнкăртатса юхакан çăл куça, тăрă кӳлле, ешĕл вăрмана, улăха, уй-хире вараламасăр, суранламасăр упрама, вĕсемпе типтерлĕ усă курма вĕрентекен текстсем кĕçĕн çулхи шкул ачин вулав кĕнекисене ытлăн-çитлĕн кĕмелле. Кашни класăн вулав материалĕ вĕренекенсен ăс-тăнне, ырăпа усала уяс пултарулăхне, илем туйăмне, пуплевне, ĕçченлĕх сулăмне аталантарма пулăшмалла. Çакна пурнăçлама вуламалли хайлавсемпе кĕнекесен паха шухăшĕсем, чĕлхи, тытăмĕ майĕпен кăткăсланса пыни кирлĕ.

I класс пĕтернĕ тĕле ачасем чăвашсен паллă çыравçисен хайлавĕсене итлеççĕ-вулаççĕ, Чăваш ен çут çанталăкĕ çинчен калакан хайлавсемпе, ансат сюжетлă юмахсемпе паллашаççĕ. Ачасен вулавçă культури калăпланма пуçлать. Вĕсем илемлĕ текста чухлама, автор сăмахĕллĕ ӳкерчĕксем туса туйăма палăртма, хăй шухăшне вулавçă патне çитерме пултарнине ăнкарма пуçлаççĕ. Илемлĕ хайлавсемпе паллашнă майăн ачасем çак терминсен пĕлтерĕшĕсене тĕшмĕртме тытăнаççĕ: автор, илемлĕ текст, сăвă, калав, юмах, рифма, ритм, чăваш халăх сăмахлăхĕ. Кашни урокра хăйне евĕрлĕ кăмăл-сипет никĕсĕсем сăмсаланччăр: ыр кăмăллăх, тивĕçлĕх, хастарлăх, хăюлăх, яваплăх, пĕр-пĕрне пулăшасси, çывăх çынсемшĕн тăрăшасси.

IIкласра вĕренекенсем çулталăк вăхăчĕсене, пĕтĕм халăх уявĕсене сăнлакан, тăван тавралăх илемĕ тата ăна упрасси çинчен калакан хайлавсене вулаççĕ. Илемлĕ литература, ăслăлăхпа публицистика тексчĕсемсĕр пуçне II класра ачасене чăваш халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсемпе, ытти халăх çыравçисен пултарулăхĕпе те паллаштармалла. Ку класра ачасене пуçламăш хут Чăваш Рес- публикин Гимнне итлеттермелле, унăн текстне вулаттармалла.

Хайлавсем тематикăпа проблематика тĕллĕшĕнчен ачасене çывăх пулмалла: ачалăх, тăван çемьепе тăван-пĕтен пурнăçĕ, шкулта, çут çанталăк. Ку класра литература теорийĕ çинчен мĕн пĕлни

тарӑнланать. Ачасем проза, калав, хайлав темипе тӗп шухӑшӗ ҫинчен терминсене асӑнмасӑрах пӗррремӗшле ӑнкарусем туянаҫҫӗ, ҫак терминсен пӗлтерӗшӗсене чухлама пуҫлаҫҫӗ: поэзи, проза, калав, портрет, юмор, монолог, диалог, танлаштару. Текстпа ӗҫлемелли тӗп ыйтусем: «Мӗн ҫинчен вуларӑмӑр?», «Ҫакна мӗнле ҫутатнӑ?».

II класра пуҫласа ӑслав ҫыру ӗҫӗсем ҫыртарма палӑртнӑ. Малтанхи ӑслав ӗҫӗсем: тӗслӗхе евӗрлени, автор сюжетне тӑсни, сюжетлӑ ӳкерчӗке сӳтсе явни т.ыт.те. Каярах чӑн харкам ӑславсем хайлама пикенмелле. Ҫав шутра: сӑнани тата вуласа тухни тӑрӑх, ҫут ҫанталӑк тӗрленчӗкӗсем, ваттисен сӑмахӗсем тӑрӑх, юратнӑ чӗр чунсем ҫинчен т.ыт.те.

III класра вуламалли хайлавсем чӗлхипе те, шухӑшӗпе те кӑткӑсрах, вӗсен калӑпӑшӗ те пысӑкрах. Ачасем илемлӗ литературӑн тӗрлӗ жанрӗпе (калав, юмах, юптару, сӑвӑ, ваттисен сӑмахӗ, туптармӑш, тупмалли юмах т.ыт.те) паллашаҫҫӗ. Вулав урокӗсенче вӗсем Чӑваш Республики, Раҫҫей Федерацийӗ, вӗсен патшалӑх символӗсем ҫинчен мӗн пӗлнине тарӑнлатмалла. Ҫулталӑк вӑхӑчӗсем мӗнлерех черетленнине сӑнани ҫине таянса илемлӗ литература, ӑслӑлӑх тата публицистика хайлавӗсем пулӑшнипе вӗренекенсен пӗлӗвӗсене анлӑлатмалла, ҫавӑнпа пӗрлех вӗсен тӑван тавралӑха юратас, ӑна упрама тӑрӑшас туртӑмне вӑйлатмалла. Ачасем ҫут ҫанталӑкри улшӑнусене кура этем ӗҫӗ-хӗлӗ мӗнле улшӑнса пынине асӑрхаччӑр, хӑйсем те пултарнӑ таран аслисене пулӑшма тӑрӑшчӑр. Тус-тӑванлӑхпа ыр кӑмӑллӑх этеме темӗнле йывӑрлӑха та ҫӗнтерме май пани, курайманлӑхпа хӗрхенӳсӗрлӗх ҫынна ҫын ретӗнчен кӑларса тискерлетни ҫинчен калакан хайлавсем те ку класра тивӗҫлӗ вырӑн йышӑнмалла.

Ҫавӑн пекех, 3 класра тӗрлӗ халӑх ҫыравҫисен хайлавӗсемпе малалла паллаштармалла. Тӗрлӗ саманара тӗрлӗ халӑхӑн тӗрлӗ ҫыравҫисем пӗр темӑпа; пӗр авторах тӗрлӗ темӑпа ҫырнӑ хайлавсене танлаштарса, вӗсенче уҫса панӑ илемлӗхпе кӑмӑл-сипет ыйтӑвӗсене сӑнаса ачасем литература тӗлӗшӗнчен те, пӗтӗмӗшле те аталанаҫҫӗ. Ку ӳсӗмри ачасем кӑмӑл-сипет ыйтӑвӗсем ҫинчен тарӑнраххӑн шухӑшлама пуҫлаҫҫӗ. Ҫак ӑнлавсемпе вӗсен сӑлтавӗсене палӑртасси литература вулавӗ урокӗсенче ӗҫлемелли тӗп ыйтусем: ҫемье тата общество, ҫемье тата халӑх, ҫемье халӑхӑн пӗр пайӗ тата йӑха малалла тӑсмалли йыш; кил-йыш тата наци традицийӗсем; чӑваш халӑхӗн ывӑлӗ-хӗрӗ Раҫҫей культуришӗн тунӑ тава тивӗҫлӗ ӗҫсем; кулленхи пурнӑҫри куҫа тӑрӑнман илем; сапӑрлӑх тата чӑрӑслӑх; хастарлӑх тата хӑравҫӑлӑх; паттӑрлӑх тата сутӑнчӑклӑх, вӗсен сӑлтавӗсемпе никӗсӗсем.

Ачасем литература жанрӗсем ҫинчен пӗлни анлӑланать; вӗсем юмах, юптару, калав, былина, миф, пьеса, эпитет, пейзаж, сюжет терминсен пӗлтерӗшӗсене ӑнкарма вӗренеҫҫӗ. Халӑх юмахӗсене, автор хайлавӗсене тишкернӗ майӑн ачасем тӑван халӑх кӑмӑлсунӑмӗнчи чи курӑмлӑ енсене: унӑн ӗҫченлӗхне, тараватлӑхне, сапӑрлӑхне асӑрхаҫҫӗ.

Литература темисемпе ӑслав ӗҫӗсем ҫырас хӑнӑхусем тарӑнланмалла, ҫивӗчленмелле. III класри ӑслав ҫыру ӗҫӗсен тӗсӗсем: ӳкерчӗк тӑрӑх сочинени, вуласа тухнӑ кӗнекене хакласа ҫырни, вуланӑ хайлав евӗрлӗ юмах ӑслани т.ыт.те.

IV класри вулав материалӗн ытларахӑшӗ - илемлӗ литература хайлавӗсем. Вӗсемсӗр пуҫне ку класра вулама ӑслӑлӑх тата публицистика стилӗсен хайлавӗсене те сӗнмелле. Этемлӗх авалхӑхӗ ҫинчен калакан статьясем, пысӑкрах ӗҫсен ачасем ӑнланмалли сыпӑкӗсем, авалхи мифсемпе легендӑсем вулав материалне кӑсӑклӑрах тума пулӑшӗҫ, вӗренекенсен тавра курӑмне аталантарнипе пӗрлех вӗсене малалла ӑнӑҫлӑ вӗренмелли никӗс хывӗҫ.

Ку ӳсӗмри ачасем тӗрлӗ типлӑ текстсене тарӑнрах ӑнланма пуҫлаҫҫӗ: проза, поэзи, драма. Ҫакӑ аслӑрах классенче литературӑна эпос, лирика, драма ушкӑнӗсене уйӑрса вӗренессин пуҫламӑшӗ пулса тӑрать. Халӗ ӗнтӗ композиципе илемлӗ шалӑш тӗлӗшӗнчен анлӑрах, кӑткӑсрах хайлавсене тишкермелле. Ҫыравҫӑсен пултарулӑхӗ, илемлӗх хӑйне евӗрлӗхӗ, геройсем, проблемӑсем ҫинчен шӑл ҫемми пӗтӗмлетӳсем тутармалла. Ку класра ҫак терминсен пӗлтерӗшӗсене ӑса хывмалла: повесть, идея (тӗп шухӑш), фантастика, сӑпатлантару (олицетворени).

Литература вулавӗн урокӗсенче ку класра Чӑваш Республикин, Раҫҫей Федерацийӗн ҫут ҫанталӑкӗ, чӗр чун тӗнчи, унта пурӑнакан халӑхсем ҫинчен калакан хайлавсемпе паллашаҫҫӗ, ҫакӑ вӗренекенсене аслӑрах классенче географи вӗренме пулӑшӗ. Тӑван халӑхӑмӑр тата ытти халӑхсен авалхӑхӗ ҫинчен калакан статьясем ачасене истори вӗренме никӗс хываҫҫӗ. Паллӑ чӑваш писателӗсен хайлавӗсемпе, ытти халӑх ҫыравҫисен сӑввисемпе, калавӗсемпе паллашни вӗсене литературӑна туллинрех вӗренме хатӗрлӗ.

Пурнӑҫа юратма, этеме хисеплеме, ҫут ҫанталӑка, таврари илеме упрама, ырӑпа усала уяма вӗрентекен хайлавсем IV класра та тӗп вырӑн йышӑнмалла. Ачасем пуҫ тавра явса шухӑшламалли кӑмӑлсипет проблемисем халӗ ӗнтӗ тарӑнрах та кӑткӑсрах: патриотлӑх, ҫынлӑх, тивӗҫлӗхпе яваплӑх, ҫирӗп кӑмӑллӑх тата ҫемҫешкелӗх, путсӗрлӗхпе икӗпитлӗх. Уроксенче ҫынсем хушшинчи кӑткӑс

хутшăнусене тĕпчемелле, инкек-синкекрен сыхланмалли çул- йĕрсене шырамалла.

Вулав ăслайĕпе хăнăхăвĕсене лайăхлатса пырасси, вуланă хайлавăн шухăш-туйăм пуянлăхне ăнланасси, чĕлхен илемлĕх мелĕсене асăрхасси кашни вулав урокĕнчех малти вырăнта пулмалла. Вулав урокĕн ытларах пайĕ (30-35 минут) вулав хăнăхтарăвĕсем ирттерме, текстпа ĕçлеме каймалла. Вулав умĕнхи калаçу вуламалли текст вăратакан шухăш-туйăмпа тачă çыхăнтăр, ачасен текста вулас хастарлăхне ÿстерме, кăмăл-туйăмне çивĕчлетме пулăштăр, çапла вара вуламалли хайлава туллин ăнланма хатĕрлетĕр.

Вулав урокĕсенче çыру хăнăхтарăвĕсем те тăтăшах йĕркелемелле. Вĕсене ăслав (творчество) ĕçĕсене вĕрентессипе çыхăнтармалла. Чĕлхе урокĕсенче çеç çыртарни çителĕксĕр. Вулав урокĕсенче çакна асра тытни ăслав ĕçĕсем çырма вĕрентессине чылай çăмăллатать.

Ачасен урокри ĕç-хĕлне хавхалантарас, вулас кăмăлне вăйлатас тесе тĕрлĕ мелпе усă курмалла: вуланă хайлавсем, пурнăç сăнавĕсем çине таянса тĕрлĕрен вăйăллă хăнăхтару, ăслав ĕçĕсем ирттермелле (инсценировка туни, рольпе вулани, пĕр-пĕр сăнар ячĕпе каласа пани, унăн шăпи малашне мĕнлерех пулнине тавçăрма тăрăшни, çыхăнуллă калав туни т.ыт.те).

Вĕренекенсене ăс-тăн парас, сапăр ÿстерес тĕллеве ăнăçлă пурнăçлама литература вулавĕн урокĕсенче хайлавсемпе çеç ĕçлени çителĕксĕр: çак ĕçе çĕр-шыв пурнăçĕпе, харпăр ашшĕ-амăшĕн хуйхи-суйхипе, савăнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе, ачасен кулленхи ĕçĕсемпе, шухăш-ĕмĕчĕпе çыхăнтармалла.

Вулама вĕрентес, ачасен вулав ăслайне лайăхлатас ĕçре вĕсен пурнăç сăнавĕсемпе усă курмалла. Вĕренекенсен тавра курăмне пуянлатас тĕллевпе вĕсене йăла е промышленность предприятине, çывăхри колхоза е фермер хуçалăхне экскурсие илсе каймалла, çут çанталăка, çынсен пурнăçне, çитĕннисен ĕçне сăнаттармалла.

Вĕренÿре ачасен ĕç-хĕлне, хутшăнăвĕсене те тĕрлĕрен йĕркелеме тăрăшмалла. Класпа, ушкăнпа, мăшăрпа, пĕчĕк ушкăнсенче пурнăçламалли ĕçсем сĕнмелле. Çакă ачасен хутшăну действийĕсене ăнăçлăрах йĕркелеме пулăшать.

Литература вулавĕн урокĕсем тăван чĕлхе программинче палăртнă ытти уроксемпе, унсăр пуçне пуçламăш шкулти ытти предметсене вĕренессипе тачă çыхăнмалла: ку предметсем ачасен илем туйăмне, вĕсен ырă кăмăлне амалантарма, ăс-тăнне пур енлĕн аталантарма пулăшаççĕ. Çавăнпа пĕрлех вулав, ÿкерÿ тата музыка урокĕсем хушшинчи çыхăну ачасен илемлĕх хайлавĕсене ăнланас, хаклас пултарулăхне лайăхлатать, вĕсене тĕрлĕ енлĕн аталанма май парать.

Класс тулашĕнчи вулав пуçламăш класра ачана тăван çырулăх чĕлхипе усă курма хăнăхтарас, унăн пĕлĕвĕсене анлăлатас, ăс- тăнĕпе чун хавалне аталантарас ĕçре питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Унăн тĕп тĕллевĕ - вĕренекенсене ача-пăча юратса вулакан хайлавсемпе анлăн паллаштарасси, кĕнекесене юратма, харпăр хăй тĕллĕн вулама хăнăхтарасси.

Ача-пăча кĕнекипе ĕçлесси I-IV классенче ытларах класс тулашĕнчи вулав урокĕсенче пулса пымалла. Программăра ку ĕçе йĕркелессин икĕ енне шута илнĕ: 1) мĕн вуламаллине, ачасене мĕнле йĕркепе тата мĕнле кĕнекесемпе паллаштармаллине кăтартса панă; 2) çак кĕнекесене вуласа ачасем мĕнле пĕлÿсем, ăслайсемпе хăнăхусем туянмаллине палăртнă.

Класпа, юлташĕсемпе пĕрле е харпăр хăй тĕллĕн вуланăçемĕн ачасем кĕнекесемпе, вĕсен авторĕсемпе паллашаççĕ. Класс тулашĕнчи вулав урокĕсене класри вулавпа килĕшÿллĕн йĕрке- лесен аван. Малтан ачасене паллăрах писательсен пĕрешкел темăпа çырнă темиçе (2-4) кĕнекипе паллаштармалла, унтан сĕннĕ темăпа хăйсем тĕллĕнех тĕрлĕ авторăн ăнланма çăмăл кĕнекисене суйлама хăнăхтармалла.

I класра вĕренекенсен класс тулашĕнчи вулавне йĕркеленĕ чух уйрăмах вĕсен вулав хăнăхăвĕсемпе тавра курăмĕ мĕнле аталан- нине шута илмелле, çав вăхăтрах вулав тематикине анлăлатма тăрăшмалла, чи пĕчĕккисем валли тухнă кĕнекесене паллама вĕрентмелле.

II класра ачасем вĕрентÿçĕ ертсе пынипе е вăл сăнаса тăнипе тĕрлĕ темăллă «шăл çемми» кĕнекесене вулаççĕ, ача-пăча журна- лĕсемпе паллашаççĕ.

III класра вĕренекенсен ача-пăча писателĕсен паллă хайла- вĕсемпе паллашмалла, юмахĕ-халапĕсене вуламалла. Класс тулашĕнче вулама сĕннĕ авторсен йышĕ 15—17-е çитмелле. Вĕсен шутĕнче чăваш çыравçисем çеç мар, ытти халăхсен паллă писателĕсем те пулмалла. Кунсăр пуçне класс тулашĕнчи вулав урокĕсенче вĕренекенсене малтанхи классенчи пекех ача-пăча хаçат-журналĕпе паллаштармалла, вĕсен материалĕсене суйласа вулаттармалла.

IV класра вĕренекенсем те ытларах илемлĕ литература тата ăслăлăх стилĕпе ăнланмалла çырнă кĕнекесене вулаççĕ. Вĕсенче этем пурнăçĕн илемĕ, унăн чун хавалĕ сăнланмалла. Тем те пĕр курса çÿренисем çинчен калакан кĕнекесемпе паллашасси ку ÿсĕмри вĕренекенсен класс тулашĕнчи вулавĕнче паллă вырăн йышăнмалла. Вĕсемсĕр пуçне хальхи тата авалхи пурнăçа сăнлакан

повеçсемпе калавсем, паллă çынсен кун кĕнекисемпе çырăвĕсем, ачасем валли ятарласа çырнă биографийĕсем пулмалла. Урокра тĕрлĕрен пулăшу кĕнекипе - словарьсемпе, пĕл- кĕчсемпе (справочниксемпе), хаçат-журналпа тăтăшах усă курма хăнăхтармалла.

Вĕренекенсене ача-пăча кĕнекисемпе, хаçат-журналпа куллен тăрмашма хăнăхтарас тесен класри тата шкулти библиотекăн ĕçне тивĕçлĕ йĕркелемелле.

I класра вулав кĕтесĕнче ачасемпе вуламалли кĕнекесен куравне (выставкине) кашни эрнерех çĕнетсе тăмалла.

II класра вуламалли кĕнекесене темăн-темăн ушкăнламалла («Тăван тавралăх», «Чĕр чунсем çинчен», «Çулталăк вăхăчĕсем» т.ыт.те). Кĕнеке куравĕсем, ятарлă сĕнӳ плакачĕсем ачасене кĕнекесенчен кирлине суйлама пулăшмалла.

III класра вуламалли кĕнекесене çӳлĕк çине авторĕсене кура йĕркелесе тăратмалла. Ăслăлăх стилĕпе çырнă кĕнекесем уйрăм тăмалла. Кунтах вулама сĕннĕ кĕнекесен списокĕ, ачасем харпăр хăй тĕллĕн ĕçлемелли картотека пулмалла.

IV класра вуламалли илемлĕ литература тата ăслăлăх стилĕн хайлавĕсене çӳлĕк çине авторсен хушамачĕсене кура алфавит йĕркипе вырнаçтармалла. Пулăшу кĕнекисемпе хаçат-журналсем те ал айĕнчех пулмалла. Кунсăр пуçне ачасене кирлĕ сĕнӳсем, «Мĕн вуламалла» е «Вĕренӳ кĕнекинче кун çинчен çырман...» евĕр каталогсем хатĕрлемелле. Районти, хулари-ялти библиотекăпа ачасене иккĕмĕш вĕренӳ çулĕнче паллаштармалла. III-IV класра вĕренекенсен çывăхри библиотекăна хăйсем тĕллĕн çӳремелле. Вĕсене шкулпа библиотекăн пĕрлехи ĕçĕсене те явăçтармалла (литература уявĕсем, саспа вулани т.ыт.те).

Класри, класс тулашĕнчи вулав пуçламăш классенчи тăван чĕлхе программин ытти пайĕсемпе çыхăнмалла. Çавăнпа пĕрлех вулав урокĕсенче те чĕлхен тĕрлĕ енĕпе усă курма, тĕрĕс çырма, çут çанталăка сăнама, ĕçлеме, ӳкерме, музыкăна чухлама вĕрентекен уроксенче туянакан хăнăхусемпе анлăн усă курмалла.

## ПУПЛЕВЕ ПУР ЕНЛĔН АТАЛАНТАРНĂ МАЙ ЧĔЛХЕНЕ ТИШКЕРЕС ХĂНĂХУСЕНЕ НИКĔСЛЕССИ. ЧĔЛХЕ ПĔЛĔВĔН ТЕРМИНĔСЕМПЕ ПАЛЛАШТАРАССИ

Пуплеве пур енлĕн аталантарасси вулас, çырас, çыхăнуллă калаçас, тăнласа ăнланас мехелсене куллен вăйлатни çинче никĕсленсе тăрать. Шăп çавăнпа ĕнтĕ тăван чĕлхе урокĕсенче çыхăнуллă текстпа ĕçлесси тĕп вырăнта пулмалла. Ачасем ăна вуласа е тăнласа ун тăрăх калаçаççĕ, хăйсем текст хайлаççĕ, çыру хăнăхтарăвĕсем пурнăçлаççĕ.

Ăнланса вулас тата тăнлас, уçăмлă çырас тата калаçас мехеле аталантарасси çак пуплев ĕç-хĕлĕсене çĕнĕрен тепрер хут пурнăçланипе çеç çыхăнмасть. Кашни çĕнĕ урокрах ачасен пуплевĕн тĕрлĕ енне, вĕсен чĕлхе мулĕн тĕрлĕ сийĕпе усă курма пĕлнине çине-çинех çирĕплетсе, анлăлатса пымалла. Сасăсене тĕрĕс калас, вĕсене çырура палăртас, интонаци мелĕсемпе пĕлсе усă курас ăсталăха куллен якатмалла.

Тăван çырулăх чĕлхин сăмах йышĕ вырăнти (тури, анатри) калаçурипе танлаштарсан чылай уйрăлса тăрать. Çакна шута илсе ачасене кулленех çырулăх чĕлхин сăмахлăхĕпе паллаштармалла, уроксене ятарласа словарь хăнăхтарăвĕсем кĕртмелле. Çав шутра çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсемпе хирĕçле пĕлтерĕшлисене тупса палăртасси, темиçе пĕлтерĕшлĕ сăмахсене асăрхасси, пĕр пек пайсенчен тăракан (пĕр тымартан, пĕр аффикс хушăнса пулнă) сăмахсене, çавăн пекех пĕр темăпа çыхăннисене ушкăнласси, аса илсе каласси е çырасси, вĕсен пĕлтерĕшне тавçăрасси пулмалла.

Паянхи орфографи правилисем икĕ никĕс çине тĕренеççĕ. Тĕп чăваш чĕлхинчи сăмахсене чăн чăвашла, «каланă пек» (атте, анне, атă, пăтă, упа, эпир, аппа) çыраççĕ. Вырăс чĕлхинчен «урăхлат-масăр» илнĕ сăмахсене - «вырăсла» (парта, медаль, баян, колхоз, завод, фабрика). Çавна шута илсе ачасен сăмах йышне пуянлатнă май вырăс чĕлхи урлă кĕнĕ сăмахсене туйма, вĕсене мĕнле çырнине асăрхама вĕрентмелле.

Пуплеве аталантармалли тепĕр ăслай - ачасем тăван чĕлхери морфологи мелĕсемпе, урăхла каласан, сăмахсен тĕрлĕ формипе усă курма пĕлнине куллен лайăхлатасси.

Морфологи формисемпе усă курма пĕлни синтаксис мелĕсемпе тĕрĕс усă курма вĕрентес ĕçре пулăшать. Шкула тин çеç çӳреме тытăннă ачан пуплевĕ морфологи формисем енчен кăна мар, сăмах майлашăвĕсемпе предложенисен калăпĕсем тĕлĕшĕнчен те чухăнрах. Шухăша тĕрĕс ăнланма, ăна уçăмлăн палăртма хăнăхтарас тесен пуçламăш классенче вĕренекенсене тĕрлĕ калăплă сăмах майлашăвĕпе, предложенипе усă курма вĕрентмелле, вĕсен пуплевĕн синтаксисне аталантармалла. Ку тĕллеве пурнăçласси чĕлхе ăслăлăхне ятарлă вĕрентнипе мар, урокран урока туса пыракан тĕллевлĕ хăнăхтарусем пулăшнипе пулса пымалла. Çамрăксен чĕлхи тӳрккес те кăнттам ан пултăр тесен вĕсене хутшăнура ырă та евĕк пулма вĕрентмелле, чĕлхемĕрпе пĕлсе те сисĕмлĕ усă курма хăнăху памалла.

Çапла вара, чӗлхе культури, стилистики - тӑван чӗлхе урокӗсенче тимлемелли тепӗр пысӑк тӗллев. Ку тӗллев çыхӑнуллӑ пуплеве вӗрентессипе пӗр килет.

Хутшӑнура (диалогра) тӑван чӗлхемӗр «мулӗпе» усӑ курма, çыхӑнуллӑ калав тума пӗлнине лайӑхлатасси - чӗлхемӗр пуянлӑхӗн пур сийӗпе те усӑ курма пӗлнине «шӑратса çыпӑçтаракан» тӗллев. Ку тӗллеве пурнӑçласси пуплев хӑнӑхтарӑвӗсем çине таянмалла. Вӗсем урокра тӗп вырӑн йышӑнмалла. Вӗсемсӗр пусне кашни урокрах фонетика, орфографи, лексика, морфологи, синтаксис, стилистика хӑнӑхтарӑвӗсем те пулмалла. Пуплеве аталантарассин тухӑçлӑхӗ шӑпах ӗнтӗ пуплев хӑнӑхтарӑвӗсене «чӗлхе» е аспект хӑнӑхтарӑвӗсемпе çирӗплетсе пынинчен килет.

Пуплеве аталантарассин виççӗмӗш енӗ вӑл - ачасене пуплеве тишкерме хӑнӑхтарни, урӑхла каласан, чӗлхе тишкерӗвне вӗрентни. Ку вӑл пуплеве фонетикӑпа графика, орфографипе пунктуаци, морфологипе синтаксис, сӑмах тытӑмӗпе сӑмах пулӑвӗ енчен ансатлӑн тишкерессипе çыхӑнать.

Çакна асра тытмалла: кӑткӑс пулӑмсене тишкерме сӗннин уссинчен сиенӗ ытларах пулӗ.

Чӗлхери ансат пулӑмсене тишкернӗ май ачасене чӗлхе ӑслӑлӑхӗн терминӗсемпе паллаштарса вӗсене ӑнланма, вӗсемпе усӑ курма вӗрентмелле. Терминсемпе усӑ курма вӗрентесси - ерипен, васкамасӑр туса пымалли ӗç. Вӑл пуплеве аталантарассине кансӗрлемелле мар. Терминсемпе усӑ курма вӗрентесси вулассипе, тӑнлассипе, калаçури йӑнӑшсене асӑрхаса тӳрлетессипе çӑмӑллӑнах çыхӑнать. Терминсене ытларах чух чӗлхе ӑслӑлӑхӗн определенийӗсемсӗрех, лексика мелӗпех ӑнлантармалла. Вӗсем ачасен пуплевӗнче тӗрлӗ хӑнӑхтару тунӑ май çирӗпленсе пымалла. Ачасен вӗренӳри ӳсӗмне терминсемпе усӑ курма пӗлнине тӗпе хурса мар, пуплевӗн (вуласси, çырасси, ӑнкарса тӑнласси, çыхӑнуллӑн калаçасси) аталану шайне мала хурса хакламалла.

Ятарлӑ хӑнӑхтарусем тунӑ май вӗренекенсем сӑмахӑн сасӑ тытӑмне ӑнкарма, вӑл сыпӑксене пайланнине асӑрхама, унӑн пӗлтерӗшлӗ пайӗсене уйӑрма хӑнӑхаççӗ, пуплев пайӗсемпе, вӗсен паллӑрах формисемпе, предложени тӗсӗсемпе, предложени членӗсемпе, тӗрӗс çырмалли йӗркепе паллашаççӗ, чӗлхе материалне ушкӑнлама, танлаштарма, пӗтӗмлетме хӑнӑхса пыраççӗ.

Чӗлхе «мулӗн» тӗрлӗ сийне тишкерессе класран класа анлӑланса пырать, пуплеве аталантарассин тӗллевӗсемпе тачӑ çыхӑнать. Тӑван чӗлхене тишкерме вӗрентесси пуçламӑш классенче çакнашкал йӗркепе пулса пырать.

Сасӑсемпе сас паллисем. Вӗсем хушшинчи уйрӑмлӑхсем çинчен ачасем I-II классенчех пӗлеççӗ. Сасӑсем усӑ тата хупӑ, хытӑ тата çемçе, янравлӑ тата янравсӑр пулнине палӑртма вӗренеççӗ; ***сыпӑк, пусӑм*** ӑнлавсемпе паллашаççӗ, схемӑпа усӑ курса сӑмахсен сасӑпа сас палли тытӑмне тишкереççӗ. Вулама-çырма вӗренмелли кашни урокрах ачасем пуплевӗн ансат тӗслӗхӗсене пӑхса тухаççӗ, çавна май фонетика терминӗсемпе усӑ курма та хӑнӑхаççӗ. II класра фонетикӑпа графика тишкерӗвӗ тӗрӗс çырма вӗрентессипе тата пуплев кӑлтӑкӗсене юсассипе çыхӑнать.

III-IV классенче ачасен çак пӗлӗвӗсемпе ӑслайӗсем, хӑнӑхӑвӗсем малалла аталанаççӗ. Вӗсен пуплеве тӑнлас-итлес сисӗмӗ çивӗчленет, сӑмахӑн сасӑпа сас палли тытӑмне чухласси лайӑхланать. Ку тапхӑрта фонетикӑпа графика тишкерӗвӗпе усӑ курнин тӗп тӗллевӗсем

- йӑнӑшсӑр çырса илес, илтнипе çырас, çырнине тӗрӗслес ӑслайсене вӗрентесси, тӗрӗс çырас хӑнӑхусене лайӑхлатасси.

Тӗпрен илсен, фонетикӑпа графика тишкерӗвне вӗрентнин тӗллевӗсем I класра та, II-IV классенче те пӗрешкел: ачасем сасӑсене ӑнланса уйӑрма, вӗсене тӑван çырулӑхра йышӑннӑ пек палӑртма вӗренмелле. I класс пӗтернӗ тӗле вӗсен çакна пӗлмелле: каланипе çырни хушшинче тӳрӗ шайлашу çук, сӑмахри сасӑсемпе сас паллисен йышӗ пур чухне те пӗр пек мар, чылай сас паллин темиçе пӗлтерӗш пулать (сӑмахран, хытӑ хупӑ сасса та, çемçине те пӗр пекех палӑртатпӑр: ут - ӳт, сӑн - сӗн), хӑш-пӗр сас палли икӗ сасса палӑртать (яка, юрӑ, ешчӗк), тепӗр чухне пӗр сассах икӗ сас палли çырса палӑртатпӑр (кукӑль, мӑкӑнь, вулать).

II класра вырӑс чӗлхинчен кӗнӗ хӑш-пӗр сӑмахсене калассипе, çырассипе паллаштарма пуçлатпӑр. Кунсӑр пуçне ачасем чӑн чӑваш сӑмахӗсенчи вӑрӑмланнӑ сасса илтме, ансат тӗслӗхсенче ӑна икӗ пӗр пек сас палли çырса палӑртма вӗренеççӗ, илтнипе (диктант) çырма хӑнӑхаççӗ.

III-IV классенче тӗрлӗрен хӑнӑхтару пурнӑçланӑ май вӗренекенсем тӗрӗс çырассин йывӑрлӑхӗсене асӑрхама-туйма, орфографин чылай правилипе усӑ курма пуçлаççӗ. Çапла вара, сӑмахӑн сасӑпа сыпӑк тытӑмне тишкерес хӑнӑхусене лайӑхлатса пырса, вӗсене сӑмахӑн пӗлтерӗшлӗ пайӗсене асӑрхамалли хӑнӑхтарусемпе çыхӑнтарса ачасен тӗрӗс çырас мехелне вӑйлатсах пыратпӑр. Унсӑр пуçне фонетикӑпа графика тишкерӗвӗ ачасен пуплев культурине (сасӑсене уçӑмлӑн кӑларасси, сӑмахсене литература чӗлхинчи пек каласси, пуплев янравлӑхӗ) лайӑхлатассипе тачӑ çыхӑнмалла.

Сӑмах. Пуçламӑш шкулта вӗренекенсен сӑмах йышне пуян- латассине тӑватӑ çулӗпех тӗп тӗллевсенчен пӗри тесе шутламалла. Ку тӗллеве пуплеве пур енлӗн аталантармалли уроксенче тӗрлӗ

хăнăхтару тутарса пурнăçламалла. Чĕлхемĕрти сăмахсем вăл е ку япалана, пулăма, вĕсен ĕçне т.ыт.те палăртнине, пĕлтерĕшĕпе çывăх е хире-хирĕç пулнине, предложенире, текстра сăмахпа темиçе пĕлтерĕшпе усă курма май пуррине ачасем чĕлхе теорине тÿррĕн вĕренсе мар, тĕрлĕ хăнăхтару, сăнавсем тунă май куç кĕрет курмалла. Вĕсем шухăша тĕрĕсрех палăртакан сăмахсене суйлама вĕренсе пыраççĕ, сăмах йышĕ пуянланса пырать, унпа усă курасси лайăхланать.

II класра сăмах тытăмĕпе ***(сăмах тымарĕ, пĕр тымарлă сăмахсем)*** паллаштарма пăхнă. Анчах ку терминсемпе паллаштарич- ченех сăмахсем пĕлтерĕшлĕ пайсенчен тăнине асăрхама пулăшакан, вăл е ку пĕлтерĕшлĕ пай пуррине кура сăмахăн пĕлтерĕшне тавçăрма вĕрентекен хăнăхтарусемпе усă курмалла. Çакă ачасен сăмах йышне пуянлатас ĕçре пысăк вырăн йышăнмалла.

III класра сăмах тытăмне туллинрех вĕренме палăртнă. Вулав тата çыру хăнăхтарăвĕсем пурнăçланă май вĕренекенсем ансат тĕс- лĕхсенче сăмах тăвакан тата сăмаха улăштаракан аффикссене асăрхама пуçлаççĕ, çапла вара вĕсем сăмахпа сăмахăн форми хушшинчи уйрăмлăха курма хăнăхаççĕ. Сăмах тытăмне тишкерме хăнăхни ăна мĕнле çырмаллине тавçăрма, çырнине тĕрĕсленĕ чух çак ăслайпа усă курма май парать. Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсенче ***б, г, д, ж, з, ё, о, ц, щ*** сас паллисем çыратпăр; хупă сасă икĕ уçă сасă хушшинче вăраммăн илтĕннĕ чух та ăна час-часах вырăс чĕлхинчи евĕр пĕр сас паллипех паллă тăватпăр (парта, Саша, математика), пуçламăш формăра сăмах вĕçĕнчи [ă] сасса ***а*** е ***я*** çырса палăртатпăр (Нина, Галя).

Сăмахсене пĕлтерĕшĕ енчен ушкăнласси-тишкересси ерипенех вĕсен улшăну мелĕсене сăнассипе çыхăнса каять. Пуçламăш классенче ачасем пилĕк тĕп пуплев пайне уйăрма вĕренеççĕ: ***япала ячĕ, глагол, паллă ячĕ, хисеп ячĕ, ылмаш (местоимени).*** Пуплев пайĕсене уйăрмалли мелсемпе вĕсем пуплев пайĕсен терминĕсемпе паллашиччен чылай малтан паллашма тытăнаççĕ.

Программăра палăртнă пуплев пайĕсене вĕренекенсем лексика пĕлтерĕшне, ыйтăвĕсене тата улшăну мелĕсене кура уйăрма хăнăхмалла. Ку тĕллеве пурнăçласси виçĕ тапхăра тăсăлать. II класра вĕренекенсем япалана, ĕçе, вĕсен паллисене пĕлтерекен сăмахсен ыйтăвĕсене калама хăнăхаççĕ, сăмахсене вĕсем мĕнле ыйтурине кура ушкăнлама тытăнаççĕ. II класра вĕсем ***япала ячĕ, глагол, паллă ячĕ, ылмаш*** терминсемпе усă курма хăнăхмалла. Ылмаш тесе ку класра сăпат ылмашне калаççĕ. Хыç сăмахсемпе союзсем çинчен ятарласа вĕренмеççĕ, анчах та вĕсем уйрăм сăмахсем пулнине туйма, вĕсене уйрăм çырма хăнăхтарса пымалла.

III класра вĕренекенсене япала ячĕсем улшăннине, вĕсем пĕрреллĕ тата нумайлă хисепсенче пулнине, ытти сăмахсемпе çыхăннă чух тĕрлĕ аффикс йышăнма пултарнине тĕслĕхсемпе кăтартса памалла. ***Укĕм (падеж)*** терминпа паллаштармалла мар, апла пулин те ачасем ÿкĕм аффиксĕсем йышăннă япала ячĕсен ыйтăвĕсене лартма вĕренсе çитмелле. Еç-хĕлсене, вĕсем хăш вăхăтрине, паллă ячĕсене тĕрлĕ хăнăхтару тунă чух пĕлтерĕшпе ыйтăвне кура палăртма хăнăхмалла. Шут хисеп ячĕсен тулли тата кĕске формисене тĕрĕс çырма хăнăхтармалла, ку пуплев пайĕн кĕс- ке формисене япала ячĕсемпе çыхăнтарма, вĕсемпе пуплевре усă курма вĕрентсе пымалла.

IV класра маларах вĕреннĕ пуплев пайĕсемпе тĕплĕнрех паллаштарма, япала ячĕсем мĕнле ÿкĕмрине чухлама, терминпа усă курма, анлă усă куракан сăмахсене тĕрлĕ ÿкĕмре лартма, тĕрĕс калама тата çырма вĕрентмелле.

Еç-хĕл çинчен те тĕплĕнрех вĕрентмелле: тăтăшах пуплевре тĕл пулаканнисене виçĕ вăхăтра сăпатлама, вĕсен пурлă тата çуклă формисемпе усă курма хăнăхтармалла. Сăпатланă май сăпат формисемпе пĕрреллĕ тата нумайлă хисепсенче тĕрĕс усă курма, вĕсене тĕрĕс калама тата çырма вĕрентмелле. Тĕрлĕ ÿкĕмри япала ячĕсене сăпат ылмашĕпе ылмаштарнине сăнаттарса ку мелпе пуплевре усă курма хистемелле.

Паллă ячĕсем çинчен те IV класра вĕренекенсене çĕнĕ пĕлÿ памалла. Уйрăмах вăйлă степеньри ем-ешĕл, сап-сарă, кăн-кăвак йышши паллă ячĕсене (терминне асăнмасăр) тĕрĕс çырассине тимлемелле. Йĕрке хисеп ячĕсен ыйтăвĕсене лартма, вĕсене ячĕсемпе çыхăнтарма тата тĕрĕс çырма хăнăхтарса пымалла, вĕсемпе пуплевре усă курма вĕрентмелле.

Грамматика формисем. Пуплев пайĕсем пирки çÿлерех каланисĕр пуçне кашни класрах уйрăмах тимлемелли грамматика формисен шутĕнче - япала ячĕсен камăнлăхне (сăпатне) палăртасси, пулăшу пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсен тăтăшрах тĕл пулакан ÿкĕм формисем.

Предложени. Кĕçĕн классенче вĕренекенсен: 1) предложени пуплевĕн тĕллевне кура калуллă, ыйтуллă е хистевлĕ (хушуллă) пулнине, ăна мĕнле каланине кура - кăшкăруллă е кăшкăрусăр пулни çинчен; 2) предложени членĕсем çинчен; 3) предложенири сăмахсен çыхăнăвĕ çинчен; 4) предложени сăмах майлашăвĕсенчен тăни çинчен пĕлмелле. Çак ăнлавсемпе ачасене 4 çул хушшинче ерипен паллаштарса çитермелле.

I класра ачасем предложение пуплевре асăрхама, ăна сăмах- ран уйăрма, ăна (тишкернĕ хыççăн)

çырма, пысăк сас паллинчен пуçлама, вĕçĕнче пăнчă лартма вĕренеççĕ.

II класра предложени вĕçĕнче, пăнчăсăр пуçне, ыйту е кăшкăру палли лартассипе паллашаççĕ, уйрăм сăмахсене палăртса калама, предложени вĕçĕнчи паллăпа тивĕçуллĕ интонаци тума хăнăхаççĕ.

III класра вĕренекенсем предложени пуплев тĕллевне кура калуллă, ыйтуллă, хистевлĕ, интонацине кура - кăшкăрулла е кăшкăрусăр пулни çинчен пĕлмелле, предложении çак тĕсĕсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма хăнăхмалла.

IV класра ачасем пĕр йышши членлă (япала ячĕпе паллă ячĕсенчен, глаголтан пулнă тĕслĕхсем) предложенисемпе паллашаççĕ. Ку предложенисене тĕрĕс интонаципе калама, вĕсемпе калаçура тата çырура усă курма, пĕр йышши членсене çырура хÿреллĕ пăнчăпа (ансат тĕслĕхсем) уйăрма вĕренмелле.

Предложени членĕсемпе паллашасси II класра пуçланать. Ачасем кам е мĕн çинчен тата мĕн каланине палăртакан сăмахсене тупма вĕренеççĕ. Çак класрах ***подлежащи, сказуемăй*** терминсемпе усă курма тытăнаççĕ, вĕсен пĕлтерĕшĕсене чухлама пуçлаççĕ.

III класра ***кĕçĕн членсем*** терминпа паллаштармалла, ***сăмах майлашăвĕ*** ăнлавпа, терминпа усă курма вĕрентмелле.

Хутсăр предложени тытăмне тишкересси класран класа ерипен кăткăсланса пымалла. Çавăнпа пĕрлех тĕрлĕ йышши предложени йĕркелеме вĕрентмелле, тунă предложенисене тĕрĕс çырма хăнăхтармалла.

Чĕлхе пĕлĕвĕн ăнлавĕсемпе паллашни, чĕлхене тишкерме вĕренни орфографи правилисене ăнланма, вĕсемпе усă курма пулăшмалла. Орфографи правилисемпе усă курма вĕрентес тĕллевпе куллен-кунах ерипен кăткăсланса пыракан хăнăхтарусем тутармалла. Çырнине тĕрĕслес ăслая та аталантарсах пымалла.

Тĕрĕс çырма вĕрентесси кулленхи словарь ĕçĕпе, фонетика, морфологи тата синтаксис хăнăхтарăвĕсемпе тачă çыхăнмалла.

Çырма йывăр сăмахсене (мĕн вĕрентме палăртнине шута илсе) çав хăнăхтарусене тăтăшах кĕртмелле, ачасем çав сăмахсене пĕр шикленÿсĕр çырма вĕренсе çитчĕр.

Çыхăнуллă пуплев. Кĕçĕн çулхи ачасем малашне мĕнле вĕренсе пырасси, ăс-тăн илесси пуплевпе шухăшлав аталанăвĕнчен килет. Çавна кура çыхăнуллă пуплев хăнăхтарăвĕсем кашни урокрах тĕп вырăнта пулмалла. Вĕсене текста вулассипе, тăнлассипе çыхăнтармалла, вĕсемпе пĕрлех текст тăвасси те, ăна çырасси те кашни класрах тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла.

Кĕçĕн классенче вĕренекенсен çыхăнуллă пуплевне аталантарасси, пĕтĕмĕшле илсен, çыхăнуллă текст тума вĕрентессипе пĕр килет. Вуланă е итленĕ калав, выляса кăтартнă диалог - ачасемшĕн çавăн евĕр текст тумалли тĕслĕхсем.

Малтанхи вăхăтра ачасем итленĕ е вуланă калава çывăх текст тума, урăхла каласан, изложени хатĕрлеме, каярахпа вара курни- илтни, вулани çинчен çыхăнуллă каласа пама, çырма пуçлаççĕ.

Çыхăнуллă пуплев хăнăхтарăвĕсене вулав урокĕсенче те, чĕлхе урокĕсенче те ирттермелле, вĕсене сăмах вĕççĕн каласа та, çырса та пурнăçламалла. Чĕлхе урокĕсенче, тĕпрен илсен, изложенисемпе сочиненисем, вулав урокĕсенче вара сăмах вĕççĕн тумалли ĕçсем ытларах сĕнмелле.

Ачасене ***текст*** ăнлавпа паллаштармалла, текстăн тытăмне сăнаттармалла, ансат текстсем тума вĕрентмелле. Çак ĕçре тĕрлĕ мелпе, курăм хатĕрĕсемпе анлăн усă курмалла.

## ĂСЛАВЛĂ (ТВОРЧЕСТВĂЛЛĂ) ÇЫРУ УРОКĔСЕМ

Программăри тăван чĕлхе курсĕнче ятарласа ăславлă çыру урокĕсем палăртнă. Вĕсене II класран пуçласа икĕ эрнере пĕрре ирттермелле.

Çыру урокĕсене тĕллевлĕ те тухăçлă ирттерес тесен кашни вĕренÿ чĕрĕкĕнче миçе изложенипе сочинени ирттермеллине, вĕсенчен хăшĕсем сăмах вĕççĕн тата çырса пурнăçламаллисем пулмаллине, текст тума вĕренессин хăш йывăрлăхĕсемпе çыхăнмаллине, тăван чĕлхе ытти уроксемпе мĕнле шайлашмаллине малтанах палăртса хумалла.

Çыру пуплевĕн ăслайĕсене аталантарас ĕçре калаçу çине таянмалла. Çырмалли хăнăхтарăва ытларах вĕрентÿçĕ ертсе пынипе малтан сăмах вĕççĕн тутармалла. Текста калаттарнă чух вĕрентÿçĕ ачасене пуплевĕн çыхăнулăхне лайăхлатма, тĕрĕс çырма хатĕрленме пулăшать. Текста сăмах вĕççĕн тăвакан ачан пуплевĕнчи çитменлĕхсене асăрхаса вăл вĕсене мĕнле тÿрлетмеллине кăтартать кăна мар, çырма пĕлеймен сăмахсене çырма çăмăлраххисемпе улăштарма вĕрентет.

Вуланине каласа пама, изложени çырма хăнăхни ачасене харпăр шухăшне, сăнланине çыхăнуллăн çырса палăртма хатĕрлет.

Аслав çыру урокĕсем чĕлхе урокĕсемпе тачă çыхăнса тăмалла.

Пуçламăш шкулти изложенисемпе сочиненисем ытларах ***калуллисем*** пулмалла. Ерипенех ачасем калава ***сăнлав*** (çут çанталăка, этемĕн питне-куçне, унăн тумне, ĕçне сăнлани) тата ***уйлав*** (мĕншĕн? мĕн пирки? т.ыт. ыйтусене сӳтсе явни) элеменчĕсене кĕртме вĕренсе пымалла. Ку элементсем малтанлăха икĕ-виçĕ предложенирен тăма пултараççĕ. Сăнлав элеменчĕсене хăйсен калавĕсене кĕртчĕр тесен малтан ачасене сăмахпа каламалли ӳкерчĕксем тума вĕрентмелле (лайăх пĕлекен япаласене, çут çанталăк пулăмĕсене, этеме сăнлани т.ыт.те). Еç хучĕсен питĕ кирлĕ ансат тĕсĕсене (çыру, пĕлтерӳ) çырма вĕрентессине те çав уроксенчех туса пымалла.

Изложенисемпе сочиненисем çырма хăнăхтарас тĕллевпе ушкăнпа сӳтсе явмалли-çырмалли ĕççем ирттерни усăллă. Кун пек ĕçсене пурнăçланă чух ачасем ăслав ĕçĕн ăслайĕсене вĕренсе пыраççĕ, каярахпа вара вĕсемпе хăйсем тĕллĕн усă курма пуçлаççĕ.

Çыхăнуллă пуплеве аталантарассин шутне калаври пайсене, уйрăм предложенисене тĕрĕс сыпăнтарма вĕрентесси те кĕрет. Çакна шута илсе ачасене сăмах вĕççĕн каламалли, çырмалли текстăн планне тума, план тăрăх каласа пама, çырма куллен хăнăхтарса пымалла.

Изложенипе сочинени калăпăшĕ пуçламăш классенче пысăк пулмалла мар. Вĕсене тӳрех тасан çыртармалла, икĕ хут çыртарса пĕр урокран ытла тăстармалла мар. Пĕчĕкрех ĕçсене вулав тата чĕлхе урокĕсенче ирттерме е класра лайăх хатĕрлентерсе киле пама та юрать.

## ÇЫРМА ВĔРЕНТЕССИ. ТĔРĔС ТЕ ИЛЕМЛĔ ÇЫРАССИ

Пуçламăш классенче тăван чĕлхепе тĕрĕс те илемлĕ çырма вĕрентес ĕç нумай енлĕн пулса пырать. Тĕрĕс, таса, илемлĕ çырма вĕренччĕр тесен ачасен алă хăнăхăвĕпе куç виçине (сас паллисен ĕлкине тĕрĕс тума, вĕсене пĕрлештерме, сăмахсемпе предложенисене уçăмлăн, тикĕссĕн çырма пĕлнине) куллен лайăхлатма тăрăшмалла. Çырăва вĕрентнĕ май сасса сас паллипе палăртма, сас паллине, сăмаха, предложение çăмăллăн вулама-çырма, вĕсене кĕнекерен е класс хăми çинчен çырса илме, çырнине тĕрĕслеме, йăнăшсене тӳрлетме хăнăхтармалла.

Таса та илемлĕ çырма вĕрентме программăра ятарлă уроксем палăртман. Ку ĕçе тăван чĕлхе урокĕсенче куллен туса пымалла. I класра çыру хăнăхтарăвĕсене «Çыру тетрачĕпе» усă курса йĕркелемелле. Алă хусканăвне, куç виçине лайăхлатмалли ятарлă хăнăхтарусем I-II классенче тăтăшах тутармалла. Кăткăсрах сас паллисене çырма, вĕсене çыхăнтарма пĕлнине лайăхлатас тĕллевпе III-IV классенче те ятарлă хăнăхтарусем тăтăшах ирттермелле, алăпа çырнă е пичетленĕ сăмахсене, предложенисене, текста çырса илмелли, шутланă тата итленĕ тăрăх çырмалли ĕçсем сĕнмелле.

Таса çырмалли хăнăхтарусене II-IV классенче урокри грамматика тата орфографи материалĕпе çыхăнтарма тăрăшмалла. Пуçламăш шкулта вĕренекен ачан çырăвĕ тирпейлĕ, вулама меллĕ, тĕрĕс пулмалла. Таса та илемлĕ çырма вĕрентни типтерлĕ пулма, кирек мĕнле ĕçе те тӳрĕ кăмăлпа, тăрăшуллă тума хăнăхтарать.

## АЧАСЕН ПĔЛĔВНЕ ТĔРĔСЛЕССИ

Программăн кашни пайĕнче палăртнă материала мĕнле вĕренсе пынине тăтăшах тĕрĕслесе хакласа тăмалла. Ачасен программăра палăртнă ăслайĕсем, хăнăхăвĕсемпе пĕлĕвĕсем ерипенех аталанса, çирĕпленсе пымалла. Вĕсене тĕрĕслесси, хакласси - нумай енлĕн тумалли ĕç. Вĕренекенсен аталану шайне аван пĕлсе тăни вĕрентӳçе хăйĕн ĕçне кирлĕ улшăнусем кĕртме май парать, ачасен пĕлĕвĕпе ăслайĕсене тивĕçлипе хаклани вĕсене тăрăшарах вĕренме хистет, хавхалантарать.

Пĕлӳсемпе ăслайсене, хăнăхусене тĕрĕсленĕ-хакланă чух вĕрентӳçĕ сăмах вĕççĕн тумалли хăнăхтарусемпе, çыру ĕçĕсемпе усă курать.

Тăван чĕлхе урокĕсенче ирттермелли çыру ĕçĕсем шутне пуçламăш классенче çаксем кĕреççĕ: çырса илни, диктантсем (ăнлантару, асăрхаттару, курав, ăслав, тĕрĕслев, сăмах диктанчĕсем т.ыт.те), изложенисемпе сочиненисем.

Словарь диктантĕнчи сăмахсен хисепĕ çапла пулмалла: II класра 7 таран, III класра - 10-11, IV класра - 12-14 сăмах.

I класри тĕп тĕрĕслев ĕçĕ - çырнă тата пичетленĕ текста (12-15 сăмах) çырса илесси. Ана хакланă чух сас паллисене, вĕсен çырури ĕлкине тума пĕлнине, çыру тикĕслĕхĕпе тасалăхне тата унăн тĕрĕслĕхне (сас паллисене сиктерсе хăварман-и, вĕсене урăххисемпе улăштарман-и, сăмахсене çырса пĕтернĕ-и т.ыт.те) шута илмелле.

Тĕрĕслев диктантĕнчи сăмахсен хисепĕ II класра вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнче 20-25 сăмах, вĕçĕнче 30-35 сăмах, III класра вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнче 35-40 сăмах, вĕçĕнче 45-50 сăмах, IV класра вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнче 50-55, вĕçĕнче 60-65 сăмах пулмалла. Диктант текстĕнче

вĕренмен орфограммăсем пулмалла мар.

Изложенисем, тĕпрен илсен, вĕрентӳ ĕçĕсем пулмалла. Изложени валли текст суйланă чух унăн пахалăхне, вĕрентӳ тĕллевĕсене еплерех тивĕçтернине пăхмалла. Тĕрĕслев изложенийĕсен тĕсĕсем ерипен кăткăсланмалла.

Пуçламăш классенче ирттерекен сочиненисем - пĕтĕмпех вĕрентӳ ĕçĕсем, вĕсемпе ачасен çыру хăнăхăвĕсене хаклас тĕллевпе усă курмалла мар.

Кашни урокрах ачасене вĕренӳ кĕнекипе усă курма, кирлĕ темăна, правилăна, хăнăхтарăва хăвăрт шыраса тупма, хăнăхта- рура мĕн хушнине йĕркипе тума вĕрентсе пымалла. Çавăн пекех вĕсене хăйсем пурнăçланă хăнăхтару мĕн тума кирлине, мĕне вĕрентнине ăнкарма хистемелле. Ачасене вĕренӳре хавхалантарас тесе тăван чĕлхе урокĕсенче тĕрлĕрен вĕрентӳ вăййи, вăйăллă хăнăхтарусем (сăмах каçмăшсемпе шарадăсем, ребуссем шутлани, сăмахсем шыраса тупни, тăван сăмахăн вăрттăнлăхне, кун-çулне кăтартакан пĕчĕк калавсене вулани т.ыт.те) йĕркелемелле. Вĕсем ачасен тимлĕхне ӳстерме, ывăннине сирсе яма, вĕренӳ тухăçне пысăклатма пулăшаççĕ. Урок тытăмĕ пĕр евĕрлĕ пулни кĕçĕн класри ачасене час ывăнтарать. Унтан хăтăлмашкăн урока тĕрлĕ ĕç кĕртсе черетлентермелле: калаçу, чĕлхе сăнавĕ-тишкерĕвĕ, кĕнекепе тата тетрадьпе ĕçлени, класс хăми çине çырни, грамматика вăййисем ирттерни т.ыт.те.

Çирĕплетнĕ вĕрентӳ планĕ пуçламăш шкулта тăван чĕлхе вĕрентме I-II-III-IV классенче эрнере 3 сехет уйăрнă.

## П Р О Г Р А М М А

## I К Л А С С *(99 сехет)*

### ВУЛАМА-ÇЫРМА ВĔРЕНТЕССИ, ПУПЛЕВЕ АТАЛАНТАРАССИ. ЛИТЕРАТУРА ВУЛАВĔ, КЛАСС ТУЛАШĔНЧИ ВУЛАВ

Вулама-çырма вĕрентесси икĕ тапхăра уйăрлать: пĕри - хатĕрлев тапхăрĕ, тепри - сас паллисемпе паллаштарнă тапхăр.

Вулама-çырма вĕрентмелли тĕп меслет - тишкерӳ-пĕрлештерӳ меслечĕ. Шкул ачисене вĕрентнĕ чух унпа туллин усă курмалла.

Литература вулавĕ. Пĕрремĕш класра литература вулавĕн урокĕсем эрнере пĕрре пулмалла. Пĕрремĕш çур çулта, ачасен вулав хăнăхăвĕсем йĕркеленсе çитиччен, литература хайлавĕсемпе паллашмалли тĕп меслетитлесе йышăнасси. Литература вулавĕн урокĕсен тĕп тĕллевĕ - ачасене тăван сăмахлăхăн иксĕлми пуянлăхĕпе паллаштарасси, илемлĕ литература хайлавĕсемпе кăсăклантарса ярасси, сăмах искусствипе чунтан киленме, ăна ăнланма вĕрентсе пырасси, вĕсен ăнлав пултарулăхне амалантарасси.

Класс тулашĕнчи вулав урокĕсенче ачасене кĕнекепе интереслентермелле, хăйсем тĕллĕн вулама хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлемелле. Ача-пăча кĕнекисене пăхасси, унти хайлавсене туласси, итлесси çак уроксенчи тĕп ĕçсем пулмалла.

### ВУЛАМА-ÇЫРМА ВĔРЕНТЕССИ ХАТĔРЛЕВ ТАПХĂРĔ

Хăнăхтарусем пурнăçланă май терминсемпе (пуплев, текст, калав, предложени, сăмах, сыпăк, пусăм, уçă сасă, хупă сасă) паллаштарасси, вĕсемпе вĕренӳре усă курма хăнăхтарасси.

Пуплев (калупа çыру) çинчен пĕтĕмĕшле ăнлав парасси.

Предложени тата сăмах. Пуплеври (текстри) предложенисене, предложенири сăмахсене уйăрса илесси, вĕсене фишкăсемпе усă курса палăртасси. Предложени сăмахсенчен тăни. Предложении пуçламăшĕ тата вĕçĕ. Чарăну паллисем (пăнчă, хӳреллĕ пăн- чă, ыйту палли, кăшкăру палли), вĕсен ячĕсемпе паллаштарасси.

Сăмах сасăсенчен тăни, унăн пĕлтерĕшĕ пурри.

Сыпăк, пусăм. Сăмахсене сыпăкăн пайласси (сыпăкласси). Сăмахсенче сыпăксен шутне, йĕркине палăртасси. Пусăмлă тата пусăмсăр сыпăксене асăрхасси, сăмаха тĕрĕс пусăмласа (пусăм укекен сыпăка тăсарах, вăйлăрах) каласси.

Сасă. Пĕтĕмĕшле ăнлантарасси. Сăмахри сасăсене уйăрасси, фишкăсемпе усă курса вĕсен хисепне, йĕркине палăртасси.

Каланă сасăллă сăмаха ыттисем хушшинче палласси, хатĕр схемăна тивĕçтерекен, пĕр-пĕр сасăран е сыпăкран пуçланакан сăмахсене аса илесси. Уçă тата хупă сасăсене илтесси, пĕр- пĕринчен уйăрса илесси.

Çыру хăнăхăвĕсем. Çырнă чух тĕрĕс ларма, тетраде кирлĕ пек хума, кăранташпа ручкăна меллĕн

тытма, ӳкерчӗксем тунӑ е ҫырнӑ чух вӗсемпе тӗрӗс усӑ курма вӗрентесси.

Пирӗн ҫырӑвӑн хӑй евӗрлӗхӗ: эпир ытти чылай халӑх пек сулахайран сылтӑмалла йӗркен-йӗркен ҫӳлтен аялалла ҫыратпӑр.

Ҫырулӑхра усӑ куракан хӑш-пӗр капӑшсен ячӗсемпе паллаштарасси: ***виҫ кӗтеслӗх, тур кӗтеслӗх, ҫаврашка, ункӑ, ҫур ункӑ, пӗкӗ, ҫекӗл, лапчӑкункӑ.***

Капӑша пӗрлӗхлӗ курма тата унӑн пайӗсене палӑртма хӑнӑх- тарасси. Пайсем тӑрӑх капӑшне тавҫӑрасси, пайсенчен капӑш пуҫ- тарасси, капӑшри ҫитмен пайсене ӑнкарасси.

Капӑшсене куҫ виҫипе танлаштарасси, вӗсем хӑш пайӗсемпе пӗр пеккине е пӗр-пӗринчен уйрӑлса тӑнине асӑрхама хӑнӑхтарасси. Лап выртакан (горизонтальная), чӑнкӑ анакан (вертикальная) йӗрсемпе паллаштарасси, вӗсене тетрадьре тупасси. Хӑш-пӗр йӗрсен ячӗсемпе паллаштарасси: ***чалӑш йӗр*** (косая линия), ***кукӑр йӗр*** (кривая линия) т.ыт.те.

Тӗрлӗ йӗре, капӑшсене, эрешсене, сас паллисен пайӗсене сывлӑшра евӗрлесси, йӗрлесси. Ҫырса пӗтермен йӗрсемпе капӑшсене вӗҫлесси, сӑрласси.

Уҫлӑх енӗсем: ***сылтӑм, сулахай, ум, хыҫ, аял, ҫул, мал, кай, ҫум.*** Япаласен, капӑшсен уҫлӑхри вырӑнне курма, сӑмахпа палӑртма пӗлесси.

Итлев тата калу хӑнӑхӑвӗсем. Аслисем, тантӑшӗсем каланине. вуланине итлеме-илтме хӑнӑхтарасси: итлеме хатӗрленесси, малтан пуҫласа вӗҫне ҫитиччен пӳлмесӗр, каланине ӑш пиллӗн йышӑнса итлесси. Илтнине ӑнланма, астуса юлма тӑрӑшасси.

Ҫыхӑнуллӑ каласа пама, текст калӑплама вӗрентесси. Текст теми, сюжечӗ - ӗҫ мӗнле пуҫланать, мӗн хыҫҫӑн мӗн пулса иртет, мӗнле вӗҫленет. Сӑмах кам е мӗн ҫинчен пырать.

Итлеме, ҫыхӑнуллӑ каласа пама вӗрентнӗ май ачасен сӑмах йышне пуянлатасси, сӑмахсен пӗлтерӗшне тӗрӗсрех, тарӑнрах чухлама, вӗсен грамматика формисене тума, пуплевре вӗсемпе вырӑнлӑ усӑ курма, тӗрлӗ тытӑмлӑ предложенисене кӗртсе вӗсене пӗр-пӗринпе ҫыхӑнтарма хӑнӑхтарасси.

Вулама-ҫырма вӗрентес умӗнхи тапхӑр вӗҫне ҫак результатсене кӗтме пулать.

***Харкамлӑх результачӗсем:***

- ачасем хӑйсем шкул ачи пулнине, шкул пурнӑҫне, йӗркисене, вӗренекен яваплӑхӗсене ӑнланса ӑша хывса пурнӑҫласа пыма хӑнӑхни;
- пӗр-пӗринпе, аслисемпе кӑмӑллӑн хутшӑнма вӗренсе пыни;
- хутшӑну тата пуплев этикечӗпе паллашма пуҫлани, вӗсене тытса пыма хӑнӑхса пыни;
- таврари япаласемпе пулӑмсене, вӗсен хушшинчи ҫыхӑнусене сӑнама хӑнӑхни;
- «ҫемье», «йӑх», «ял-йыш» ӑнлавсене уҫӑмлани, ӑса хуни.

***Предметсен пӗрлӗхлӗрезультачӗсем:***

- вӗренӳ ӗҫ-хӗлӗн уйрӑмлӑхӗсене ӑша хурса пыни, задачисене алла илсе, пурнӑҫласа пыма пуҫлани;
- тантӑшӗсен тата харпӑр хӑй ӗҫне сӑнама, ҫитменлӗхсемпе ӑнӑҫусене палӑртма хӑнӑхса пыни;
- пулӑмсемпе япаласене, капашсене тишкерме, танлаштарма, пӗр пеклӗхсемпе уйрӑмлӑхсене палӑртма вӗренсе пыни;
- ачасем пуплев ӗҫ-хӗлӗсене (калу, итлев) ӑнӑҫлӑ вӗренсе пыни, алла илме (вулав, ҫыру) хатӗрленни.

***Предметӑн пайрамлӑ результачӗсем:***

- литература пуплевне ӑнланма, сасӑсене, сӑмахсене литература чӗлхинчи пек калама вӗренсе пыни, ачасен пуплевӗ пур енлӗн аталанса пыни;
- ансат ӑнлавсене уҫӑмлани, терминсемпе (пуплев, текст, предложени, сӑмах, сыпӑк, пусӑм, уҫӑ сасӑ, хупӑ сасӑ) паллашни, вӗсемпе усӑ курма хӑнӑхса пыни;
- пуплеве ансат тишкерме пӗлни;
- ҫыру гигиенин правилисемпе паллашни, чӑваш ҫырӑвӗн хӑй евӗрлӗхне ӑнкарни;
- капӑшсене пӗрлӗхлӗ курма тата унӑн пайӗсене палӑртма хӑнӑхса пыни;
- тӗрлӗ йӗре, капӑша, эреше, сас паллисен пайӗсене йӗрлесе тата евӗрлесе ҫырма пӗлни;
- ачасен вӗтӗ моторики аталанса пыни.

## САС ПАЛЛИСЕМ ВӖРЕННӖ ТАПХӐР

### Вулама-ҫырма вӗрентесси

Тӑван чӗлхери тӗп сасӑсем, вӗсене уйӑрасси, ҫырура палӑртасси. Кӗнекере тата ал ҫырӑвӗнче усӑ куракан сас паллисем, вӗсен пӗлтерӗшӗсем.

Вӗреннӗ сас паллисене тӗрӗс ҫырма, ҫырура пӗр-пӗринпе ҫыхӑнтарма, тӗрлӗ йышши - уҫӑ, тунтер,

тӳрӗ сыпӑкра, сӑмахра, предложенире вулама хӑнӑхтарасси.

Хытӑ уҫӑ тата хытӑ хупӑ сасӑсем. Аа, Уу, Аӑ, Нн, Лл, Мм, Тт, Пп, Шш, Рр, Ыы, Вв, Хх сас паллисем. Вӗсене ҫырасси, хытӑ сыпӑкра, сӑмахра вуласси. Тунтер тата турӗ сыпӑксене вулас вӑрттӑнлӑх.

Ҫемҫе уҫӑ тата хупӑ сасӑсем. Ии, Ее [э], Ӗӗ, Сс, Кк, Уу, Ҫҫ, Чч сас паллисем, вӗсене ҫырасси. Позициллӗ вулав. Хытӑ, ҫемҫе сыпӑксем, сӑмахсем. Хупӑ сасса палӑртакан сас паллин пӗлтерӗшӗ вӑл мӗнле сыпӑкра тӑнинчен килни. Хытӑлӑх/ҫемҫелӗх енчен мӑшӑрлӑ сыпӑксене, сӑмахсене танлаштарса вуласси, сас паллисенчен пухасси, пичетлесси.

Ҫемҫелӗх палли (ь). Хутӑш сыпӑксем, сӑмахсем. Ҫемҫе хупӑ сасӑсене палӑртмалли мелсене сӑнасси.

Тӑван чӗлхери [й] сасӑ, ӑна уйӑрасси, палӑртасси. Йй сас паллисем. Юю, Яя, Аӑ сас паллисем сыпӑка та, пӗр сасса та пӗлтерни.

Вырӑс чӗлхинчен кӗнӗ сӑмахсенче тӗл пулакан сасӑсем, вӗсене уйӑрасси, тӗрӗс каласси. Оо, Аӑ, Бб, Г г, Дд, Зз, Жж, Фф, Цц, Щщ сас паллисем, уйӑракан паллӑсем (ь, ъ).

Сӑмахсене тӑстарса, сыпӑксене сыпӑнтарса вулама вӗрентесси.

Сасӑ тишкерӗвӗ тунӑ сӑмахсене хатӗр сас паллисемпе сыпӑк- сенчен пухасси, класс хӑми ҫине пичетлесси, вуласси, евӗрлесе ҫырасси.

Уйрӑм сӑмахсене, ансат предложенисене тата пысӑках мар текстсене тӗрӗс, ӑнланса, пӗр тикӗс (йывӑр сӑмахсене сыпӑкӑн пайласа), тӗрӗс пусӑмласа вуласси, вуланине ӑнланасси, ыйтусене хуравласси. Вулав хӑвӑртлӑхӗ - минутра 12-15 сӑмах.

Вуланӑ чухне предложенисем тата предложенири пӗр йышши членсем хушшинче чарӑну тӑвасси. Предложение, вӗҫӗнчи чарӑну паллине кура, тивӗҫлӗ интонаципе вуласси.

Ал ҫырӑвӗнчен, пичетленӗ текстран сӑмахсем, предложенисем (малтан - вӗсене сасӑ тата сас палли тишкерӗвӗ тунӑ хыҫҫӑн, кайран - харпӑр хӑй тӗллӗн) ҫырса илесси. Ҫырнине кӗнеке е класс хӑми ҫинчи текстпа танлаштарса, сыпӑкӑн-сыпӑкӑн вуласа тӗрӗслесси.

Ансат сӑмахсене, 2-3 сӑмахран тӑракан предложенисене каланӑ тӑрӑх ҫырасси.

Предложени пуҫламӑшӗнчи сӑмаха, ҫын ячӗпе хушаматне пысӑкран пуҫласа ҫырасси. Предложени вӗҫне чарӑну палли лар- тасси.

Ҫыру гигиенин правилисене пӗлесси.

## Пуплеве аталантарасси

Пуплевӗн сасӑ культури. Харпӑр хӑйӗн тата урӑх ҫыннӑн пуплевне тимлеме, итленине асӑмлама хӑнӑхтарасси. Калаҫу хӑнӑхӑвӗсене лайӑхлатасси: васкамасӑр, ирӗккӗн (тытӑнчӑксӑр, пӳлӗнсе тӑмасӑр), вӑтам хӑвӑртлӑхпа, сасӑ хӑпартмасӑр, уҫӑмлӑн калаҫма, калаҫнӑ май тӗрӗс сывлӑш ҫавӑрма, интонаціе кирлӗ пек улӑштарма вӗрентесси.

Пуплеври сасӑсене илтес, калас пултарулӑха лайӑхлатасси: тӑван чӗлхери тӗп сасӑсене уйӑрма, вӗсене уйрӑмшарӑн тата пуплевре тӗрӗс каламалли (орфоэпи) виҫесене пӑхӑнса калама хӑнӑхтарасси.

Пуплеври сасӑсене тӗрӗс илтме, сӑмахсене, вӗсен майлашӑвӗ- семпе предложенисене ҫӑмӑллӑн ӑнкарма, шухӑша хӑвӑрт ӑнланма хӑнӑхтарасси. Уйрӑм ачасен пуплев кӑлтӑкӗсене юсасси.

Сӑмах. Вӗренекенсем усӑ куракан сӑмах йышне ӳстересси. Япаласемпе пулӑмсен ячӗсене, вӗсен паллине, ӗҫне пӗлтерекен сӑмахсене литература чӗлхинчи пек калама вӗрентесси.

Япаласене вӗсен тӗп паллисем тӑрӑх ушкӑнлама, пӗр-пӗринчен уйӑрса илме, япала ушкӑнне пӗр сӑмахпа пӗтӗмлетме (ят пама) хӑнӑхтарасси.

Сӑмах пӗлтерӗшне тӗплӗнрех ӑнланасси. Сӑмахсен пулӑв ҫыхӑнӑвӗсене асӑрхаса ӑнкарасси.

Шухӑша тӗрӗс уҫса пама кирлӗ сӑмаха хӑвӑрт тупма, ӑна ытти сӑмахсемпе тӗрӗс ҫыхӑнтарма, сӑмахсен грамматика формисемпе вырӑнлӑ усӑ курма, пӗр шухӑша тӗрлӗ майпа палӑртма вӗрентесси.

Ансат тӗслӗхсемпе усӑ курса сӑмах нумай пӗлтерӗшлӗ пулма пултарнипе, омонимсемпе тата синонимсемпе (терминӗсене асӑнмасӑр) паллаштарасси.

Вырӑнти калаҫупа литература чӗлхин уйрӑмлӑхӗсене уяма хистесси.

Сӑмахсен грамматика формисемпе усӑ курасси. Литература чӗлхинче йышӑннӑ грамматика формисене ӑнланма, вӗсемпе тӗрӗс усӑ курма вӗрентесси. Ҫав шутра: япала ячӗсен, местоименисен падеж тата хисеп формисем, глаголӑн ытларах тӗл пулакан (хальхи, пӗрре иртнӗ, пулас) вӑхӑт формисем, вӗсен хирӗҫлев, пултараслӑх/ пултараймаслӑх аспекчӗсем (терминсене асӑнмасӑр).

Сӑмах майлашӑвӗ. Япалан камӑнлӑхне палӑртасси. Тӑванлӑх терминӗсен сӑпат формисем. «Сӑпат ылмашӗ е тулли пӗлтерӗшлӗ япала ячӗ + пулӑшу пӗлтерӗшлӗ япала ячӗ» калӑплӑ сӑмах майлашӑвӗсен тӑтӑшлӑ укӗм формисемпе ***(манӑн патӑмра, санӑн па- тӑнта*** т.ыт.те) пуплевре усӑ

курасси.

Предложени. Тытăмĕпе (хутсăр, хутлă) тата калас тĕллевне кура (калуллă, ыйтуллă, хиствевлĕ) тĕрлĕ предложени калăпласси. Пуçланă предложенисене вĕçлеме, ансăррисене анлăлатма пĕлесси. Пĕр шухăшах тĕрлĕ предложенипе е вĕсен çыххипе палăртасси. Предложенири сăмахсен йĕркине сăнама, вĕсене тĕрĕс çыхăнтарма хăнăхтарасси.

Çыхăнуллă пуплев. Пуплев хăнăхăвĕсене малалла аталантарасси: тимлесе итлеме, асăмлама, çыхăнуллă каласа пама, вĕрентекен ыйтăвĕсене тĕрĕс, уçăмлăн хуравлама, пуплевре предложении тĕрлĕ тĕсĕпе усă курма хăнăхтарасси. Итленĕ е вуланă калавсем, юмахсем тăрăх хăйсен шухăшне каласа пама вĕрентесси.

Тăван литература чĕлхине ăнланма, унăн фонетика системипе, сăмах пуянлăхĕпе, морфологи тата синтаксис мелĕсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма, курни-илтни çинчен çыхăнуллă каласа пама вĕрентесси. Юлташĕсен хуравĕсене, каласа панине ырă кăмăлпа итлеме-тимлеме хăнăхтарасси.

Калавсемпе юмахсем, диалогсем, сăвăсем итлесси-тăнласси, асăмласси (учитель вуласа е каласа панине, магнитофон ленти çине çырса илнине, ача-пăча валли хатĕрленĕ теле- тата радиокăларăмсене).

Пысăках мар юмахсемпе калавсене аса илесси, вĕсене уйрăм пайсене пăтраштармасăр, сиктерсе хăвармасăр каласа парасси (хăйсем тĕллĕн е вĕрентуçĕн ыйтăвĕсем тăрăх).

Вуланă предложенисем, текстсем тăрăх ыйтсан хуравлама. текста, унăн уйрăм пайĕсене ят пама пĕлесси.

Уйрăм темăпа çыхăннă темиçе укерчĕк тăрăх предложенисем, çыхăнуллă пĕчĕк калавсем тăвасси.

Пуçланă калава вĕçлесси, вĕçне илтнипе калавăн пуçламăшне шутласа тупасси. Пулни-иртни çинчен вуланипе пĕр евĕрлĕрех каласа парасси.

Çут çанталăкри улшăнусем çинчен, экскурсире, библиотекăра, ытти обществăлла вырăнта курни-илтни çинчен çыхăнуллă калама хăнăхтарасси.

***Харкамлăх результачĕсем:***

- ачасем шкул ачи яваплăхĕсемпе малалла паллашса, вĕсене пурнăçлама хăнăхса пыни;
- аслисем ертсе пынипе ушкăнра ĕçлеме вĕренсе пыни;
- харпăр хăй хăтланăвĕсене сăнама-асăрхама, вĕсемшĕн яваплă пулма хăнăхса пыни;
- харпăр хăй сывлăхне сыхлама, çирĕплетме вĕренсе пыни;
- ачасен ăслав тата хайлав пултарулăхĕ амаланни;
- тантăшĕсен хуравĕсене, каласа панисене ырă кăмăлпа итлеме- тимлеме хăнăхса пыни.

***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:***

- ачасем вĕренӳ ĕç-хĕлне хăнăхса, вĕренӳ задачисене ăнланма вĕренсе пыни;
- тишкерӳре схемăсемпе, ятарлă паллăсемпе, хатĕрсемпе усă курма вĕренни;
- тимлесе итлеме, ăнланма, ыйтусене уçăмлăн хуравлама, шухăша тĕрлĕрен палăртма, пуплевре предложении тĕрлĕ тĕсĕпе усă курма хăнăхса пыни.

***Предметăн пайрамлă результачĕсем:***

- чăваш чĕлхинчи тĕп сасăсемпе, вĕсен сас паллийĕсемпе паллашни, сыпăкăн сыпăнтарса вулама вĕренни;
- сас паллисене тĕрĕс çырма, çыхăнтарма, ал çырăвлĕ, пичетлĕ сăмахсене, предложенисене, ансат текстсене çырса илме, каланă тăрăх çырма вĕренни;
- çыру тата вулав правилисемпе паллашни;
- вулав пахалăхĕсем (тĕрĕслĕх, ăнланулăх, палăртулăх, такăн- масăр вулани) аталанса пыни;
- пуплев хăнăхăвĕсем аталанса пыни.

## САС ПАЛЛИСЕМ ВĔРЕННĔ ХЫÇÇĂНХИ ТАПХĂР

Ачасем урокра мĕн вуламаллине палăртасси вĕрентӳпе аталан- тару, сапăрлăх тĕллевĕсене пурнăçлассипе, вĕсен тĕнче курăмне, тĕнче йышăнăвне йĕркелессипе çыхăннă.

Вулав карти: вăхăт, кунпа çĕр улшăнăвĕ, çулталăк вăхăчĕсем, Тăван çĕр-шыв, тăван республика, тăван ял, Тăван çĕр-шывăн чыслă сумлă çыннисем, ача тата унăн тусĕсем, çут çанталăк, çут çанталăкри пулăмсем, чăваш халăх сăмăхлăхĕ, тĕрлĕ халăх юмахĕсем, И.Я.Яковлев, К.В.Иванов, Н.И.Шелепи хайлавĕсем.

Пăхмасăр калама вĕрентесси: вĕреннĕ 4-5 сăвва пăхмасăр каласси.

Вулав хăнăхăвĕсем. Вĕрентуçĕ тата ытти ачасем каланине (вуланине) тимлĕн итлес-тăнлас, ăнланса асăмлас хăнăхусене лайăхлатасси. Пысăк мар текста тĕрĕс, ăнланса, пĕр тикĕс, сыпăкăн тăсса вуласси. Вулав хăвăртлăхĕ (палламан текста вуласси) - пĕр минутра 15-20 сăмах. Предложени

вĕçĕнче, пĕр йышши членсем хушшинче чарăну тăвасси.

Диалоглă текстсене сасса кирлĕ пек улăштарса вуласси. Вулавăн тĕрлĕ тĕсĕсене (саспа, çурма саспа, шăппăн, пăшăлтатса) вĕренсе пырасси.

Текстпа ĕçлесси. Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси. Вуланă текст тăрăх ыйтусене хуравласси; вуланă текстăн шалăшне (со- держанине) укерчĕксем тăрăх аса илесси; ятсăр текста ят парасси, текстăн ячĕ мĕншĕн çаплине ăнкарасси (вĕрентуçĕ пулăшнипе). Вуланине пĕтĕмĕшле хак парасси. Укерчĕксем тăрăх çыхăнуллă калав йĕркелесси (çырмасăр).

## Çырасси тата пуплеве аталантарасси

Маларах вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси. Сăмаха сыпăкласси, пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси.

Çырас ăсталăха лайăхлатасси. Сас паллисен ĕлкине тĕрĕс тăвас, вĕсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарас хăнăхăва çирĕплетесси. Сас паллисене, сыпăксене, сăмахсене тата кĕске предложенисене пĕр хăвăртлăхпа (харăс, шутласа) çырасси. Çыру гигиенине çирĕп уяма хăнăхтарасси.

Сăмах мĕнле сасăсенчен тăнине, вĕсене çырура хăш сас паллисемпе палăртмаллине чухлама, сиктерсе хăварнă сас паллисене тавçăрма, пăтраштарнă сыпăксенчен сăмахсем, сăмахсенчен предложенисем йĕркелесе çырма вĕрентесси.

Пысăках мар текста кĕнеке е класс хăми çинчен пăхса çырма, çырнине тĕрĕслеме хăнăхтарасси.

Предложенисене, пысăках мар (2-3 кĕске предложенирен тăракан) текста итлесе е вуласа çырасси.

## Итлевпе калу хăнăхăвĕсене малалла аталантарасси

Пĕр-пĕр темăпа (тĕслĕхрен, ашшĕ-амăшĕ, шкул, ачасен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен), укерчĕке сăнаса, укерчĕксен серийĕсем тăрăх, пурнăçра курни-илтнине аса илсе вĕрентекен ыйтăвĕсемпе кăтартăвĕсем çине тĕревленсе пысăках мар калавсем тутарасси.

Вуланине е итленине аса илсе, вĕрентекен пулăшса пынипе ыйтусене хуравласси, çыхăнуллăн каласа парасси.

Пĕтĕмĕшле илсен, букварь хыççăнхи тапхăр вĕçне çакăн пек результатсем кĕтме пулать:

***Харкамлăх результачĕсем:***

- пуплев этикечĕн ансат ăслайĕсене харпăрлани;
- хутшăну пуплев ăслайĕсене (калаçу пуçлама, калаçăва тытса пыма, вĕçлеме) мăшăршарăн тата ушкăнпа калаçăва хутшăнма, пит- куç, алă, кĕлетке хусканăвĕсене тĕрĕс усă курма вĕренсе пыни;
- Тăван çĕр-шыв, тăван халăх, тăван чĕлхе ăнлавсене уçăмлани, хăйсем хăш халăх çынни пулнине ăнланса пыни; тăван халăх ис- торине, йăли-йĕркине тарăнрах пĕлес туйăм вăранни;
- тăван тавралăха, çут çанталăка сăнама хăнăхни, ăна упрас, унпа киленес, хăйсем те ун тĕпренчĕкĕ пулнине ăнланас туйăм çурални;
- япаласемпе пулăмсене, çынсем тата харпăр хăй хăтланăвĕсене сăнама, хак пама вĕренсе пыни.

***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:***

- итлев хăнăхăвĕсем çивĕчленни, тĕллевлĕ итлеме, илтнине хак пама, ас туса асăмлама вĕренсе пыни;
- тĕрлĕ жанрлă хайлавсене лартнă задачăсене кура ăнланса вулама вĕренсе пыни;
- уйлас, сăлтавлас, пĕтĕмлетес ăслайсене харпăрлама пуçлани;
- харпăр хăй шухăшĕсене çыхăнуллă палăртма, сăлтавласа çи- рĕплетме вĕренсе пыни;
- ачасен ăслас, хайлас пултарулăхĕ амаланни.

***Предметăн пайрамлă результачĕсем:***

- вулав ăслайĕ çирĕпленни, вулав пахалăхĕсем лайăхланни, çыхăнулăхĕ тарăнланни;
- вулав мелĕсене, тĕсĕсене вĕренсе пыни;
- текстпа ĕçлеме, вĕсене тишкерме вĕренни;
- каланă тăрăх çырас пултарулăхĕ амаланни;
- вулани, ÿкерчĕк тăрăх ыйтусене çырса хуравлама вĕренсе пыни;
- курни-илтни, ÿкерчĕк тăрăх, вуланă хайлавсен содержанине асăмласа каласа пама вĕренсе пыни;
- ăславлă каласа пама вĕренсе пыни.

## Литература вулавĕ. Класс тулашĕнчи вулав

Пĕрремĕш класăн 1-мĕш çур çулĕнче ачасен вулав хăнăхăвĕсем йĕркеленсе çитеймен пирки литература итлевĕсем пулаççĕ. Литература итлевĕн тĕп тĕллевĕсем тесе çаксене палăртатпăр:

- ачасене литература хайлавĕсемпе кăсăклантарса ярасси, илемлĕ хайлавсене итлесе ăнланма, ăса хывма вĕрентсе пырасси;

- ачасенче ырăпа усала, хурапа шурра туяс туйăма, илем сисĕмне амалантарса ярасси, тĕнче курăмне анлăлатасси;

- ачасен ăнлав пултарулăхне амалантарасси.

Вĕренту задачисемпе пулас результачĕсене, йĕркелеме палăртнă компетенцисене шута илсе ĕçе 4 тапхăра пайлама пулать.

1- мĕш тапхăр. Илемлĕ хайлав çинчен пĕтĕмĕшле ăнланасси. Проза тата поэзи хайлавĕсем. Вĕсене итлеме-тăнлама, йышăнма вĕренсе пырасси.

Тапхăр вĕçне çак результатсене кĕтме пулать:

***Харкамлăх результачĕсем:***

- ачасем вĕрену задачисене ăнланса пыма пуçлани;
- итлесе ăнланас (аудировани) хăнăхусем аталанса пыни;
- кĕнекепе вĕрену хатĕрĕ пек паллашни: кĕнекен вĕренури вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ, тытăмĕпе шалашĕ, ятарлă палăртусем т.ыт.те.

***Предметсен пĕрлĕхлĕрезультачĕсем:***

- ачасем хăйсен пурнăç йĕрки улшăннине ăнланни, «шкул ачи» ăнлава уçăмлани; шкул ачин яваплăхĕсемпе тата тивĕçĕсемпе паллашса пыни;
- шкул йĕркисемпе паллашни, вĕсене ăнланма пуçлани, ăса хывса куллен пурнăçласа пырас йеккийĕ амаланни;
- ачасем харкам туйăмĕсене сăнама, палăртма вĕренсе пыни.

***Предметăн пайрамлă результачĕсем:***

- çĕнĕ предметпа - литература вулавĕпе, предмет тĕллевĕсемпе, задачисемпе паллашни;
- «хайлав» тата «илемлĕ хайлав» ăнлавсене уçăмлани; илемлĕ хайлавсене итлесе йышăнма, ăнланма пуçлани;
- «автор» ăнлава уçăмлани.

2- мĕш тапхăр. Халăх сăмахлăхĕ. Вак жанрсем. Юмахсем. Халăх сăмахлăхĕн хайлавĕсем сăмах вĕççĕн çуренине, вĕсен авторĕ çуккине ăнланасси. Вак жанрсемпе паллашасси: вĕсен тĕслĕхĕсене итлесси. Тупмалли юмахсемпе пулмасла халапсем хайласси.

Тапхăр вĕçне çак результатсене кĕтме пулать:

***Харкамлăх результачĕсем:***

- тăван халăх культури, сăмахлăхĕ мĕн тери пуян пулнине ăнкарма пуçлани, ачасенче пархатарлăхпа мăнаçлăх туйăмĕ вăранма пуçлани;
- тăван халăх сăмахлăхне кăмăллăн йышăнни, унăн илемĕпе киленес туйăм çурални.

***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:***

- тĕрлĕ жанрлă текстсене йышăнма, танлаштарса сăнама вĕренсе пыни;
- ачасен танлаштару, тишкеру тата пĕтĕмлету хăнăхăвĕсем аталанса пыни;
- япаласемпе пулăмсене вĕсен тĕс (вид) паллийĕсене кура ушкăнлама вĕренсе пыни.

***Предметăн пайрамлă результачĕсем:***

- илемлĕ хайлавсене йышăнма, итлеме-ăнланма малалла хăнăхса пыни;
- «халăх сăмахлăхĕ», «ача-пăча сăмахлăхĕ» ăнлавсене уçăмлани;
- чĕну-йыхрав юррисемпе паллашни; вĕсене мĕнле тĕллевпе каланине палăртма, мĕнле йĕркеленине сăнама пултарни;
- шутлав сăввисемпе паллашни, вĕсем тахçан авал пулса кайнине ăнланни;
- тупмалли юмахсемпе паллашни, вĕсен хăй евĕрлĕхне, тытăмне сăнама пĕлни;
- илемлĕ хайлав мелĕсемпе (танлаштару, сăпатлантару) паллашни, вĕсене тупмалли юмахсенче сăнама пĕлни; хăйсем тупмалли юмахсем хайланă чухне çак мелсемпе усă курма вĕренсе пыни;
- «юмах» жанрăн хăй евĕрлĕхне ăнланма, юмах логикипе сюжетне сăнама пуçлани. Юмах тытăмĕн хăш-пĕр вăрттăнлăхĕсене асăрхама тытăнни.

3- мĕш тапхăр. Литература хайлавĕ. Унăн ячĕ. Шутлĕ хайлавсем. Вĕсене калас уйрăмлăхсем (интонаци, сасă вăйĕпе çуллĕшĕ, пуплев хăвăртлăхĕ, пит-куçпа кулепе хусканăвĕсем). Шуте ăнланма вĕренсе пырасси.

Тапхăр вĕçне çак результатсене кĕтме пулать:

***Харкамлăх результачĕсем:***

- чăваш çырулăхĕн пуянлăхне ăнланса ăна хисеплес, унпа киленес туйăмсем чĕрĕлни;
- илемлĕ хайлав çыравçă пуçĕнче ĕмĕт шайĕнче шăранса калăпланнă, шухăшласа кăларнă япала

иккенне ăнланса пыни;

- ачасен гражданлăхпа патриотизм тата хутшăну культурийĕ аталанма пуçлани.

***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:***

- ачасен кăмăл-сипет, ăс-хакăл тата туйăм опычĕ аталанса, пуянланса пыни;
- тишкеру, пĕтĕмлету хăнăхăвĕсем малалла аталанни;
- ачасен ăнлав пултарулăхĕ аталанса пыни;
- харпăр хăй курăмне йĕркелесе калама, теприсен курăмне итлеме-тăнлама, ăнланма вĕренсе пыни;
- тĕрлĕ жанрлă илемлĕ литература хайлавĕсене итлесе ăнланма, ăса хывма, асăмлама хăнăхса пыни.

***Предметăн пайрамлă результачĕсем:***

- «илемлĕ литература», «хайлав», «автор» ăнлавсене уçăмлани;
- «калав», «сăвă» ăнлавсене ăса хуни;
- сăвăласа çырнă хайлавсен тулашĕ; вĕсен хăй евĕрлĕхне сăнаса курма, «рифма», «ритм» ăнлавсене уçăмлама пултарни;
- сăвăри йĕрке вĕçĕсем сасă тĕлĕшĕнчен пĕр пек янăрани çеç çителĕксĕр, шухăш уçăмлăхĕ те пулмаллине ăнланни;
- калава ансаттăн тишкерме вĕренме пуçлани.

4-мĕш тапхăр. Литература жанрĕсем (калав тата сăвă), вĕсене уйăрма, вĕсен уйрăмлăхĕсене ăнкарма, тĕслĕхĕсене итлеме-тăнлама, йышăнма вĕренсе пырасси.

Тапхăр вĕçне çак результатсене кĕтме пулать:

***Харкамлăх результачĕсем:***

- хутшăну этикечĕн ансат йĕркисемпе паллашни; хутшăнупа çыхăннă хăш-пĕр ăнлавсене уçăмлани;
- шӳте ăнланма вĕренсе пыни; шӳт темле кăткăс ыйтăва та çăмăлраххăн татса пама пулăшнине ăнкарни.

***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:***

- чĕлхери ансат пулăмсене тишкерме вĕренсе пыни, терминсене пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн ăса хывма хăнăхса пыни;
- текстпа ĕçлес хăнăху аталанни;
- ачасем хайлав-ăслав ĕçне явăçса пыни.

***Предметăн пайрамлă результачĕсем:***

- сăвăласа çырнă хайлавсене туйма-ăнланма (восприятие) малалла вĕренни;
- автор сăвăсенче тĕрлĕ кăмăл-туйăма палăртнине ăнланма пуçлани;
- калав мĕн çинчен пулнине ăнланма, калав темине уçăмлама вĕренсе пыни;
- калав теми унта мĕн çинчен каланипе çыхăнса тăнине ăнланни;
- илемлĕ хайлавсенчи шӳте ăнланма вĕренсе пыни.

2-мĕш çур çулта ачасем пуçламăш вулав хăнăхăвĕсем туянса çитереççĕ, вĕсен итлев хăнăхăвĕсем калăпланнă теме пулать.

Литература вулавĕ темиçе тĕллеве пĕрлĕхлĕн пурнăçа кĕртме май панине (вулама, текстпа ĕçлеме тата литература хайлавне ăнланма, тишкерме вĕрентесси; кĕнекене юратма, унпа ĕçлеме, харпăр хăй тĕллĕн вулама хăнăхтарасси) шута илсе уроксен пайрам тата харкам тĕллевĕсем анлăланаççĕ. Çапах та вĕсем пĕрремĕш çур çултисенчен пачах, принциплă уйрăлса тăмаççĕ. Вĕсем çинче никĕсленсе вĕсен анлăрах та тарăнрах тăсăмĕ пулаççĕ.

Иккĕмĕш çур çулти уроксене, вĕсен тĕллевĕсемпе задачисене, йĕркелемелли ăслай-ăнланусене (компетенцисене) шута илсе, тĕпрен илсен 2 тапхăра уйăрма пулать.

1- мĕш тапхăр. Халăх сăмахлăхĕ.

Иккĕмĕш çур çулта ачасен халăх сăмахлăхне вĕренесси самай анлăрах пулмалла; жанр тĕлĕшĕнчен те, пĕлӳ-ăслай тĕлĕшĕнчен те.

Тапхăр вĕçне çак результатсене кĕтме пулать:

***Харкамлăх результачĕсем:***

- тăван халăх историйĕпе тата культурипе кăсăкланас туйăм вăранни;
- кашни халăхăн хăйĕн сăмахлăхĕ, юрри-сăвви, юмах-халапĕ пулнине, анчах вĕсен пурин те пĕрешкеллĕхĕпе уйрăмлăхĕсем те сахал мар пулнине ăнланма, вĕсен илемне туйса илме тăрăшни;
- ачасенче хаваслăх туйăмĕ аталанни, вĕсем сăвă-юрăпа кулленхи пурнăçра усă курма хавхаланни.

***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:***

- ачасен вулав хăнăхăвĕсем аталанни; вуланă текст шалашне ăса хывма, ыйтусене хуравлама, хайлав темине палăртма, вуланине пĕтĕмĕшле хак пама вĕренсе пыни;
- вулавăн тĕрлĕ тĕсĕсене алла илсе пыни.

***Предметăн пайрамлă результачĕсем*** (ку çур çулта вĕсем пĕр енчен вулав техника хăнăхăвĕсемпе ачасен çыхăнуллă пуплевне аталантарассипе тата текстпа ĕçлеме вĕрентессипе, тепĕр енчен илемлĕ литературăпа паллаштарассипе, илемлĕ хайлавсене вулама- ăнланма, тишкерме вĕрентессипе çыхăннă):

- чĕнӳ-йыхрав юрри-сăвви, хăвăрткаларăш, тупмалли юмах çинчен пĕлни, вĕсене итлесе киленес кăмăл çирĕпленни, хăйсем те хайлама-ăслама хавхаланни;
- çыравçăсем те халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем евĕр хайлавсем ăсланине курни;
- вăйă юрри-сăввисемпе, пулмасла тата вĕçсĕр такмаксемпе паллашни, вĕсем мĕнле йĕркеленнине, кĕвви-çеммине сăнама пĕлни;
- тĕрлĕ халăх юмахĕсемпе паллаштарма пуçлани, «юмах» тата «халап» ăнлавсене уйăрма, вĕсене ăша хума тăрăшни; улăп халапĕсемпе паллашни, вĕсен чăваш халăх историйĕпе культурин- чи пĕлтерĕшне ăнланма хăтланни;
- литература пĕлĕвĕн ансат ăнлавĕсене усăмлама, ăша хума тытăнни.

2- мĕш тапхăр. Литература тĕсĕсем (жанрĕсем) (калав, сăвă, юптару).

Тапхăр вĕçне çак результатсене кĕтме пулать:

***Харкамлăх результачĕсем:***

- илемлĕ хайлавсене вуласа пурнăçра пулса иртекен пулăмсемпе ĕçсене курма, вĕсен сăлтавĕсене чухлама хăнăхни.

***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:***

- тишкеру, танлаштару, пĕрлештеру хăнăхăвĕсем аталанни;
- тĕрлĕ жанрлă текстсене вуласа ăнланма хăнăхни;
- харкам шухăшĕсене йĕркелесе курăмлă палăртма вĕренсе пыни;
- кĕнекепе харкам тĕллĕн ĕçлеме вĕренсе пыни.

***Предметăн пайрамлă результачĕсем:***

- литература жанрĕсем (калав, сăвă, юмах, юптару) çинчен туяннă пĕтĕмĕшле ăнлавсене чухлани тарăнланни;
- тĕрлĕ жанрлă литература хайлавĕсене тишкерес мехел аталанни;
- текстра çырса кăтартнă пулăмсене, вĕсен сăлтавĕсене тишкерме вĕренсе пыни;
- хайлавсене вуланă, тишкернĕ май ансат сăнарлăх хатĕрĕсене (эпитет, сăпатлантару, темиçе хут калани, метафора) курма хăнăхса пыни.

## АЧАСЕНЧЕН I КЛАСРАН ВĔРЕНСЕ ТУХНĂ ТĔЛЕ КĔТЕКЕН РЕЗУЛЬТАТСЕМ

### Вулама-çырма вĕрентесси. Пуплеве аталантарасси

***Харкамлăх результачĕсем:***

- ачасем хăйсем вĕренекен пулнине ăнланни, вĕренекенĕн яваплăхĕсене усăмласа пыни;
- ачасем Тăван çĕр-шыв, тăван халăх, тăван чĕлхе ăнлавсене ăша хывни, хăйсем хăш халăх ывăл-хĕрĕ пулнине ăнланни, вĕсен тăван халăха хисеплес туйăм амаланма пуçлани;
- ачасем таврари пурнăç, этем, çут çанталăк çинчен мĕн пĕлни анлăланма пуçлани, тавра курăмĕ йĕркеленсе пыни;
- харпăр хăйĕн тата тантăшĕсен ĕç-хĕлне сăнас-хаклас ăслай- хăнăхусене алла илсе пыни.

***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:***

- ачасен шухăшлавĕ пур енлĕн аталанса пыни, вĕсем тишкеру, пĕтĕçтеру, пĕтĕмлету ĕçĕсене вĕренсе пыни;
- ачасен пуплевĕ пур енлĕн аталанса, вĕсем пуплев ĕçĕ-хĕлĕсене (итлев, вулав, çыру, калу) вĕренсе пыни;
- кĕнекепе ĕçлеме вĕренсе пыни.

***Предметăн пайрам результачĕсем:***

- тăван чĕлхери тĕп сасăсене, вĕсене палăртмалли сас паллисене, сăмахри сасăсен пахалăхне (усă е хупă), йĕркине, хытă тата çемçе сасăсене сăмахра паллама, çырура палăртма пĕлни;
- сăмахсене, предложенисене, пысăк мар тĕрлĕ жанрлă текстсене вуласа ăнланма пултарни;
- пур сасă пуххи сăмах, сăмах пуххи предложени пулайманнине ăнланни;
- сас паллисене (пĕчĕккисене тата пысăккисене), вĕсен çыхă- нăвĕсене, сăмахсене,

предложенисене тӗрӗс еврӗлесе ҫырса илме, тӗрӗслеме вӗренни;

- уйрӑм сӑмахсене, 3-4 сӑмахран тӑракан, тытӑмӗпе ансат предложенисене илтнӗ тӑрӑх ҫырма пултарни;
- чӗлхе пӗлӗвӗн хӑш-пӗр ансат ӑнлавӗсемпе терминӗсене (уҫӑ е хупӑ сасӑ, сас палли, сыпӑк, сӑмах, предложени, текст) усӑмлани.

Литература вулавӗ. Класс тулашӗнчи вулав

Пӗрремӗш класра литература вулавне вӗрентнӗ май ҫак результатсене планлама пулать.

***Харкамлӑх результачӗсем:***

- вӗренекенсен социаллӑ тата кӑмӑл-сипет опычӗ пуянланни;
- ачасем ҫитӗннӗ май этемлӗхӗн литература пуянлӑхне ӑнланма, хисеплеме, унпа киленме вӗренсе пыни;
- вулав хатӗрӗсем урлӑ ачасен чунӗнче гражданлӑхпа патриотлӑх, ҫынлӑх, тивӗҫлӗхпе яваплӑх туйӑмӗсем аталанса пыма пуҫлани, пурнӑҫра лайӑххипе япӑххине, ыррипе усаллине чухлама ӑнтӑлни.

***Предметсен пӗрлӗхлӗ результачӗсем:***

- вӗренекенсем ӑс-тӑн тӗлӗшӗнчен аталанса пыни;
- пуплев ӗҫ-хӗлӗн пур тӗсӗсем те аталанса пыни; ятарлӑ ӑнлавсемпе терминсен пӗлтерӗшне усӑмласа ӑса хывма хӑнӑхса пыни;
- ачасен ӑслав ӗҫӗпе кӑсӑкланма пуҫлани;
- вӗрену ӑслай-хӑнӑхӑвӗсем йӗркеленме пуҫланни.

***Предметӑн пайрам результачӗсем:***

- ачасен хӑйсен усӗмне тивӗҫтерекен литература хайлавӗсене итлес-вулас кӑмӑлӗ амаланни;
- калӑпӑшӗпе пысӑках мар, ансат сюжетпа интригӑллӑ, ансат жанрлӑ илемлӗ хайлавсене тӑнласа е вуласа ӑнланма, туйса илме вӗренсе пыни;
- илемлӗ хайлав ҫинчен пӗтӗмӗшле ӑнланни. Проза тата поэзи хайлавӗсен хӑй еврӗлӗхне туйма вӗренни;
- литература жанрӗсем ҫинчен пӗтӗмӗшле ӑнланӑвӗ калӑпланма пуҫланни;
- илемлӗ хайлавпа ӗҫлемелли пуҫламӑш хӑнӑхусем калӑпланни, хайлавсен содержанине ӑса хывмалли тата асӑмламалли мелсене вӗренсе пыни;
- ача хӑй те хайлав ӗҫне явӑҫма сӗмленни.

## II К Л А С С *(102 сехет)*

ЛИТЕРАТУРА ВУЛАВӖ. КЛАСС ТУЛАШӖНЧИ ВУЛАВ

Литература вулавӗ

Вулав карти. Мӗн-ши вӑл Тӑван ҫӗр-шыв? Савнӑ ҫӗр, Чӑваш ҫӗр-шывӗ. Пирӗн ҫӗр-шыври хуласемпе ялсем. Тӑван республика ҫыннисен ӗҫӗ-хӗлӗ. «Пирӗн ял (хула)» экскурси.

Кӗркунне. Кӗрӗн тӗрлӗ тапхӑрне (пуҫламӑшӗ, ылтӑн кӗркунне, хура кӗркунне), чӗр чунсемпе ӳсен-тӑрансен пурнӑҫӗнчи улшӑнусене сӑнлакан калавсемпе сӑвӑсем. «Кӗрхи сӑнсем» экскурси.

Эпир - туслӑ ачасем. Ачасен пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлӗ, вӗсем туслӑ пулни, пӗр-пӗрне пулӑшни.

Еҫ телей те савӑнӑҫ кӳрет. Ӗҫ ҫинчен, тӗрлӗ професси ҫинчен, ӗҫӗн пурнӑҫри пӗлтерӗшӗ, халӑх пурлӑхӗшӗн тӑрӑшни, ӗҫ ҫынна телей кӳни ҫинчен ҫырнӑ калавсемпе сӑвӑсем.

Хӗлле. Хӗллехи ҫанталӑк. Чӗр чунсемпе ӳсен-тӑрансен хӗллехи пурнӑҫӗ. Ҫӗнӗ ҫула кӗтсе илни. «Хӗл ҫитсен» экскурси.

Чӗр чунсем - пирӗн туссем. Чӗр чунсем ҫинчен ҫырнӑ калавсем, сӑвӑсем, ваттисен сӑмахӗсемпе туптарусем (тупмалли юмахсем). Чӗр чунсене хӳтӗлесси, вӗсене пулӑшасси.

Халӑх сӑмахлӑхӗ. Чӑваш тата ытти халӑхсен юмахӗсем, юррисем, ваттисен сӑмахӗсемпе туптарусем.

Тӑван кил-йышра. Пирӗн несӗлсем. Аннесемпе асаннесем, кукамайсемпе аппасем, вӗсен ӗҫӗ-хӗлӗ. Аннесем ҫинчен ҫырнӑ калавсемпе сӑвӑсем.

Килчӗ ырӑ ҫуркунне. Чӗр чунсемпе ӳсен-тӑрансен пурнӑҫӗнчи улшӑнусем. Пӑр кайни. Ачасен вӑййи-кулли. Аслисен ҫурхи ӗҫӗсем. Космонавтика кунӗ. Космонавтсем ҫинчен.

Ҫу уйӑхне кӗтӗмӗр. Ҫуллахи ҫут ҫанталӑк, уй-хирти тата пахчари ӗҫсем ҫинчен ҫырнӑ калавсемпе сӑвӑсем, тӗрленчӗксем.

Усен-тӑран тӗнчи. Вӑрман пурнӑҫӗ, усен-тӑран ҫинчен ҫырнӑ сӑвӑ-юрӑ, калавсемпе халапсем.

Пăхмасăр калама вĕренмелли сăвăсем: çут çанталăк, тăван ен, тус-тăванлăх, тĕрлĕ чĕр чун çинчен калакан 5-6 сăвă (вĕрентуçĕ сĕннисем тата ачасем хăйсем кăмăлласа суйланисем).

Вулав хăнăхăвĕсем. Тĕрĕс, ăнланса, пĕр тикĕссĕн, сăмахсене вакламасăр (кăткăс тытăмлă сăмахсене - сыпăкласа) вуласси. Вулав хăвăртлăхĕ - минутра 50 сăмахран кая мар (ăшра вуланă чухне сăмах шучĕ 60 таран усмелле). Вуланă чух шухăша пăсмасăр, тĕрĕс чарăнусем туса сывлăш çавăрса ярасси. Хутсăр предложении пур тĕсĕсене те тĕрĕс интонаципе вуласси. Шухăшпа тĕллеве кура текста хăвăрт е хуллен, сасса хăпартса е хăпартмасăр вуласси.

Текстпа ĕçлесси. Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси. Вуланă текст тăрăх ыйтусене хуравласси, каланине текстри предложени- семпе çирĕплетесси. Текста пахаласси, ăна вĕрентуçĕ ыйтăвĕсем е кĕнекери укерчĕклĕ план тăрăх аса илсе каласси.

Вуланă текст тăрăх сăмахлă укерчĕксем тăвасси. Пысăках мар калав шалашне (содержанине) пăтраштармасăр, йĕркипе аса илесси.

Кĕнекери укерчĕксем мĕне сăнланине, вĕсем калавăн хăш пайне кăтартнине палăртасси, çав вырăна текстра тупасси.

Калава темиçе пая уйăрасси, вĕсене ят парасси; вуланă текстăн тĕп шухăшне палăртасси (вĕрентуçĕ пулăшнипе).

Илемлĕх мелĕсене - танлаштарусене, эпитетсене, метафорăсене (терминсене асăнмасăр) - сăнасси.

Çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсене танлаштарасси, ун пек сăмахсене вĕрентуçĕ пулăшнипе тупасси. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тĕрĕс ăнланасси. Вĕрентуçĕ пулăшнипе текстра тĕрлĕ пулăма, çынна, çут çанталăка сăнарлăн кăтартакан сăмахсене тупасси, вĕсемпе сăмахлă укерчĕксем тунă чух усă курасси, тавралăха сăнасси, тантăшсемпе выляни çинчен пĕчĕк калав хайласси.

Юмаха, калава, сăвва пĕр-пĕринчен уйăрса илме пĕлесси.

Сасăллă пуплевĕн (калаçăвăн) пысăк пĕлтерĕшлĕ мелĕсене - хăвăртлăха, янăравлăха, сасă хулăнăш-çинçĕшне, кĕвĕлĕхне кирлĕ пек улăштарма вĕренесси. Сăмахсене тĕрĕс каласси.

Вулав кĕнекипе ĕçлеме хăнăхтарасси. Тупмаллипе паллаштарасси, кирлĕ калав е сăвă ятне шыраса тупма вĕрентесси. Хайлав хыççăнхи ыйтусемпе ĕçсене пурнăçласси (вĕрентуçĕ пулăшнипе)

## КЛАСС ТУЛАШĔНЧИ ВУЛАВ

Вулав материалĕ. Ача-пăча валли кăларнă 8-30 страницăллă кĕнекесем. Ачасем хăйсем тĕллĕн ăшра тата тепĕр хут саспа суйласа вуламалли сăвăсем, юмахсем, калавсем (калăпăшĕ - 5 страница таран).

Вулав тематики. Чăваш çĕр-шывĕ, ачасен пурнăçĕпе ĕçĕсем, чĕр чунсемпе ÿсен-тăран çинчен. Тем те пĕр курса çÿрени. Юмахсем.

Ача-пăча кĕнекипе ĕçлесси. Кĕнекен тĕп пайĕсене, вĕсен ячĕсене (хуплашка, страницăсем, тупмалли) пĕлесси.

Кĕнекене мĕн çинченнине ячĕпе авторĕ, ÿкерчĕкĕсем тăрăх ăнкарасси (I çур çул); мĕн е кам çинчен итленине, вуланине ыйтсан тĕрĕс хуравласси.

4- 5 кĕнекене темине кура ушкăнласа уйăрасси; вулав темине палăртасси, кĕнекене унăн хăйне евĕр паллисем тăрăх суйласа илесси. I çур çулта - итленĕ текста, II çур çулта - харпăр хăй тĕллĕн вуланине аса илсе ыйтусем тăрăх каласа парасси. Тĕрлĕ пулăма, сăнарсен ĕçĕ-хĕлĕпе хăтланкалăшĕсене тĕрĕс хак парасси. Кĕнеке куравĕпе, сĕнÿ плакачĕпе (I çур çул), хуплашкасен картотекипе тата ансат каталог карточкипе (II çур çул) паллаштарасси.

I- II класра тăтăшах курнă ача-пăча кĕнекисен авторĕсене тĕрĕс аса илесси.

Ачасен харпăр хăй тĕллĕн кĕнеке вулас кăмăл туртăмне вăй- латасси; класри вулавçă кĕтесне тирпейлесе тăма хăнăхтарасси, ун çине таянса тĕрлĕрен литература вăййипе паллаштарасси. Вуланă хайлавсен уйрăм пайĕсене куç кĕрет выляса кăтартасси.

## ПУПЛЕВЕ ПУР ЕНЛĔН АТАЛАНТАРНĂ МАЙ ЧĔЛХЕНЕ АНСАТ ТИШКЕРМЕ, ТЕРМИНСЕМПЕ УСĂ КУРМА ВĔРЕНТЕССИ, ĂСЛАВЛĂ (ТВОРЧЕСТВĂЛЛĂ) ÇЫРĂВА ВĔРЕНТЕССИ

I класра мĕн вĕрентнине шута илсе, вулав урокĕсемпе тачă çыхăнтарса ачасен çыхăнуллă калаçас, тăнласа ăнкарас, вулас тата çырас мехелĕсене малалла аталантармалла. Вуламалли, тăнламалли, çыхăнуллă каласа памалли, калаçăва хутшăнмалли, çырмалли хăнăхтарусем çине таянса вĕсемпе çыхăнуллăн чĕлхе тытăмĕн тĕрлĕ сийĕпе (фонетика, лексика, морфологи, синтаксис, стилистика) усă курма пĕлнине лайăхлатмалли хăнăхтарусем куллен йĕркелемелле. Вулаттарнă,

пуплеве тăнлаттарнă, çыхăнуллă пуплев тутарнă, çыртарнă май вĕренекенсене чĕлхен тĕрлĕ енĕсене (аспекчĕсене) ансат тишкерме, чĕлхе ăслăлăхĕн кирлĕрех

терминĕсемпе, янтă пĕлĕвĕсемпе усă курма вĕрентмелле.

Çыхăнуллă пуплев. Пуплевĕн пурнăçри пĕлтерĕшĕ.

Текст. Ана темăпа çыхăнман предложенисен пуххипе танлаштарасси. Текст ячĕ. Текстра мĕн çинчен каланине (текст темине) палăртасси. Текст тытăмĕ, пуçламăшĕ, тĕп пайĕ, вĕçĕ. Абзац. Текста темиçе сыпăка (пая) уйăрасси. Текст пайĕсене ят парасси. Текст планĕ. Текст тĕсĕсем, калав, сăнлав, уйлав.

Укерчĕксемпе ĕçлесси. Укерчĕксем тăрăх ыйтусене хуравласси, предложенисем тăвасси. Вĕсене çырасси.

Изложени çинчен ăнлантарасси. Ыйтусене ушкăнпа хуравланă, йывăр орфограммăсене асăрхаттарнă хыççăн вĕрентусĕ пулăшнипе 30-45 сăмахлă текст тăрăх изложени çырасси.

Ачасен пурнăçĕпе çыхăннă темăсемпе (вăйă выляни, вăрмана экскурсие кайни, кама та пулин пулăшни, шкул çинчен) 4-5 пред- ложенирен тăракан пĕчĕк калав тăвасси.

Пуплев этикечĕ. Сывлăх сунни. Сывлăх суннă чух усă ку- ракан тараватлăх сăмахĕсемпе сăмах майлашăвĕсем. Паллашу сăмахĕсемпе предложенисем. Сăпайлăн тав тума пĕлесси. Сыв пуллашу сăмахĕсем.

Еç хучĕсем. Ансат пĕлтеру хайласси. Юлташ патне çыру çырасси.

Сăмах йышне пуянлатасси, унпа усă курма пĕлнине çирĕплетесси

Тăван-хурăнташа чĕнесси: атте, анне, асанне, асатте, кукаçи, кукамай, пичче, аппа, шăллăм, йăмăк, кукка, мăн акка, инке, мучи, кинемей.

Тумтир тата атă-пушмакпа çыхăннă сăмахсем: пушмак, атă, çăм атă, алса, алсиш, калуш, çуха, кунча, кĕсье, карттус, майка, нуски, пиншак, тутăр, кĕпе, çанă, саппун, чăлха, çĕлĕк;

вăрăм, кĕске, илемлĕ, капăр, хитре, шукăль, ăшă, çăм, пурçăн, сарлака;

хыв, хывса ил, салт, тумеле, çĕтĕл, пĕт, кивел, тумлан, тăхăн.

Кил-çурт таврашĕпе çыхăннă сăмахсем: мунча, хапха, алăк, картиш, карта, çурт, пурт, кĕлет, пусă, çăл, вите, лаç, сарай, çенĕк, пурт ум, вутă, кухня, газ, плита, ванна, душ, туалет, кран, сивкĕч (холодильник), шăнткăч (морозильник), пулĕм, пусма, картлашка, чурече, кăмака, форточка, сакай, урай, мачча, хăлăп, стена, мăрье, юпа, чăлан;

çуллĕ, ăшă, хулăн, çухе, таса, сарлака;

хуп, хупăн, çурăл, шăл, тасат, çу, ту.

Кил-çуртри япала ячĕсем: пичке, витре, чӳлмек, кашăк, вилка, çăра, çăраççи, чаршав, тĕкĕр, йĕп, карта, хуран, турчка, кравать, кашăк, тӳшек, сĕтел, пукан, шăпăр, михĕ, хутаç, çĕçĕ, утиял, куçлăх, минтер, çытар, çитĕ (çитти), çăпала, сак, çатма, шăрпăк, кантăк, хыçлă пукан, турилкке, чашăк, шкап, щётка, стакан.

Килти кайăк-кĕшĕк ячĕсем, вĕсемпе çыхăннă ытти пуплев пайне кĕрекен сăмахсем: хур, кăркка, автан, чăх, кăвакал, кайăк- кĕшĕк, хур-кăвакал;

ырхан, хыткан, начар, мăнтăр, самăр; чиклет, авăт, какала, нартлат.

Килти выльăх-чĕрлĕх ячĕсем, вĕсемпе çыхăннă ытти пуплев пайне кĕрекен сăмахсем: така, вăкăр, тиха, ăйăр, кĕсре, качака, ут, лаша, ĕне, кушак, кролик, сурăх, сысна, йытă, пăру, анчăк, путек, аçа, ама, выльăх, çăвăр; сĕкекен, çара, мăкла, çăмламас, ăратлă, мăйракаллă, пĕтĕ, хĕсĕр;

кӳл (лаша), мĕкĕр, вĕр, сыхла, чăрмала.

Кайăк-кĕшĕк ячĕсем: акăш, ăсан, вĕçен кайăк, кайăк хур е хур кайăк, кăвакарчăн, кăсăя, куккук, курак, пăрчăкан, путене, çăхан, çерçи, тăмана, тăри, тăрна, уйăп, ула такка, хурчка, чакак, чана, чĕкеç, чĕпĕ, шăнкăрч, шăпчăк.

Пулăсемпе шыври чĕр чунсен ячĕсем, вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем: йыт пулли, карас, карп, партас, çăрттан, çĕлен пулă, çырма пулли, çтерлĕк, шапа, шапа вăлчи, ыраш пăтри, пулăçă, вăлта, вăлча, карас кӳлли, пĕве пулли, тăварлă пулă, пулă шӳрпи, вĕтĕ пулă.

Апат-çимĕç ячĕсем, вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем: апат, аш, икерчĕ, йăва, какай, канфет, кĕрпе, кĕсел, компот, кукăль, лапша, макарон, манна, мăйăр, мороженăй, пăтă, печени, пĕремĕк, пыл, сахăр, серте, пултăран, сĕт, чăкăт, çăкăр, çăмарта, çăнăх, çу, тăвар, тăпăрчă, турăх, уйран, улма, хăйма, чей, чуста, шаркку, шушкă, яшка;

вир (тулă, хура тул, сĕлĕ) кĕрпи, килти çăкăр, хура çăкăр, шур çăкăр, çавра çăкăр, çăкăр чĕлли, сăмси, çăкăр магазинĕ, купăста (сĕт) яшки, мăйăр тĕшши, пан улми, калакла (чăмăрла) çăмарта, çăмарта хăпартни, аш (тăпăрчă) кукли, хуран кукли, çăка (чечек) пылĕ, аш апачĕ, çатма икерчи,

тăпăрчă (çĕр улми) икерчи, лапша яшки, какай шӳрпи, кĕрпе яшки, сĕлĕ кĕселĕ, çырла кĕселĕ, шĕвĕ пăтă, улма нимĕрĕ, кĕрпеклĕ (типĕ) печени, катăклă сахăр, сахăр песокĕ, тулă (ыраш, сĕлĕ) çăнăхĕ;

ирхи апат, кăнтăрлахи апат, каçхи апат;

уйран уçла, компот вĕрет, варени пĕçер, пыл юхтар, йуçĕ калать;

йуçĕ, çуллă, çусăр, пылак, тăварлă, тăварсăр, тутлă, йуçек, пыллă, сахăрлă;

çыртăк, касăк, татăк, чĕлĕ; апатлан, апатлану.

Улма-çырла, пахча çимĕç ячĕсем, вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем: купăста, сухан, çĕр улми, кишĕр, хăяр, помидор, йус кăшман, сахăр кăшманĕ, выльăх кăшманĕ, çарăк, кавăн, ыхра, фасоль;

тутлă, йуçĕ, хĕрху, пылак, шултра, пысăк, вак, вĕтĕ, çуллĕ, лутра, чĕрĕ, сĕтеклĕ;

шăвар, çумла, çитĕн, пиç, кас, ларт, ак, пух, пуçтар, пулса çит, тăварла, тат, çитĕнтер;

măкăнь, нимĕç пăрçи, çĕр çырли, хурăн çырли, улмуççи, хăмла, хăмла çырли, хăвел çаврăнăш, хура çырла, хурлăхан, чие, хĕрлĕ хурлăхан, хура хурлăхан;

кăшман çеçки, йăран, кишĕр сĕткенĕ, купăста калчи, купăста пуçĕ, помидор калчи, помидор сĕткенĕ, çĕр улми аври, çĕр улми купала, ыхра шăлĕ, хăмла пахчи, хăмлаçă, хăяр калчи, хĕвел çаврăнăш пуçĕ (çăвĕ).

Иывăç ячĕсем, вĕсемпе çыхăнакан ытти сăмахсем: ăвăс, йăмра, йĕлме, каврăç, палан, пилеш, çăка, çĕмĕрт, çирĕк, çуçе, тирек, хăва, хурăн, хыр, чăрăш, шăлан, шĕшкĕ, юман;

ăвăслăх, йăмралăх, йĕлме йĕлтĕр, палан çырли, паланлăх, хура пилеш, пилеш çупкăмĕ, çăка пылĕ, çăка чечекĕ, çăкалăх, çĕмĕрт çеçки, çирĕклĕх, çуçелĕх, тирек мамăкĕ, тиреклĕх, хăва хулли, хурамалăх, хурăн милĕкĕ, хурăн шывĕ, хырлăх, чăрăшлăх, шăлан çырли, шĕшкĕ мăйăрĕ, шĕшкĕлĕх, юманлăх, юман йĕкелĕ.

Тĕрлĕ ӳсен-тăран ячĕсем, вĕсемпе çыхăнакан ытти сăмахсем: тулă, ыраш, урпа, сĕлĕ, пăрçа, пăри, кукуруза, вир, вĕлтĕрен, пултран, мăян, хупах, хăях, пиçен, армути, куршанак, кăшкар ути, утмăл турат, йыт пырши, чăрăш тăрри;

йĕкел, хыр (юман) йĕкелĕ, кăчкă, хурăн кăчки, кăчкăллă, папак, чечек папакĕ, папкалан, пучах, сапака, хурлăхан сапаки, сĕткен, хурăн сĕткенĕ, çеçке, роза (сирень) çеçки, çеçкене лар, çеçкелен, çулçă, çулçăллă, çырла, çырла шывĕ, çырла пиçнĕ, турат, хунав турат, туратлă, тымар, йывăç тымарĕ, хулă, хăва хулли, хунав, чие хунавĕ, хунав вăрман, хунав яр, хурлăхан хунавĕ, чечек, чечек йăранĕ, чечек çыххи, чечеке лар.

Кăмпа ячĕсем, вĕсемпе çыхăнакан ытти сăмахсем: кăмпа, ăвăс кăмпи, масла кăмпи, çерем кăмпи, тислĕк кăмпи, уплюнкка, ут тути, хурăн кăмпи, шăна кăмпи, юман кăмпи, шурă кăмпа, майра кăмпи;

çимелли кăмпа, наркăмăшлă кăмпа, кăмпаçă, кăмпана çӳре, кăмпа тат, кăмпа яшки.

Чĕлхене ансат тишкересси, терминсемпе усă курасси

Алфавит. Сас паллисен ячĕсем тата йĕрки. Уçă тата хупă сасăсем. Хытă тата çемçе сасăсем.

Пĕр-пĕр сас паллипе пуçланакан сăмахсене словарьте шыраса тупма вĕрентесси. Сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаçтарма хăнăхтарасси (пуçламăш сас палли тăрăх).

Япалана пĕлтерекен сăмахсем. Вĕсене *кам?*тата *мĕн?*ыйтусем тăрăх тупасси.

Япала ĕçне пĕлтерекен сăмахсем. Вĕсене *мĕн тăватъ? мĕн тăвĕ? мĕн турĕ?*ыйтусем тăрăх тупасси.

Япалан тата унăн ĕçĕн паллине пĕлтерекен сăмахсем, вĕсене *мĕнле?*ыйту тăрăх тупасси.

Сăмахсене вĕсен пĕлтерĕшĕсене кура ушкăнласси. Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсем: *хура - шурă, пысăк - пĕчĕк, сарлака - ансăр, пылак - йуçĕ.*Çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсем: *васка - хыпалан, кил*

- *пыр, усал - хаяр, аван - лайăх, илемлĕ - хитре, чипер.*

Лексикăпа тематика ушкăнĕсем: а) тĕс ячĕсем *(хĕрлĕ, сарă, шурă, хура, хăмăр, кăвак*т.ыт.те; *çурен, турă, хăла, ула, сарă-хăла*

- лаша çинчен); ă) çынна хаклакан сăмахсем *(чипер, илемлĕ, тирпейлĕ, тăрăшуллă, ĕçчен, кахал, наян, мăнтăр, начар*т.ыт.те).

Предложени. Пуплеври предложенисене уйăрасси (маларах вĕреннине çирĕплетесси). Предложении тĕп (подлежащипе сказуемăй) тата кĕçĕн членĕсем (ячĕсене асăнмасăр).

Тĕрлĕ калăплă (тытăмлă) предложенисем йĕркелеме хăнăхтарасси. Вĕсене *(кам?мĕн? камăн?мĕнĕн? кама?мĕне? камра?мĕн- ре? камран? мĕнрен? кампа? мĕнпе? камсăр? мĕнсĕр? камшăн? мĕншĕн?)*ыйтури сăмахсемпе анлăлатасси.

Пунктуаци. Предложени вĕçне пăнчă, ыйту тата кăшкăру пал- лисем лартасси.

Орфографи. 1) Хытă уçă сасăллă сыпăк е сăмах вĕçĕнчи [л’], [н], [т’] сасăсене л, н, т сас паллисем

хыççăн çемçелĕх палли (ь) çырса палăртасси: *вылъăх, кукăлъ, супăнъ, мăкăнъ, халъ, ахалъ, мă- кăлъ, шукăлъ; ларатъ, вылятъ, чупатъ, тăрăшатъ.*

2) Уйăракан çемçелĕх палли (ь) çырасси: *мăръе, кĕсъе, тухъя, Марье.*

3) Вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек сас паллипе палăртасси:

ăру-тăванлăх сăмахĕсенче: *атте, анне, асатте, шăллăм, аппа, кукка, мăн акка;*

çулталăк вăхăчĕсен ячĕсенче: *çулла, хĕлле, кĕркунне, çуркунне;*

хальхи вăхăтри нумайлă хисепри 3-мĕш сăпатри глаголсен формисенче: *вулаççĕ, вуламаççĕ, ĕçлеççĕ, ĕçлемеççĕ, выляççĕ, еылямаççĕ.*

4) Сăмаха пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси: *ма-ши-на, вы-ля, япа-ла, пĕ-лĕт-сем.*

5) Çын ячĕпе хушаматне тата ашшĕ ятне, выльăхсемпе чĕр чунсен уйрăм ячĕсене, хула, ял, урам, юхан шыв ячĕсене пысăк сас паллирен пуçласа çырасси: *Иванова Мария Васильевна, Михайлов Иван Викторович, Мăрмăр, Кампур, Улайкка, Анъяр, Хураçка, Канаш, Шупашкар, Шурча, Çавал, Кĕçĕн Çавал, Атăл, Сĕве.*

6)Вырăс чĕлхинчен йышăннă хăш-пĕр сăмахсене вырăс чĕлхинчи пекех çырасси: *Миша, Наташа, Коля, Петя, Таня; машина, трактор, комбайн, завод, фабрика, самолёт, ракета; парта, учитель, директор; колхоз, ферма, сад, дыня, помидор; кухня, стакан, щётка.*

Таса та илемлĕ çырасси

Çыру гигиени хăнăхăвĕсене (тĕрĕс ларма, тетраде хума, ручкăна тытма т.ыт.те пĕлнине) çирĕплетесси.

Пĕчĕк сас паллисене йывăрлăх енчен ушкăнласа (5 ушкăн) çырасси: 1) и, ш, г, п, т, й, н, р, у, у; 2) л, м, ц, щ, ь, ы; 3) а, ă, ю, ф, д, б, я; 4) с, ç, е, ĕ, ă, ч, ъ, в; 5) э, х, ж, к.

Пысăк сас паллисене йывăрлăх енчен ушкăнласа (4 ушкăн) çырасси: 1) Й, И, Ш, Ц, Щ, Ч, Ы, Л, М, А, А; 2) О, С, Ç, Х, Е, Ё, Ĕ, З, Э, Я; 3) Ж, У, У, Н, К, Ю, Р, В, Ф; 4) Г, П, Т, Б, Д.

Таса та илемлĕ, тĕрĕс çырмалли сăмахсем: *алсиш, анне, аппа, асатте, атте, ăмăрт кайăк, библиотека, больница, вылъăх, выр- сарни кун, герой, дежурнăй, ешчĕк, ёлка, журнал, йăмăк, кĕçнерни кун, кĕркунне, кĕсъе, класс, класра, колхоз, конъки, комбайн, комбайнер, кукамай, кукаçи, кукка, лётчик, майка, мунча, пан улми, пичче, ракета, самолёт, çулла, çуркунне, тăвайкки, тетрадъ, трактор, тунти кун, тыр-пул, улмуççи, учителъ, учителъница, ухĕ, физкулътура, хĕлле, чăх-чĕп, шăллăм, шăмат кун, щётка, ытлари кун, эрне кун, юлан ут, юн кун, ялав.*

## АЧАСЕНЧЕН II КЛАСРАН ВĔРЕНСЕ ТУХНĂ ТĔЛЕ КĔТЕКЕН РЕЗУЛЬТАТСЕМ

Пуплеве пур енлĕн аталантарнă май чĕлхене ансат тишкерме, терминсемпе усă курма вĕрентесси

***Харкамлăх результачĕсем:***

- тăван чĕлхене хаклама, хисеплеме хăнăхса пыни;
- кашни халăхăн хăйĕн чĕлхи пулнине, вăл ыттисенчен уйрăлса тăнине ăнланни;
- чĕлхепе кăсăкланма пуçлани, харпăр хăй пуплевне лайăхлатас кăмăл-туйăм амаланни.

***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:***

- пулăмсене тарăнрах ăнланма вĕренсе пыни;
- ăнлавсене уçăмлама, ушкăнлама хăнăхса пыни;
- тишкерӳ-пĕтĕçтерӳ, танлаштару хăнăхăвĕсем çирĕпленсе пыни.

***Предметăн пайрамрезультачĕсем:***

- ачасем алфавитри сас паллисене, вĕсен пĕлтерĕшĕсене, уçă тата хупă сасăсен уйрăмлăхĕсене, сăмахри уçă сасă çине пусăм ӳкни-ӳкменнине, сасăсем хытă тата çемçе пулнине, сăмахсене пĕр йĕркерен теприне мĕнле куçармаллине пĕлни;
- 35-40 сăмахлă текста каллиграфи тĕлĕшĕнчен тĕрĕс те таса, сас паллисене сиктерсе хăвармасăр, пăтраштармасăр пăхса çырма пултарни;
- 25-30 сăмахлă текста итленипе (диктант) çырма вĕренсе пыни;
- сăмаха сыпăклама, пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене тĕрĕс куçарма, çемçе хупă сасăсене çырура тĕрĕс палăртма, вăрăм хупă сасăллă сăмахсене (программăра кăтартнисене) тĕрĕс çырни;
- çын ячĕпе хушаматне, ашшĕ ятне, выльăхсемпе чĕр чунсен уйрăм ячĕсене, хула, ял, урам, юхан шыв ячĕсене пысăк сас паллипе пуçласа çырма пултарни;
- сăмахсен сасă тытăмне тишкерме (вĕсене сыпăклама, уçă тата хупă сасăсене, сасăсемпе сас паллисен йĕркине тата хисепне палăртма) пĕлни;
- япалана, унăн ĕçне, паллине пĕлтерекен сăмахсене ыйтăвĕ тăрăх ушкăнлама пултарни;

- предложении тӗп членӗсене - подлежащипе сказуемăя - тупма пӗлни;
- ыйтусем тăрăх ансат предложени членӗсем хушшинчи çыхăнăва палăртма вӗренни;
- предложение пысăк сас паллирен пуçласа çырма, ун вӗçне, интонаце кура, пăнчă, ыйту е кăшкăру палли лартма пӗлни;
- 30-45 сăмахлă текст тăрăх ыйтусене хуравласа изложени çырма; 2-3 предложениллӗ текст тума пултарни.

Литература вулавӗ. Класс тулашӗнчи вулав

***Харкамлăх результачӗсем:***

- сăмах искусствипе киленме вӗренсе пыни;
- тăван халăх тата куршӗ халăхсен культурине хисеплеме, пуринпе те тусӗмлӗ те çураçуллă пулма хăнăхса пыни;
- илемлӗ хайлавсем вуланă-тишкернӗ май ачасен илем туйăмӗ аталанни, вӗсен илем пахалăхӗсене ăша хуни.

***Предметсен пӗрлӗхлӗ результачӗсем:***

- тӗрлӗ хайлав тишкернӗ май хăйсен тата ыттисен ӗç-хӗлне сăнама, хаклама хăнăхма пуçлани:
- вуласа е итлесе пӗлнӗ информацие аса хывма, асăмлама вӗренсе пыни;
- мăшăршарăн, ушкăнпа пӗрле ӗçлеме - хăйсем хушшинче рольсемпе ӗçсене уйăрма, пӗрлӗхлӗ ӗçӗн харкам пайне пурнăçлама
- вӗренме пуçлани.

***Предметăн пайрам результачӗсем:***

- вулав пахалăхӗсем çирӗпленни, вулав тӗсӗсемпе мелӗсене алла илсе пыни;
- сасăллă пуплевӗн пӗлтерӗшлӗ мелӗсене (хăвăртлăхӗ, янăравлăхӗ, кӗвӗлӗхӗ) кирлӗ пек улăштарма вӗренни;
- текст тишкерӗвне малалла вӗренсе пыни;
- ансат жанрсене (юмах, калав, сăвă) пӗр-пӗринчен уйăрса илме пултарни;
- хăш-пӗр илемлӗх мелӗсене (танлаштару, эпитет, метафора) курма-сăнама тытăнни;
- литература пӗлӗвӗн ансат ăнлавӗсемпе паллашни.

## III КЛАСС *(102 сехет)*

### ЛИТЕРАТУРА ВУЛАВӖ. КЛАСС ТУЛАШӖНЧИ ВУЛАВ

Литература вулавӗ

Вулав карти. Чăваш çӗр-шывӗ. Чăваш ен илемӗ, юхан шывӗсемпе вăрманӗсем. Чăваш çыннисемпе ытти халăхсем хушшинчи туслăх, пӗр-пӗринпе килӗштерсе пурăнни.

Кӗркунне. Кӗрхи çут çанталăк, çынсен ӗçӗ-хӗлӗ. «Кӗрхи çут çанталăк» экскурси.

Тăван тавралăха, çут çанталăка упрани, илем кӳни - Тăван çӗр-шыва сыхланиех. Çынсем тăван тавралăха упрама, илем куме тăрăшнине, çак ӗçе ачасем те хутшăнма пултарнине сăнлакан калавсемпе сăвăсем.

Эпир - сăпайлă ачасем. Ачасен пурнăçӗ, вӗсен туслăхӗ. Ачасем хăйсене сапăр та тирпейлӗ тытма тăрăшнине, аслисене хисепленине, сăпайлă пулнине сăнлакан калавсем, сăвăсем, статьясем.

Асамçă хӗл. Хӗллехи çут çанталăк. Этем ӗçӗ-хӗлӗ. Чӗр чунсен пурнăçӗ. Хӗл илемӗ калавсенче, юмахсенче, унерçӗсен укерчӗкӗсенче сăнланни. «Хӗллехи çут çанталăк» экскурси.

Халăх пултарулăхӗ. Юмахсем, юрăсем, ваттисен сăмахӗсемпе туптарусем (тупмалли юмахсем). Тӗрлӗ халăх юмахӗсем.

Эпир Улăп йăхӗнчен. Улăп халапӗсем тата ытти халăх ха- лапӗсем.

Çурхи хаваслăх. Çут çанталăк чӗрӗлни. Чӗр чунсен пурнăçӗ- пе çынсен ӗçӗсем. Ачасен çурхи вăййисем. «Çурхи çут çанталăк» экскурси.

Чăваш халăхӗн паллă çыравçисем. К.Иванов, Н.Шелепи, Н.Илпек, М.Трубина, В.Харитонов, Н.Ижентей, Х.Уяр, Н.Карай сăввисемпе калавӗсем.

Тăванла халăхсен çыравçисем. М.Джалиль, Г. Тукай, Р.Минатуллин сăввисемпе поэма сыпăкӗсем.

Вырăссен чаплă çыравçисем. А.Пушкин, И.Крылов, Л.Толс- той, Н.Некрасов хайлавӗсем. Вырăссен хальхи ача-пăча литерату- рин тӗслӗхӗсем: Н.Сладков, Н.Соколов-Микитов, Л.Ковалев хайлавӗсем.

Вӗрентуçӗ е вӗренекен суйласа илнӗ 5-6 сăвва пăхмасăр вӗренмелле.

Вулав хăнăхăвӗсем. Тӗрӗс, ăнланса, пӗр тикӗссӗн, сăмахсене вакламасăр, вăтам хăвăртлăхпа

вуласси. Вулав хӑвӑртлӑхӗ минутра 70 сӑмахран кая мар пулмалла (ӑшра вуланӑ чухне сӑмах шучӗ 80 таран ӳсмелле). Шухӑш аталанӑвне кӑтартакан сӑмахсене ансат мелсемпе усӑ курса палӑртасси. Шухӑшне тата тӗллевне кура текста тивӗҫлӗ интонаципе (хӑвӑрт е хуллен, сасса хӑпартса е хӑпартмасӑр, логика пусӑмӗсемпе логика тӑхтавӗсем туса) вуласси. Сасӑпа вуланӑ чухне харкам вулава асӑрхаса пырасси, йӑнӑш вырӑнсене тепӗр хут тӗрӗс вуласа тӳрлетесси. Текстра пӗлтерӗшне уҫӑмлатмалли сӑмахсене харкам тӗллӗнех палӑртасси.

Текстпа ӗҫлесси. Ҫыхӑнуллӑ пуплеве аталантарасси. Вуланӑ текстри ӗҫсем мӗнле аталанса пынине йӗркипе аса илсе каласси (ансат план тӑрӑх). Панӑ ыйтӑва хуравлама текстри кирлӗ вырӑна тупасси. Текстӑн шухӑш тӗлӗшӗнчен вӗҫленнӗ пайӗсене уйӑрасси, вӗрентӳҫӗ пулӑшнипе текст ятне ӑнлантарасси, унӑн тӗп шухӑшне палӑртасси.

Ансат план ӑсласси, план тӑрӑх текст ӑшлӑхне асӑмласа каласа парасси (туллин, кӗскен, суйлавлӑн). Вуланине туллин тата суйлавлӑ каласа панӑ чух сӑмахлӑ ӳкерчӗксем тӑвасси, сӑнарлӑ сӑмахсемпе, сӑмах майлашӑвӗсемпе, синонимсемпе вырӑнлӑ усӑ курасси.

Сӑнарсене, ҫут ҫанталӑка сӑнласа кӑтартнӑ чух усӑ куракан сӑмахсене, вӗсен майлашӑвӗсене текстра тупасси. Сӑмахӑн текстри пӗлтерӗшне ӑнланасси. Сӑнарсене вӗрентӳҫӗ пулӑшнипе хак парасси. Курни-илтни, сӑнани ҫинчен ҫыхӑнуллӑ калав тӑвасси. Каланӑ шухӑша вуласа тухнӑ текстри тӗслӗхпе ҫирӗплетесси. Инсценировкӑсене хутшӑнса роль сӑмахӗсене тивӗҫлӗ интонаципе вуласси.

Илемлӗ литература жанрӗсен хӑш-пӗр уйрӑмлӑхӗсем: юмах (унта тӗлӗнмелле, чӑн пурнӑҫра пулма пултарайман ӗҫсем пулса иртеҫҫӗ), юптару (сӑнарӗсем - тӗрлӗ чӗр чун, йывӑҫ-курӑк; вӗҫӗнче вӗрентсе калани пур), сӑвӑ (йӗркисем хӑйне евӗр виҫеллӗ, йӗрке вӗҫӗсем пӗр пекрех янӑраҫҫӗ).

Вӗренӳ кӗнекине чухласси: кирлӗ хайлава унӑн тупмаллин- чи ячӗ тӑрӑх тупасси; кӗнекене пӗр авторӑн калавӗ е сӑвви тӗлне уҫасси; тема тӗлӗшӗнчен пӗр-пӗрне ҫывӑх хайлавсене асӑрхасси; текст хыҫҫӑнхи ӗҫсене харпӑр хӑй тӗллӗн ӑнланса пурнӑҫласси.

Класс тулашӗнчи вулав

Вулав материалӗ: чӑваш, вырӑс, ытти тӑванла халӑхсен писателӗсем ачасем валли ҫырнӑ 15-20 кӗнеки, «Тантӑш» хаҫатпа «Тетте» журналти материалсем (вӗрентӳҫӗ суйласа илнӗ тӑрӑх).

Вулав тематики: тӑван тавралӑх илемне сӑнлакан, пурнӑҫа юратма, ҫут ҫанталӑка упрама, сапӑр та тараватлӑ пулма вӗрентекен, тӗрлӗ халӑх ывӑлӗ-хӗрӗсен пархатарлӑ ӗҫ-хӗлне сӑнлакан сӑвӑсемпе калавсем, пысӑкрах калӑплӑ хайлав сыпӑкӗсем, юмахсем.

Ача-пӑча кӗнекипе ӗҫлесси (пӗлусем, ӑслайсемпе хӑнӑхусем). Кӗнеке пайӗсене пӗлесси: титул листи, ум сӑмах, тупмалли, вӗҫӗнче калани. Кӗнеке мӗн ҫинченнине унӑн пайӗсем тӑрӑх ӑнкарасси. Класс тулашӗнчи вулав урокӗ валли кирлӗ кӗнекене шыраса тупасси. Класс тулашӗнче I ҫур ҫулта эрнере вӑтамран 10-12, II ҫур ҫул вӗҫӗнче 20-25 страницӑран кая мар вуласси, вуласа пӗлнине вӗрентуҫӗ ыйтӑвӗсем тӑрӑх каласа парасси. Кӗнекен ятне, авторне аса илме пӗлесси. Паллашнӑ писателӗн 2-3 кӗнекине астӑвасси. Сӗннӗ кӗнекесен списокӗпе, тема картотекипе усӑ курасси.

Ҫӗнӗ литература ваййисем выляма вӗрентесси. Вӗсене класс тулашӗнче те выляттарасси.

## ПУПЛЕВЕ ПУР ЕНЛӖН АТАЛАНТАРНӐ МАЙ ЧӖЛХЕНЕ АНСАТ ТИШКЕРМЕ, ЧӖЛХЕ ӐСЛӐЛӐХӖН ТЕРМИНӖСЕМПЕ УСӐ КУРМА ВӖРЕНТЕССИ. ӐСЛАВЛӐ (ТВОРЧЕСТВӐЛЛӐ) ҪЫРӐВА ВӖРЕНТЕССИ

Маларах вӗреннине аса илсе ҫирӗплетесси. Ачасен вулавпа ҫыру хӑнӑхӑвӗсене, ҫыхӑнуллӑ калаҫас, пуплеве тӑнласа ӑнланас мехелӗсене малалла аталантарасси. Пуплевӗн тӗп ӗҫӗ-хӗлӗпе ҫыхӑнуллӑн тата вӗсем ҫине таянса тӑван литература чӗлхин пур сийӗсемпе те усӑ курма пӗлнине лайӑхлатасси, чӗлхене тишкерме, лингвистикӑн ансат пӗлӗвӗсемпе усӑ курма вӗрентесси.

Ҫыхӑнуллӑ пуплев. Текст. Текста вуласа унӑн тӗп шухӑшне палӑртасси. Текст ячӗ темипе, тӗп шухӑшӗпе шайлашса тӑни. Текст пайӗсене уйӑрасси, вӗсене ят парасси. Вӗрентуҫӗ ертсе пынипе калуллӑ тата сӑнлавлӑ текст планне тӑвасси. План тӗсӗсем: ыйтуллӑ тата калуллӑ.

Хатӗр е ушкӑнпа тунӑ планпа усӑ курса текст тӑрӑх изложени ҫырасси.

Илемлӗ текстӑн ансат жанрӗсем: калав, юмах, сӑвӑ. Вӗсен тытӑмӗн уйрӑмлӑхӗсем. Текст пайӗсен шалашӗ пӗр-пӗринпе килӗшсе тӑни.

Темиҫе е пӗр укерчӗк тӑрӑх тата пурнӑҫра курни-илтни (вӑййсем, ачасен ӗҫӗ-хӗлӗ, ҫут ҫанталӑка сӑнани, тӗрлӗ ҫӗре экскурсие кайни, ялти ватӑсене пулӑшни) ҫинчен ҫыхӑнуллӑ калав йӗркелесси, ун хыҫҫӑн сочинени ҫырасси.

Харпӑр хӑй ӗҫӗ ҫинчен кама та пулин (юлташа, асатте-асаннене) ҫыру ҫырса пӗлтересси.

Пуплев этикечӗ. Сӑмах вӗҫҫӗн е ҫыру ҫырса хӑнана чӗнесси, саламласси. Сӑпайлӑх сӑмахӗсемпе

усă курасси. Телефонпа калаçасси.

Çулĕпе аслăрах çынна чăвашла сумласа чĕнмелли сăмахсем (пичче, аппа, инке, мучи, кинемей).

Еç хучĕсем. Класри е шкулти хаçата заметкăсем çырасси. Библиотекăран илсе вуланă кĕнекесен списокне туса пыма пĕлесси.

Сăмах йышне анлăлатасси

Ару-тăванлăх терминĕсем. Тăванлăха атте, анне енчен кăтартакан таблицăсем.

Тумтир, атă-пушмак ячĕсем: кĕпе-йĕм, атă-пушмак, шăлавар, костюм, кофта, куртка, тумтир, перчетке, кĕрĕк, пиçиххи, сандалет, сараппан, тапочка, тăлăп, туфли, шарф, шлепке, юбка, кроссовка, атă, çăм атă, кăçатă, калуш;

япаласен, пулăмсен паллисене пĕлтерекен сăмахсем: кĕрхи, çурхи, хĕллехи, çуллахи, майлă, юрăхлă, тăвăр, аслă, пысăк, меллĕ, ансăр, анлă;

ĕçе пĕлтерекен сăмахсем: салтăн, ура салт, хыв, хывăн, çĕле, тăхăн.

Кил-çуртри япаласен ячĕсем: варинкке, куç кĕски, кастрюль, сăпка, валашка, кăкшăм, тенкел, простынь, сăмавар, умывальник, ухват, питлĕх, утюг, хунар, чейник, арча, чăматан, этажерка, сивкĕч (холодильник).

Кил-çурт таврашĕпе çыхăннă сăмахсем: ампар, хӳме, хуралтă, крыльца, шаршан, алăк янахĕ, чӳрече хашакки (янахĕ), путвал, пура, карçинкка.

Апат-çимĕç ячĕсем, вĕсемпе çыхăнакан тĕрлĕ пуплев пайĕсем: арпус, варени, иçĕм, квас, кефир, консерва, котлет, мармелад, пирожнăй, повидло, пӳремеч, рис, салат, сосиска, сухари, тултармăш, халва, хуплу, шăрттан, шӳрпе, шоколад, пельмень, çу;

выльăх (ӳсен-тăран) çăвĕ, сарă çу, услам çу, какай шӳрпи, аш (çĕр улми, пулă, кишĕр) котлечĕ, котлет фаршĕ, пан улми мармелачĕ, аш пельменĕ, пельмень чусти, бисквит пирожнăй, çĕр улми пӳремечĕ, аш (симĕс сухан) салачĕ, кăвакал хуплăвĕ, чие (хурлăхан, хурăн) çырли варенийĕ, иçĕм сĕткенĕ, çăкăр кăвасĕ, çырла квасĕ, (пулă, аш) консерви, ăшаланă çăмарта, йӳçĕтнĕ улма, типĕ иçĕм, какай шӳрпи;

апат-çимĕç таварĕсем, консерва банки, пĕр порци, салат савăчĕ, çимĕç шкапĕ, çăкăр тути;

варени пĕçер, кăмпа (аш, çĕр улми) ăшала, хаяр (купăста) йӳçĕт, сивĕт, вĕрет, йӳçĕх, тăварла, çу шăрат, йӳçенкĕ, хăймаллă.

Йывăç ячĕсем, вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем: акаци, бамбук, катăркас, кашкăр çырли, кăпчанкă, кедр, лиственница, пальма, уртăш, шурă чăрăш;

бамбук туя, лăсăллă йывăç, катăркас çырли, кедр мăйăрĕ, пальма çулçи, уртăш çырли.

Усен-тăран ячĕсем, вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем: йӳçĕ курăк, кăвак çеçпĕл, пăлан мăкĕ, хаяр çырли, куккук йĕтĕнĕ, кашкăр çырли, йуçек курăк, тимофеевка, чĕрĕп ути, сусен, хĕрлĕ клевер, чăрăш тăрри, йуçĕ чĕп куç, упа кĕпçи, хир сĕлли, шур ут, кĕтуç хутаçĕ, утмăл турат, йыт пырши, кăшман куракĕ, хăмăш, ухлĕм, пĕтнĕк, кукша пуç, шапа хупаххи, упа сарри, майра кĕпçи, шур чечек, çерçи кĕпçи, кăшкар ути, аира çарăк;

авăр, çĕр улми аври, хăмла аври, вăрă, йывăç вулли, кĕпçе, кучан, лăсă, чăрăш лăсси, сухăр, хыр сухăрĕ, тĕшĕ, мăйăр тĕшши, кукуруза тĕшши, усен-тăран, хуйăр, юман хуйăрĕ, хуп, çака хуппи (хупĕ), юман хуппи, хурăн хуппи, шерепе, сĕлĕ шерепи, хăмла шерепи, шерепеллĕ, сухăрлă, тĕшĕллĕ, сăсăл, тулă (ыраш) сăсăлĕ.

Улма-çырла, пахча çимĕç ячĕсем, вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем: анис, антоновка, йĕплĕ çырла, слива, кăвак çырла, кĕтмел, китайка, кукен, петрушка, пĕрлĕхен, сырлан, укроп, шур çырли, турнепс, редис;

анис улма, китайка улми, петрушка тымарĕ, слива варенийĕ, сырлан тĕмĕ, сырлан çăвĕ, укроп вăрри, улмуççи сып.

Кăмпа ячĕсем: ăвă кăмпи, кăрăç, кăтра кăмпа, хурăн кăрăçĕ, хыр кăрăçĕ, хура кăрăç, шурă кăрăç, сăвăр кăмпи, мăк кăмпи, сарă кăмпа, симĕс кăмпа, çĕр кăмпи, така кăмпи, кăмпа туни, кăмпа шлепки.

Тискер кайăк ячĕсем, вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем: арăслан, арлан, ăтăр, йĕке хуре, калта, кашкăр, кăш, мулкач, пакша, пăлан, пăрăнтăк, пăсара, пăши, сăсар, çĕлен, çĕлен-калта, çĕр мулкачи, çулевĕç, тигр, тилĕ, тимĕр шапа, упа, упăте, хир сыс- ни, хурăн пуçлă çĕлен, тыр кас, чĕрĕп, хир шăшийĕ, шăши, кашкăр çури, шурă мулкач, пăлан пăрушĕ, пăши ĕни (пăрушĕ), шурă упа, упа çури;

арлан шăтăкĕ, калта хури, пăлан мăйраки, пăши ашĕ, упа шăтăкĕ.

Кайăк-кĕшĕк ячĕсем: карăк, сар кайăк, чепчен, кукăр сăмса, шурлăх тăмани, карăш, кайăк кăвакал, кăйкăр, вĕлтрен тăрри, хĕрен, çара çерçи, ăмăрт кайăк, пилеш кайăкĕ, ула такка, вĕршĕн, ӳхĕ,

чарлан, чайка, текерлĕк, шăкăлчи, пингвин, павлин, страус, пăчăр;

çăткăн, сарă, хĕрлĕ, кăвак;

çавăр (йăва), ÿхлет, кăраклат, куккукла, сăх, тыт, юрла, танкка, чĕвĕлтет;

карăш картлатать, путене авăтать, чакак чаклатать;

карăк туйĕ, кăсăя сырăшĕ, çерçи йăви.

Хурт-кăпшанкă ячĕсем: пыл хурчĕ, сăрă, тĕкĕл тура, шыв нăрри, шыв хăнкăли, çĕлен лаши.

Пулăсемпе шыври чĕр чунсен ячĕсем, вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем: акула, ăптă, кăртăш, осетр, рак, сарă карас, çуйăн, тритон, уланкă, хура карас, шапа, шапа чĕппи, шăла, шерĕх, шыв çи, пулă чĕппи;

тинĕс пулли, вĕтĕ çупах, шапа хуранĕ, рак хаччи, сазан хуппи, чĕрĕ пулă;

вăлча сап, карп ĕрчет.

Чĕлхене ансат тишкересси. Чĕлхе пĕлĕвĕн терминĕсемпе паллаштарасси. Сăмах тытăмĕ

Тымар тата аффикссем. Сăмах тăвакан тата сăмаха улăштаракан аффикссем. Япалана пĕлтерекен сăмахсем çумне *-çă(-çĕ), -лăх(-лĕх), -у(-ÿ)*аффикссем хушăнса пулнă сăмахсене сăнасси. Пĕр тымартан пулнă сăмахсене асăрхаса ушкăнласси, аса илсе каласси, çырасси *(çыр - çыру - çырулăх, кала - калав - калавçă).*

Япала ячĕ. Унăн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Пайăр ятсемпе пайăр мар ятсем. Япала ячĕсем пĕрреллĕ тата нумайлă хисепсенче пулни. Вĕсем ытти сăмахсемпе çыхăннă чухне тĕрлĕ аффикс йышăнни, ÿкĕм (падеж) термина асăнмасăр вĕсен ыйтăвĕсемпе аффиксĕсене пăхса тухни.

Камăнлăх аффиксĕсем йышăннă япала ячĕсем тĕп мар падежри пĕрреллĕ хисепри (терминсене асăнмасăр) формисемпе пуплевре усă курасси *(аттеме, аттемпе, аçуна, ашшĕне, ашшĕпе*т.ыт.те).

Глагол. Унăн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Глагол вăхăчĕсем: хальхи вăхăт, пулас вăхăт, иртнĕ вăхăт.

Паллă ячĕ. Унăн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Вăл япала ячĕпе тата глаголпа çыхăнни. Япала ячĕпе тата глаголпа çыхăннă паллă ячĕсем вĕçленменни. Пĕрешкел е çывăх пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем *(илемлĕ, капăр, хитре, чипер).*

Хисеп ячĕ. Шут тата йĕрке хисеп ячĕсем.

Предложени. Калуллă, ыйтуллă тата хистевлĕ предложенисем. Кăшкăруллă предложени. Предложении тĕп членĕсем - подлежащипе сказуемăй. Предложении кĕçĕн членĕсем. Предложенисене кĕçĕн членсемпе анлăлатасси.

Орфографипе орфоэпи. *Э, е, ă, ю, я*сас паллисемпе усă курма пĕлесси. Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсенче *б, г, д, ж, з, ф, ц, щ*сас паллисене тĕрĕс вулама, çырма пĕлесси.

Сăмах тĕпĕнчи вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек сас палли çырса палăртасси: а) *çăрттан, паттăр, параппан, суккăр, маттур, тăвайкки, тĕттĕм, турилкке;*ă) *пĕрре, иккĕ, виççĕ, пиллĕк, çиччĕ, аллă;*б) *ачашшăн, хуллен, вăрттăн, пысăккăн, симĕссĕн, шуррăн;*

в) *вами, хыççăн.*

Хутăш сăмахри чуменчи [л'], [н'] хупă сасăсен çемçелĕхне ятарласа палăртманни: калча, мунча, пăнчă, шалча, вăлча, анчах, хупăлча.

*Ç, ч*сас паллисем хыççăн *ы*е *и*çырасси: а) *çыру, çын, çырма, чылай, чыс, çывăх, çырла;*ă) *çимĕç, чикĕ, читлĕх, çинче.*

Уçă е [л] сасăпа пĕтекен сăмах тĕпĕ çумне *-лă(-лĕ), -ла(-ле)* аффикссем хушăнса пулнă сăмахсенче икĕ пĕр пек сас палли (лл) çырасси: а) *лаша - лашалла, ĕне - ĕнелле, футбол - футболла, лапта - лапталла, пукане - пуканелле, шашка - шашкăлла;*ă) *сухал - сухаллă.*

Нумайлă хисеп аффиксĕнчи [с] сасса (вăл умĕнхи [ш], [ç] сасăсемпе пĕрпекленнĕ тĕслĕхсем) тĕрĕс палăртасси: *юлташсем, тантăшсем, чăрăшсем, лĕпĕшсем, чĕкеçсем.*

Хальхи вăхăтри пĕрреллĕ хисепри глаголсене тĕрĕс каласси, çырасси: *ташлатăп, вĕренетĕп, ĕçлетĕп, юрлатăп, вĕренетĕн, ĕçлетĕн, ташлатъ, юрлатъ, вĕренет, ĕçлет.*

## Таса та илемлĕ çырасси

Çыру гигиенин хăнăхăвĕсене çирĕплетесси. Пĕр йĕр тăрăх çырма хăнăхтарасси. Кăткăс ĕлкеллĕ сас паллисемпе вĕсен çыхăнăвĕсене хăвăртрах, таса та илемлĕ çырасси.

Таса та илемлĕ, тĕрĕс çырмалли сăмахсем: *автобус, автомобиль, арçын ача, ăс-тăн, ăшшăн, бригада, велосипед, виçĕм кун, грузовик, диктант, ĕç халăх, задача, зарядка, шăнкăрав, инке, йĕлтĕр, йĕпе-сапа, йĕри-тавра, канфет, карçинкка, кăсăя, краватъ, Кремлъ, отличник, параппан, пограничник, пуйăс, радио, расписани, союз, çеçен хир, çĕр улми, çĕр-шыв, çил-тăвăл, çил-тăман, çулталăк, телевизор, тумтир, тыр-пул, ула такка, хĕр ача, чĕр чун, чукун çул, шăмат кун, шофер, ытлари кун, эмел, эрне кун, юн кун, юхан шыв, ял-йыш, ял хуçалăх, январь.*

## АЧАСЕНЧЕН III КЛАСРАН ВĚРЕНСЕ ТУХНĂ ТĚЛЕ КĚТЕКЕН РЕЗУЛЬТАТСЕМ

Пуплеве пур енлěн аталантарнă май чěлхене ансат тишкерме, терминсемпе усă курма вěрентесси

***Харкамлăх результачěсем:***

- ачасен тăван чěлхене тěплěнрех вěренес, харкамăн пуплев ěç-хěлěсене аталантарас кăмăлě амаланни;
- тантăшěсен тата харкам пуплевне сăнама, тěрěслеме вěренсе пыни;
- тăван чěлхе пуянлăхěпе, илемěпе киленме пуçлани.

***Предметсен пěрлěхлě результачěсем:***

- тěрлě текста тишкерме, тўрлетме вěренсе пыни;
- пуплев культурин енěсене тимлеме хăнăхса пыни;
- калура тата çырура пуплев тата хутшăну этикечěн нормисене тытса пыма хăнăхса пыни;
- урокра тата тулашěнче харпăр хăй ěçне йěркелеме вěренсе пыни.

***Предметăн пайрам результачěсем:***

- сăмахăн тěп пайěсем - унăн тымарěпе аффиксěсем; пуплев пайěсем - япала ячě, глагол, паллă ячě; предложении тěп (подле- жащи, сказуемăй) тата кěçěн членěсем пулнине пěлни;
- вěреннě орфограммăсенчен тăракан 40-45 сăмахлă текста таса, тěрěс те илемлě çырса илме, итленипе (диктант) çырма, пред- ложенисем вěçěнче кирлě чарăну (пăнчă, ыйту е кăшкăру) палли лартма пултарни;
- сăмахсен сасă тытăмне сăнама: сыпăксене уйăрма, уçă тата хупă сасăсене палăртма, уçă сасă çине пусăм ўкни-ўкменнине пěлме, хупă сасă хытти-çемçине, янăравлă-янăравсăррине туйма, сăмахри сасăпа сас палли хисепне уяма хăнăхса пыни;
- сăмах тытăмне (тымарěпе аффиксне) курма пултарни;
- пуплев пайěсене (япала ячě, глагол, паллă ячě) палăртма, вěсем мěнле формăрине (япала ячěсен хисепне, глаголсен вăхăчěпе хисепне) чухлани;
- предложенири сăмахсен çыхăнăвне асăрхани, сăмах майлашăвěсене уйăрни;
- предложени тытăмне (синтаксисне) ансат тишкерме (вăл калуллă, ыйтуллă е хистевлě, кăшкăруллă е кăшкăрусăр пулнине палăртма, унăн тěп тата кěçěн членěсене, вěсем хушшинчи çыхăнăва ыйту лартса тупма) пěлни;
- ушкăнпа тунă е хатěр планпа усă курса 55-65 сăмахлă изложени çырма вěренсе çитни.

### Литература вулавě. Класс тулашěнчи вулав

***Харкамлăх результачěсем:***

- тăван халăхăн авалхи кун-çулěпе, унăн тěрлě тапхăрта палăрнă ывăл-хěрěпе, вěсен пархатарлă ěçěсемпе паллашнă май харкам мěнле халăхран тухнине ăша хуни, çакăнпа мăнаçланас туйăм çирěпленни;
- тăван халăх культурин, халăх сăмахлăхěн тытăмěпе ăшлăхě мěн тери пуян пулнине курма, несěлěмěрсем ăна ěмěрсем хушши упраса, туптаса паянхи куна çитерме пултарнине ăса хывма пуçлани.

***Предметсен пěрлěхлě результачěсем:***

- словарьсемпе, справочниксемпе усă курма вěренсе пыни;
- кěнекепе ирěклěн ěçлеме пěлни: уйрăм палăртусемпе, тупмаллисемпе усă курса кирлě текста, унти палăртнă вырăнсене хăвăрт тупса сěннě ěçсене пурнăçлани;
- тěрлě информаци çăл куçěпе усă курма пултарни;
- кěнекепе, словарьсемпе, справочниксемпе, текст патне панă иллюстрацисемпе ěçлеме хăнăхса пыни;
- вулавăн тěрлě тěсне (паллашуллă, тěпчевлě-тишкеруллě, суйлавлă, шыравлă) алла илсе пыни;
- мăшăррăн, пěчěк ушкăнпа, пěрле ěçлеме - хăйсем хушшинче рольсемпе ěçсене уйăрма, пěрлěхлě ěçěн харкам пайне пурнăçлама
- вěренсе пыни.

***Предметăн пайрам результачěсем:***

- текстпа ěçлеме пултарни: темипе тěп шухăшне палăртни, тишкеру ыйтăвěпе çыхăннă информаци тупни;
- пěтěмлетусем патне пыма, пулăмсемпе сăнарсен хăтланăшě- сен çыхăнăвěсене ăнланма, сăлтавлама вěренсе пыни;
- текстра геройсен шухăшне çирěплетекен вырăнсене тупма пултарни.

- сăнарсен ĕçĕ-хĕлĕпе хăтланăшĕсене, кăмăл-туйăмне тишкернĕ-сăнанă май пĕтĕм этемлĕх ырлăхĕсемпе пахалăхĕсене ăша хывас, ырăпа усала уяс хăнăхусем аталанса пыни;

- илемлĕ литература жанрĕсен (тĕрлĕ юмах, калав, сăвă, юптару) тĕп уйрăмлăхĕсене курма вĕренсе пыни.

## IV КЛАСС *(102 сехет)*

### ЛИТЕРАТУРА ВУЛАВĔ. КЛАСС ТУЛАШĔНЧИ ВУЛАВ

#### Литература вулавĕ

Вулав карти. Ку вăл ман Тăван çĕр-шыв. Чăваш халăхĕ. Чăваш чĕлхи. Тăван халăхăн аваллăхĕ, ун çинчен калакан ваттисен сăмахĕсем, калавсем, сăвăсем, статьясем, пысăкрах хайлав сыпă- кĕсем.

Кĕр çитрĕ. Кĕрхи çут çанталăк. Çынсен ĕçĕ-хĕлĕ. Чĕр чунсен пурнăçĕ. Ĕç çыннисем çут çанталăка упрассишĕн тăрăшни, çак ĕçе ачасем те хутшăнни. «Тăван тавралăх» экскурси.

Кусем - манăн туссем. Ачасен пурнăçĕ, вĕсен юлташлăхĕпе туслăхĕ, ĕçченлĕхĕпе сăпайлăхĕ. Туслă тантăшсем тăван халăхăн ырă йăли-йĕркине асра тытни.

Ырăпа усал. Ултавпа суя, тӳрĕлĕх-чăнлăх, хĕрхенӳпе хытă чунлăх, чурăслăх, ĕçченлĕхпе наянлăх, каппайчăклăхпа сăпайлăх, тӳрккеслĕхпе ыр кăмăллăх çинчен калакан хайлавсем, юмахсем.

Çуркунне çитсессĕн... Çурхи вăхăта, пурнăç илемĕпе унăн асамлăхне сăнлакан, çак илеме упрама чĕнекен хайлавсем.

Атте-анне пурри - телей те пуянлăх. Çемье, кил-йыш, çывăх çынсем çинчен калакан хайлавсем.

Çу пуçланчĕ. Çуллахи çут çанталăк. Тавралăх.

Чĕр чунсем - пирĕн туссем. Ачасемпе чĕр чунсем хушшинчи хутшăну. Чĕр чунсене юратас, шеллес, хӳтĕлес туйăмсене çуратакан хайлавсем.

Усен-тăран тĕнчинче. Вăрман-çаран, чечек-курăк çинчен калакан хайлавсем.

Вăрçă кĕрленĕ чух. Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçин паттăрĕсем, тыл ĕçченĕсем, Аслă Çĕнтерӳ çинчен калакан хайлавсем.

Халăх пултарулăхĕ. Чăваш халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем. Вĕсенче этем ăс-тăнĕн ырă енĕсем (ваттисене хисеплени, Тăван çĕр-шыва юратни, сăпайлăхпа ĕçченлĕхе ырлани, тĕрĕслĕхшĕн кĕрешни) палăрса тăни. Писательсем çырнă юмахсем, юптарусем, ытти халăхсен юмахĕсем, ваттисен сăмахĕсемпе тупмарусем.

Халăхăмăрăн сумлă çыравçисем. Çеçпĕл Мишши, Митта Ваçлейĕ, П.Хусанкай, Я.Ухсай, Х.Уяр, А.Артемьев. Вĕсен уйрăм сăввисем, калавĕсем, пысăкрах хайлав сыпăкĕсем.

Шурă юр çусассăн. Хĕл вăхăтне сăнлакан хайлавсем. Вĕсенче тăван тавралăха, тăван çĕре юратни палăрни. Хĕл тата çур вăхăчĕ çинчен калакан тупмарусем, ваттисен сăмахĕсем. Çĕнĕ çул тата Раштав уявĕсем.

Вырăссен манăçми çыравçисем. А.Пушкин, Н.Некрасов, С.Есенин, М.Пришвин, Н.Сладков, А.Куприн, В.Бианки çырнă хайлавсем.

Вĕрентусĕпе ачасем хăйсем суйланă 7-8 сăвă, юптару пăхмасăр калама вĕренмелле.

Вулав хăнăхăвĕсем. Литература чĕлхин виçисене пăхăнса, тулли сăмахсемпе, ăнланса вуласси. Ку усĕмшĕн юрăхлă текста ăшра вуласа ăнланасси. Вулав хăвăртлăхĕ минутра 90 сăмахран кая мар (ăшра вуланă чухне сăмах шучĕ 110 таран усмелле). Анланман сăмах пĕлтерĕшне пĕтĕмĕшле пуплев пĕлтерĕшĕ çине таянса чухласа илесси. Мĕн пур предложение (хутсăррисене те, хутлисене те) тĕрĕс интонаципе вуласси.

Текстпа ĕçлесси. Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси. Вуланă текстăн тĕп шухăшне харпăр хăй тĕллĕн палăртасси, унăн пайĕсем шухăш енĕпе мĕнле çыхăнса тăнине асăрхасси, текстăн планне тăвасси. Мĕн вуланине харпăр хăй тĕллĕн тунă планпа усă курса туллин, кĕскен, тата суйлавлăн аса илсе каласси. Пĕр-пĕр темăпа калав тумалли материала текстра тупса палăртасси.

Хайлаври ĕçсене тĕрĕс, йĕркипе аса илесси. Сăнлавлă (çут çанталăка, çынна, пурт-çурт таврашне сăнлани), уйлавлă элементсемпе диалог кĕртнĕ текста аса илсе каласси, турĕ пуплеве турĕ мар пуплевпе улăштарасси.

Сăнарсен пуплев уйрăмлăхĕсене сăнасси, вĕсен ĕçĕсене, кăмăл-туйăмне (пĕр е темиçе калаври сăнарсене) танлаштарасси. Сăнарсем мĕншĕн, мĕн пирки çапла тунине каласси. Хăйсем тата автор çав пулăмсемпе сăнарсене мĕнле хакланине палăртасси.

Калаври, сăвăри, юмахри сăмахсен пĕлтерĕш уйрăмлăхĕсĕмĕсене ăнкарасси, вĕсемпе пуплевре усă курасси. Пулăма, çут çанталăка, çынна витĕмлĕ сăнлакан сăмахсене, вĕсен майлашăвĕсене (танлаштару, эпитет, метафора, фразеологиллĕ сăмах çаврăнăшĕ - терминĕсене асăнмалла мар) хайлавра тупасси, вĕсене ăнланасси.

Сӑнар ячӗпе е унӑн ятне, калавҫӑн сӑпатне улӑштарса каласа парасси; калава малалла тӑсасси, сӑнарӑн малашнехи пурнӑҫӗпе ӗҫӗсем ҫинчен хушса каласси; сӑнлавпа уйлав элеменчӗсем кӗртсе пулни-иртни, курни-илтни ҫинчен ҫыхӑнуллӑ калав тӑвасси. Халӑх сӑмахлӑхӗ, калав, сӑвӑ, юптару ҫинчен I-IV классенче илнӗ пӗлӗве ҫирӗплетсе пӗтӗмлетесси.

Илемлӗ литература стилӗпе ӑслӑлӑх стилӗн уйрӑмлӑхӗсене асӑрхама хӑнӑхтарасси.

Ачасен сӑмах йышне куллен пуянлатса ҫӗнетесси. Вӗсен пуплевӗн пахалӑхне (ӑсталӑхне, ҫыхӑнулӑхне, витӗмлӗхне, уҫӑмлӑхӗпе палӑртулӑхне) лайӑхлатасси. Калаҫура та, вуланӑ чух та шухӑш-туйӑма интонаци мелӗсемпе (хӑвӑртлӑх улшӑнӑвӗ, сасӑ хулӑнӑшӗ, тӑхтавсем, шухӑша палӑртакан пусӑм, пуплев кӗвви) тӗрӗс палӑртасси.

Вӗренӳ кӗнекине чухласси: тупмаллипе, пулӑшу тата меслет аппарачӗпе (текст хыҫҫӑнхи ыйтусемпе ӗҫсем, ӑнлантарусем, вӗтӗ шрифтпа ҫырса панисем т.ыт.те) усӑ курасси. Кӗнекепе хӑйсем тӗллӗн ӗҫлесси.

## Класс тулашӗнчи вулав

Вулав материалӗ. Кӗҫӗн ҫулхи ачасем валли кӑларнӑ чӑваш, вырӑс тата ытти тӑванла халӑхсен, ютри ҫыравҫӑсен кӗнекисем. «Тетте» журналпа «Тантӑш» хаҫатри материалсем.

Вулав тематики. Аваллӑх ҫинчен. Ырӑ пурнӑҫа ӗмӗтленсе пурӑнакан халӑхӑн кулленхи ӗҫӗсем. Ачасен ӗҫӗ-хӗлӗ. Чӑваш, вырӑс тата ытти тӑванла халӑхсен юмахӗсем. Тӑван халӑх историйӗпе унӑн ывӑлӗ-хӗрӗ, ал ӗҫ тата ӑс-хакӑл культури ҫинчен ҫырнӑ кӗнекесем. Наукӑпа техника темипе ҫырнӑ ачасем ӑнланмалла статьясем. Темтепӗр курса ҫӳрени ҫинчен калакан хайлавсем.

Ача-пӑча кӗнекипе ӗҫлесси. Класс тулашӗнчи вулав урокне хатӗрленнӗ май кирлӗ кӗнекене харпӑр хӑй тӗллӗн суйласа вулама, тӗрлӗрен пулӑшу кӗнекипе, хаҫат-журналпа усӑ курма пӗлесси.

Вӗрентӳҫӗ сӗннӗ е харпӑр хӑй тӗллӗн тунӑ планпа усӑ курса мӗн вуланине (унӑн пайӗсене) кӗскен каласа парасси, вуланӑ сӑнар ҫинчен ҫыхӑнуллӑ калав тӑвасси. Вулама сӗннӗ кашни темӑпах 3-5 кӗнеке таран пӗлесси. Пулӑшу кӗнекисемпе (словарь, справочник) усӑ курасси.

«Тантӑш» хаҫатпа «Тетте» журнала тӗллевлӗ вуласси, вӗсемпе урокра тата класс тулашӗнче усӑ курасси.

Кӗнеке мӗн ҫинченнине унӑн хуплашки, титул листи, тупмаллипе ӳкерчӗкӗсем, ум сӑмахӗпе юлашкинчен калани тӑрӑх ӑнкарасси. Кирлӗ кӗнекен е хаҫат-журналти статьян ятне, унӑн авторне кӑтартса тӗрӗс ҫырса илесси. Кӑмӑла каякан кӗнекене харпӑр хӑй тӗллӗнех библиотекӑран илсе вуласси.

## ПУПЛЕВЕ ПУР ЕНЛӖН АТАЛАНТАРАССИ. ЧӖЛХЕНЕ АНСАТ ТИШКЕРЕССИ. ЧӖЛХЕ ПӖЛӖВӖН ТЕРМИНӖСЕМПЕ ПАЛЛАШТАРАССИ. ӐСЛАВЛӐ (ТВОРЧЕСТВӐЛЛӐ) ҪЫРӐВА ВӖРЕНТЕССИ *(102 сехет)*

Ҫыхӑнуллӑ пуплев. Текст. Унӑн темипе тӗп шухӑшӗ. Текст тытӑмӗ (композици).

Изложенипе сочинени планӗсене ушкӑнпа тата пӗччен тӑвасси. Планпа усӑ курса 80-90 сӑмахлӑ текст тӑрӑх тулли е кӗске изложени ҫырасси.

Пурнӑҫра пулса иртнӗ пӗр-пӗр ӗҫ ҫинчен ушкӑнпа хатӗрленнӗ хыҫҫӑн пӗчӗк ӑслав (сочинени) хайлasси.

Пуплев этикечӗ. Каланине хирӗҫлесси: вашаватлӑх тата турккеслӗх. Каҫару ыйтасси, укӗнӗве палӑртасси, ашшӗ-амӑшне, тус- тӑвана уяв ячӗпе саламласси.

Еҫ хучӗсем. Шкулти хаҫатпа, Шупашкарта тухса тӑракан ача- пӑча хаҫат-журналӗпе ҫыхӑну тытма хистесси. Пӗлтеру ҫырма хӑнӑхтарасси.

### Сӑмах йышне ӳстересси, унпа усӑ курма пӗлнине ҫирӗплетесси. Сӑмахсене тӗрлӗ мелпе ушкӑнласси

Апат-ҫимӗҫ ячӗсем, вӗсемпе ҫыхӑнакан ытти пуплев пайӗсем: апельсин, груша, какао, кофе, крахмал, лимон, мандарин, пӑрӑҫ, персик, рагу, рассольник, сарделька, студень, сыр, тефтель, шницель;

йуҫӗ (тутлӑ) чуста, ҫӗр улми крахмалӗ, грек мӑйӑрӗ, арахис мӑйӑрӗ, шӗшкӗ мӑйӑрӗ, кедр мӑйӑрӗ, тутлӑ пӑрӑҫ, хура пӑрӑҫ, аш рассольникӗ, груша компочӗ, шӑратнӑ сыр, чӑмламалли резинка, ҫӑра чей, симӗс чей, йуҫӗтнӗ купӑста (пан улми);

чуста хур, чуста хӑпарнӑ, чей пӗҫер, консервла, пӑрӑҫлӑ, хӗрхулен (тӗслӗх, ҫу), чӗлхуне ҫӑтӑн! (питӗ тутлӑ);

кӗрпек, сӗтек, тӑварак, хӗрху (апат), шывак (сӗт, кӗсел).

Ҫут ҫанталӑкпа, йӗри-тавралӑхпа ҫыхӑнакан сӑмахсем: Алтӑр ҫӑлтӑр, Шурӑм пуҫ ҫӑлтӑрӗ, тупе,

Çурçĕр çалтăрĕ, ейу, лачака, океан, континент, туремлĕх, вулкан, материк, полюс, тундра; юшкăнлă, шурлăхлă, лачакаллă.

Усен-тăран ячĕсем: ама хупахĕ, шăнăр куракĕ, тал пиçен, ут куçĕ, авăн хаяр ути, куян купăсти, алоэ, кактус, йуçĕ курăк, ниш курăкĕ (лантăш), шапа пăтти, сарă чăпăл курăкĕ, шыв лилийĕ, шыв курăк (водоросли).

Тискер кайăк ячĕсем: жираф, дельфин, кит, крокодил, морж, ондатра, песец, пурăш, сăвăр, тюлень, хăнтăр, шашка, шăши, юс; ондатра тирĕ, сăсар çуха.

Хурт-кăпшанкă ячĕсем: ăман, вăрăм туна, вис, йĕп вăрри, кăпшанкă, кăткă, кĕве, лĕпĕш, нăрă, пăван, сăвăс, сăвăслан, сăпса, сĕлĕх, таракан, уяр, хăнкăла, хурт, шăна, шăрчăк, шĕвĕрĕлчен, шĕкĕ, эрешмен; хурт-кăпшанкă, хурт-хăмăр, шăна-пăван, личинка, вĕлле хурчĕ, кăткă тĕми, кĕве хурчĕ, купăста лĕпĕшĕ, лĕпĕш хурчĕ, тислĕк нăрри, шыв нăрри, сăпса йăви, тĕкĕл тура йăви, сăрă хурт, хурт ами, шăрчăк чăрăклатать, эрешмен карти.

### Чĕлхене ансат тишкересси

Чĕлхе пĕлĕвĕн терминĕсемпе паллашасси. Сăмах пулăвĕ. Аффикссем хушăнса çĕнĕ сăмахсем пулни. Хутлă сăмахсем. Мăшăр сăмахсем. Сăмахсене икĕ хут калани.

Япала ячĕ. Укĕмсем (падежсем). Текстри, предложенири япала ячĕсем мĕнле падежрине вĕсен ыйтăвĕсем тăрăх пĕлесси. Хупă сасăпа *(юлташ, телей, сунар, пĕлĕт, хĕвел, кун)*тата [а], [э], [ă], [ĕ], [у], [ÿ], [и] сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕ.

Сăпат ылмашĕсене текстра тупасси, вĕсем хăш падежрине палăртасси.

Глагол вăхăт, сăпат тата хисеп тăрăх улшăнни. Унăн пурлă тата çуклă формисем.

Паллă ячĕсен тĕп, танлаштаруллă тата вăйлă степенĕсем, вĕсемпе пуплевре усă курасси. Паллă ячĕсем -ак/-ек, -ăк/-ĕк, -кăн/-кĕн, -чăн/-чĕн, -лă/-лĕ аффикссем хушăнса пулни.

Предложени. Предложении пĕр йышши членĕсем. Вĕсем пĕтĕçтерÿпе (союзпа) *(анчах, çапах, тата, та(те)*тата пĕтĕçтерÿсĕр (союзсăр) çыхăнни.

Пĕр йышши членлă предложенисем тума пĕлесси.

Орфографи тата орфоэпи. Мăшăр сăмахсене çырасси: *сĕтел- пукан, сĕт-çу.*

Икĕ хут калакан сăмахсене çырасси: *ял-ял, хĕрлĕ-хĕрлĕ, пин- пин.*

Сăпат ылмашĕсене тĕрĕс каласси, çырасси: *эпĕ (эп), эсĕ (эс), эпир (эпĕр), эсир (эсĕр); манăн (ман), санăн (сан); манра, манран, санра, санран, пирĕнте (пирте), сирĕнтен (сиртен); вăл - унăн, ăна, унран.*

Япала ячĕсен падеж формисене тĕрĕс çырасси: *çыру - çырă- вăн, çырăва; сăвă - сăввăн, сăвва; пĕрчĕ - пĕрчĕн, пĕрче; мăкăнь - мăкăньте е мăкăньре; район -районта е районра.*

Глаголăн çак формисене тĕрĕс каласси, çырасси:

1) хальхи вăхăтăн сăпат формисене *(çыратăп - çырмастăп, çыратăн - çырмастăн (çырап - çырмап, çыран мар), ташлатпăр - ташламастпăр, ĕçлетпĕр - ĕçлеместпĕр, вулатпăр - вуламастпăр, вĕренетпĕр - вĕренместпĕр, ташлатăр - ташламастăр, ĕçлетĕр*

*- ĕçлеместĕр, вĕренетĕр - вĕренместĕр, килетĕр - килместĕр, çырать - çырмасть (çырат - çырмас мар);*

2) пулас вăхăт формисене *(ту - тăвăп, тăвăн, тăвĕ; çи - çийĕн, çийĕп, çийĕ);*

3) [р] сасăпа пĕтекен *йĕр, кĕр, кур, пар, пер, пыр, тăр, хур, яр* глаголсен иртнĕ вăхăт формисене: *кĕтĕм, кĕтĕн, кĕчĕ, кĕтĕмĕр* ([р] сасă тухса укет).

Çемçе [л’], [н’], [т’] сасăсемпе пĕтекен сăмах тĕпĕ çумне -лă(-лĕ) аффикс хушăнса пулнă сăмахсенче ьçырасси: *кукăльлĕ, супăньлĕ, тетрадьлĕ, медальлĕ, портфельлĕ.*

Паллă ячĕсен вăйлă степенĕнче *(хуп-хура, туп-турĕ, ем-ешĕл, çап-çутă, сап-сарă, кăн-кăвак)*дефис лартасси.

Пунктуаци. Пĕр йышши членлă предложенисенче хурелле пăнчă лартасси.

### Таса та илемлĕ çырасси

Графика хăнăхăвĕсене малалла аталантарса пырасси. Сăмахсемпе предложенисене хăвăртрах çырма хăнăхтарасси. (Кирлĕ сăмахсемпе предложенисене учитель хăй суйласа илет.)

## АЧАСЕНЧЕН IV КЛАСРАН ВĔРЕНСЕ ТУХНĂ ТĔЛЕ КĔТЕКЕН РЕЗУЛЬТАТСЕМ

### Литература вулавĕ. Класс тулашĕнчи вулав

***Харкамлăх результачĕсем:***

- вулав харкам аталанăвĕшĕн мĕн тери пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнланни;
- тĕнче литература пулминче чăваш литературин тупи те палăрмаллах пысăк пулнине ăнланса

пыни;

- этемлĕх çырулăхĕн пуянлăхне ăнланма, хисеплеме, унпа киленме вĕренсе пыни;
- ачасен вулав пултарулăхĕ çирĕпленнипе пĕрлех хайлавçă пултарулăхĕ те амаланса пыни.

***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:***

- пĕр ыйтупах тĕрлĕ позици пулма пултарнине ăнланни, вĕсенчен пĕрне суйласа илме е хăйĕн урăхла шухăшне палăртма вĕренни;
- литература вулавĕн предмечĕн шалашĕнче проектсем пурнăçланă май вĕренӳ задачисем лартма, вĕсене татса памалли çул- йĕр палăртма вĕренсе пыни;
- илемлĕ литература тăван халăх культурин пĕлтерĕшлĕ пайрамĕ пулнине ăса хуни, илемлĕ литература хайлавĕсене ӳнер еди- ници пек йышăнма вĕренсе çитни.

***Предметăн пайрам результачĕсем:***

- фольклор хайлавне автор хайлавĕнчен уйăрса илме, проза жанрĕсене (юмах, калав, повесть) уйăрма, тĕп паллисене палăртма пĕлни;
- текстра илемлĕ сăнарлăх мелĕсене (танлаштару, сăпатлантару, эпитет, тепĕр хут калани, рифма, сасă çырăвĕ) тупма пултарни;
- илемлĕ текстпа ансат ăслăлăх тексчĕсен уйрăмлăхĕсене палăртма пĕлни;
- хайлав ăшлăхне пĕр тĕвĕре (завязка - ĕç аталанăвĕ - кульми- наци - развязка; ĕç пуçламăшĕ - ĕç аталанăвĕ - чи хĕрӳллĕ самант
- ĕç вĕçĕ) курма пултарни;
- героя, унăн хăтланăвĕ тата текстра тӳррĕн панă характеристики тăрăх хак пама, геройсене хак пани тăрăх автор вĕсем çине мĕнле куçпа пăхнине чухлама пĕлни;
- литература хайлавĕ çинчен ансат каласа пама (вăл халăхăн е авторăн хайлавĕ, унăн тĕсĕ (проза, поэзи, драма), жанрĕ (юмах, повесть-юмах, калав, былина, миф, халап, сăвă, пьеса), сюжетри тĕп йĕрсем, хайлавăн тĕп шухăшĕ) пĕлни;
- авторпа, унăн пултарулăхĕпе кĕскен паллаштарма (писатель, поэт; пирĕн вăхăтри е маларахри саманасенче пурăннă; мĕн çинчен çырать е çырнă) пултарни;
- авторăн тата харпăр хăйĕн кăмăлне палăртса литература хайлавĕн персонажĕсене хак пама пĕлни.

Пуплеве пур енлĕн аталантарнă май чĕлхене ансат тишкерме, терминсемпе усă курма вĕрентесси

***Харкамлăх результачĕсем:***

- таса, тĕрĕс, вырăнлă пуплев çыннăн сапăрлăх тата пĕтĕмĕшле аталанăвĕн палăрăмĕ пулнине ăнланни;
- чĕлхепе тирпейлĕ, тĕрĕс усă курма вĕренес кăмăлĕсем çирĕпленни;
- хутшăну культурин правилисемпе килĕшӳллĕн вăхăтра тав тума, каçару ыйтма, саламлама, вашават сăмах хушма, япала ыйтса илме, чĕнĕве палăртма пĕлни;
- чĕлхе харкам ăславлă пултарулăхне, шухăш вĕçевне палăртмалли, аталантармалли хатĕр пулнине ăнланни.

***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:***

- чĕлхе тĕп хутшăну хатĕрĕ, наци культурин единици, вĕрену тата аталану хатĕрĕ пулнине ăса хуни;
- чĕлхен тĕрлĕ çăл куçсенче кирлĕ тивĕçлĕ информаци тупма, ăнăçлă усă курма хăнăхса пыни;
- чĕлхе хатĕрĕсемпе хутшăну тата вĕрену задачисемпе шай- лашуллă тивĕçлĕ усă курма вĕренсе пыни.

***Предметăн пайрам результачĕсем:***

- вĕреннĕ пуплев пайĕсем, вĕсен паллисем, предложении пĕр йышши членĕсем çинчен çирĕп пĕлни;
- вĕреннĕ орфограммăсенчен тăракан 55-60 сăмахлă текста йăнăшсăр, таса та илемлĕ çырса илме, диктант çырма пултарни;
- пĕр йышши членлă предложенире (вĕреннĕ тĕслĕхсем) чарăну паллисем лартма вĕренни;
- сăмахăн сасăпа сас палли тытăмне тишкерме, тымарĕпе аффиксĕсене тупма хăнăхни;
- япала ячĕсен, сăпат ылмашĕсен падежĕпе хисепне, глаголсен хисепне, сăпачĕпе вăхăтне палăртма пултарни;
- предложении ансат синтаксис тытăмне чухлама: вăл тĕллевпе интонаци тĕлĕшĕнчен мĕнлине калама, унăн тĕп членĕсемпе кĕçĕн членĕсене тупма, ыйтусем тăрăх вĕсен çыхăнăвне тата пĕр йышши

членсене асăрхама хăнăхса пыни;

- харпăр хăй тĕллĕн тунă планпа усă курса 80-90 сăмахлă текст тăрăх изложени çырма, пурнăçра пулни-иртни, экскурсире курни, сăнани çинчен çыхăнуллă пĕчĕк калав йĕркелеме (сочинени çырма) вĕренсе пыни.